С(Чув)
Д13
-36193

# Васлей Давыдов-Анатри

## Юррӑмсем-ҫунатӑмсем

Национальная библиотека ЧР
4-036193

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Васлей Давыдов-Анатри

# Юррăмсем-çунатăмсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1997

ББК 84 Чув 7-5
Д 13

Обязат. экз.

4-36193
Национальная библиотека Чувашской Республики
ПРОВЕРЕНО
20 10

Д $\frac{4702710202-45}{М136/03/-97}$ 51 — 97

ISBN 5-7670-0979-1 © Чăваш кĕнеке издательстви, 1997

## ЧУН-ЧĔРЕ ПАРНИ

Юрă – чун-чĕре парни. Вăл çынна юратакан, хĕвел пайăрки пек ăшăтакан чĕрере çеç çуралать. Чăваш поэзине илес пулсан, унăн хавхалануллă йышĕнче пысăк сăвăçсем нумай, анчах чăн-чăн юрă ăстисем, кĕвве хуричченех юрă пек шăранса тăракан, карăнтарнă хĕлĕхĕн янăракан сăнарлă пуплев çаври хайласа кăларакан поэт-юрăçсем нумаях мар. Аслăрах ăрурисене илсен, силлабикăн кĕлĕлле пусăмĕпе тоникăн кĕвĕлле сулăмĕн пĕрлĕхне Çеçпĕл хыççăн чуна хывнă Петĕр Хусанкайпа Илле Тукташа кĕртме пулĕччĕ çав йыша, Иван Ивникпе Валентин Урташа... Унтан вара –Васлей Давыдов-Анатрие. Аслă Арапуç ăрăмçин кашни-пĕр сăвви – хăй юрă, кашни-пĕр çаври – хăй такмак. Ахальтен мар ăна профессилле чăваш композиторĕсен чи малтанхи ăрăвĕнчи Василий Воробьевпа Анатолий Тогаевах асăрханă, унăн çамрăкла çĕкленӳпе çырнă пĕрремĕш сăввисенех юрă валли суйласа илнĕ. Çавăнтанпа Давыдов-Анатри сăввисем аслă вĕçеве тухаççĕ, вĕсем Филипп Лукин, Герман Лебедев, Григорий Хирбю, Аристарх Орлов-Шуçăм, Аверий Токарев, Анисим Асламас, Федор Васильев, Тимофей Фандеев, Виктор Ходяшев, Анатолий Петров, Анатолий Михайлов, Александр Васильев композиторсен хавхаланăвĕпе пĕрлешсе каяççĕ, çурхи шăпчăксемпе саркайăксем пек пĕтĕм чăваш тĕнчин ешĕл ĕшни тавра саланаççĕ. Вĕсем хамăр

тăрăхра та, Уралпа Çĕпĕр енче те, Хусанпа Чулман Атăл хутлăхĕнче те, Самарпа Пенза хушшинче те, Мускавпа Питĕр хулисенче те янăраççĕ. Нумай çул хушши çарта тăнă çын пулнă май эпĕ çакна та кĕретĕн çирĕплететĕп: Давыдов-Анатри юррисене салтаксем те юратса юрлатчĕç. Çав юрăсем тĕрлĕрен Анаткассемпе Тукассенчен пухăннă ачасене тăван кил ăшшине кӳретчĕç, аякри хĕр-тантăшсен хаваслă кăмăл-туйăмне парнелетчĕç. «Пăшал йăтма вăй кирлĕ, юрра йăтма вăй кирлĕ мар, вăл хăй пире çĕклесе пырать», – тетчĕç салтаксем. «Шыв мар – юхать, тимĕр мар – шăранать», – тесе ахальтен каламан-тăр çав халăхăмăр юрă пирки.

Çур ĕмĕр янăраççĕ ĕнтĕ Давыдов-Анатри юррисем. Мĕнле кăна шăпаллă юрă çук пулĕ кĕвĕллĕ тăватçĕр ытла произведени йышĕнче: «Телейлĕ туслăх», калăпăр, СССР Патшалăх премине тивĕçнĕ, «Тăвансемĕр, тав сире», «Сад янăрать саркайăк сассипе», «Пире тăван кĕтсе тăрать» – халăх юррисем пулса тăчĕç, нумайăшне республика акатуйĕсенче пĕрлештернĕ хор пиншер те пиншер сасăпа юрларĕ, чылайăшĕ тĕрлĕ сюитăсене, ораторисемпе кантатăсене, музыка комедине, «Чемен» оперăна кĕрсе кайрĕç, кĕвĕ-çемĕ ӳнерĕн ылтăн фондне вырнаçрĕç...

Сакăрвунна çитрĕ ĕнтĕ халăхăмăр поэчĕ, анчах та чунĕ çаплах юрлать унăн. Паян кун та вăл Юрий Кудаковпа Николай Эриванов валли, Аврам Бурундуковпа Виталий Адюков валли, Юрий Жуковпа Илле Степанов валли çĕнĕрен те çĕнĕ сăвăсем шăрантарать, поэтсемпе композиторсен пултарулăх каçĕсене, юрăçсен концерчĕсене пĕр сиктермесĕр çӳрет. Çĕре çитсен те яш юн вылинччĕ ун йăрăс пĕвĕнче!

Хаклă вулаканăм! Çамрăк çын-и эсĕ, ача-и, мăнуксен малашне шанакан çулланнă чăваш-и – пурпĕрех. Сан аллунта – ĕмĕрне тăван сăмах ĕçĕпе ирттернĕ этемĕн, халăхăмăр поэчĕн чун-чĕре парни. Хамăр пĕрлĕх ячĕпе, хамăр пуласлăх ячĕпе упра ăна.

*Юрий СЕМЕНТЕР*

# ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМĂР ÇИНЧЕН СЫРНĂ ЮРĂСЕМ

## ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Аслă Атăл, анлă  Атăл хĕрринче,
Хĕн-хур тӳснĕ чăваш халăх çĕрĕнче
Ĕмĕр кĕтнĕ тус-тăванлăх вăй илет,
Ĕмĕр кĕтнĕ çĕнĕ пурнăç çĕкленет.

*Хушса юрламалли:*

Çĕршывăма саламласа
Шурăмпуç çуталса хăпарать,
Сурпан сырса, йăл-йăл кулса
Пире ырă, çĕнĕ кун сунать.

Пирĕн ĕçлĕ, пултарулла халăхра
Çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ упранать.
Мĕнпур халăх ирĕк тупнă çĕршывра
Сар хĕвеллĕ çутă куншăн тăрăшать.

*Хушса юрламалли.*

Хамăр тупнă сенкер çăлтăр тӳпере, –
Пирĕн çирĕп пĕрлĕх пытăр ĕмĕре...
Тăвансемĕр, эпир Улăп йăхĕнчен, –
Çĕнтерӳллĕн, паттăр ут эс, Чăваш ен!

*Хушса юрламалли.*

*1960–1990*

## ÇĔРШЫВĂМĂР

Кĕвви *А. Токаревăн*
*В. Федоров* та кĕвĕленĕ

Эй, çĕршывăмăр –
Çут хĕвелĕмĕр,
Сан çинчен юрă
Кĕвĕлерĕмĕр.
Сан тивĕçўпе
Телей тупрăмăр,
Санпа пĕр пулса
Пурнăç турăмăр.

Эй, çĕршывăмăр –
Пирĕн чысăмăр,
Сан ятна ялан
Асра тытрăмăр.
Санпала эпир
Чăнлăх тупрăмăр,
Сан тивлетўпе
Хисеп куртăмăр.

Эй, çĕршывăмăр –
Вăй-хăватăмăр,
Мĕнпур халăхсем
Тăванлантăмăр.
Санпа çĕнтерў
Эпир тупрăмăр,
Санпала пĕрле
Ĕмĕр утăпăр.

*1946*

## ЫТАРАЙМИ ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Ытарайми Чăваш çĕршывĕ,
Пире пĕрлештерсе тăран.
Ялан хастар, пул ĕмĕр сывă, –
Эпир телейлĕ эс пуртан.

*Хушса юрламалли:*

Çĕрĕм-шывăм, Чăваш ен,
Пур халăхпа çĕкленсе
Малтан мала утар-и,
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и...

Пире пилленĕ Улăп-паттăр
Ята, чыса çӳлте тытма, –
Пуçа тайса тупа тăватпăр
Хĕрӳ ĕçре çунса тăма!

*Хушса юрламалли.*

Малашлăха чунтан шанатпăр
Тăванлăх, туслăх вăйлăран.
Ĕçченлĕхпе хисеп куратпăр
Çĕршывăма юратнăран!

*Хушса юрламалли.*

*1990.*

## ТӐВАН ҪЁРШЫВӐМ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Сана чунтан юратнăран
Эпир телейлĕ ачаран.
Тухмастăн эсĕ асăмран,
Пире хăват парса тăран,
Тăван анне,
Тăван çĕршывăм!

Сана чунтан юратнăран,
Хисеплесе пурăннăран,
Ёçре пĕрле тăрăшнăран
Пире эс ырлăх халаллан,
Тăван анне,
Тăван çĕршывăм!

Сана чунтан юратнăран,
Эс çирĕп, вăйлă пулнăран,
Ятна ĕçпе упранăран
Эпир çич ют хурри пулман,
Тăван анне,
Тăван çĕршывăм!

Сана чунтан юратнăран,
Эс хĕвел пек ăшăтнăран,
Малашлăха çул уçнăран
Пире мăнаçлăн курăнан,
Тăван анне,
Тăван çĕршывăм!

*1982*

## ÇĔРШЫВĂМ-АННЕ

Улăп халăх çĕршывĕнче,
Асран кайми Чăваш енче
Çăлтăр витĕр çул курăнать,
Тус-тăванлăх çунат сарать.

*Хушса юрламалли:*

Пире телей,
Ăс-хал пиллен,
Ытарайми Çĕршывăм-анне.
Чăваш ятне
Ялан çĕклен,
Тавах сана, Çĕршывăм-анне!

Çĕр пин юрă çĕршывĕнче,
Пĕтĕм халăх пĕрлĕхĕнче
Ютшăнмастпăр çĕр ĕçĕнчен, –
Эпир Улăп ай йăхĕнчен.

*Хушса юрламалли.*

Пирĕн çăлтăр çӳл тӳпере,
Вăй-хал патăр пĕрлĕх пире,
Чăмăртанăр, тăванăмсем,
Мĕнпур халăх ай çыннисем!

*Хушса юрламалли.*

Çĕрĕм-шывăм тивлечĕпе,
Асаттесен пиллĕхĕпе
Çĕнĕ куншăн вăй хурар-и,
Ĕмĕр пĕрле ай пурнар-и!

*Хушса юрламалли.*

*1991*

## ÇĔРШЫВĂМ, ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Çĕрĕм-шывăм, тăван Чăваш ен,
Шухăшлатпăр ялан сан çинчен.
Пирĕн халăх хĕн-хур тӳснине,
Çутă куншăн çунса тăнине,
Çук, манмастпăр эпир ĕмĕрне,
Пĕр çĕре пĕрлештертĕн пире.
Чăваш ен, Чăваш ен, –
Çăлтăру ялкăшать тӳпере.
Чăваш ен, Чăваш ен,
Ыр сунатпăр сана чĕререн!

Çĕрĕм-шывăм, тăван Чăваш ен,
Эс çуллен тĕреклен,çирĕплен.
Эс пире вăй-хăват пехиллен,
Халăхсен туслăхне хӳтĕлен.
Пирĕн пурнăç кунта çĕнелет,
Тăван халăх кунта çĕкленет.
Чăваш ен, Чăваш ен,
Ялаву вĕл вĕçет ирĕкре,
Чăваш ен, Чăваш ен,
Тав тăватпăр сана чĕререн!

*1950—1990*

## ЫР СУНАТĂП САНА, ЧĂВАШ ЕН

Çĕрĕм-шывăм, тăван Çĕрĕм-шывăм,
Шухăшлатăп ялан сан çинчен.
Ĕмĕр-ĕмĕр пул эс çирĕп, сывă, –
Пире пĕрлĕх пиллен Чăваш ен!

Нихӑҫан та санран ютшӑнмастӑп,
Чунӑм савнӑ Ҫӗршывӑм-анне.
Шан мана – парӑмра эп юлмастӑп
Ярас ҫук тӑван халӑх ятне!

Ҫӗрӗм-шывӑм, сана юрататӑп,
Юрататӑп чунтан-чӗререн.
Ҫак илемлӗ юрра шӑрататӑп
Сана ырӑ сунса, Чӑваш ен!

*1991*

## ЧУН-ЧӖРЕМӖР ӐШШИ, ЧӐВАШ ЕН

Янӑрать ҫӗнӗ кӗвӗ кунта –
Ҫӗр пин юрӑ ҫӗршывӗ кунта.
Яланах эс хӑюллӑн ҫӗклен,
Чун-чӗремӗр ӑшши, Чӑваш ен.

Шурӑмпуҫ ҫуталса хӑпарать,
Ҫӗр пин тӗрӗ кунта курӑнать.
Яланах эс хӑюллӑн ҫӗклен,
Чун-чӗремӗр ӑшши, Чӑваш ен.

Ҫӗр пин сумлӑ сӑмах упранать,
Уншӑн халӑх, Ҫӗршыв савӑнать.
Яланах эс хӑюллӑн ҫӗклен,
Чун-чӗремӗр ӑшши, Чӑваш ен.

Мӗнпур халӑх Тӑван ҫӗршывра
Пурӑнать арканми туслӑхра.
Яланах эс хӑюллӑн ҫӗклен,
Чун-чӗремӗр ӑшши, Чӑваш ен!

*1993*

## ЧӐВАШ ÇĔРШЫВĔ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Чăваш çĕршывĕ, эс çуллен
Çунат саран, вăй-хал илен,
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче,
Асамлă Атăл хĕрринче
Çĕн самана çуртне çĕклен,
Пире сӳнми телей пиллен.

Чăваш çĕршывĕ, тăрăшан,
Ята, чыса çӳлте тытан.
Сан çăлтăру халь тӳпере, –
Упран тăван чĕлхемĕре.
Ялсем ӳсеççĕ, хуласем...
Янраççĕ пирĕн юрăсем!
Чăваш çĕршывĕ, сас паран
Инçе, çут çăлтăрсем таран.
Эпир сана юратнăран,
Пур халăхпа тус-тăванран
Эс паттăр, улăпла утан.
Тавах сана чунтан-вартан!

*1980—1990*

## ТӐВАН КĔТЕС

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăван кĕтес, сана манмарăм,
Ялан асра тытса усрарăм,
Тен, çавăнпах пуçа усмарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Атте-анне килне манмарăм,

Тăван чĕлхе чысне упрарăм,
Чăваш çĕрне ялан мухтарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Инкек-синкек тухсан тармарăм,
Çĕршывăма куç пек сыхларăм,
Мĕн ачаран чунтан юратрăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăванăмсем, сире манмарăм.
Хĕрӳ ĕçре кайри пулмарăм,
Çĕршывăма савса юрларăм.

*1960–1988*

## МУХТАНАТПĂР САНПА, ЧĂВАШ ЕН

Кĕвви *А. Токаревăн*

Савăнатпăр санпа, Чăваш ен,
Çыннусем пархатарлă, ĕçчен.
Çĕкленеççĕ кунта хуласем,
Çулсерен çĕнелеççĕ ялсем.

Мухтанатпăр санпа, Чăваш ен,
Атăлпа эс пĕрле ĕлĕкрен.
Парнелет вăл пире ырлăхне,
Парнелет вăл пире хăватне.

Тав тăватпăр сана, Чăваш ен,
Çĕнĕ куншăн хастар кĕрешен.
Эс пĕрле ĕмĕрех Раççейпе
Авалтан пĕр-пĕрне шаннипе.

*1989*

## ЭП ÇУРАЛНӐ КУНТА, РАÇÇЕЙРЕ

Кӗвви *В. Ходяшевӑн*

Эп тухатӑп куллен ирхине
Атте лартнӑ улма пахчине.
Таврара чун уççи — çуркунне,
Тавтапуç шурӑмпуç çутине!
Мӗнле ырӑ тӑван кӗтесре, –
Эп çуралнӑ кунта,
Раççейре.

Эп анатӑп куллен ирхине
Аслӑях та Пӑла хӗррине.
Сывлӑш уçӑ, тӳпе тап-таса,
Хӑвалаççӗ кӗтӳ Çӗнкаса.
Чӑннипех телей пӳрнӗ пире, –
Эп çуралнӑ кунта,
Раççейре.

Эп утатӑп куллен ирхине
Ылтӑнах та ыраш пуссине.
Ытарма çук уй-хир илемне,
Савӑнса авӑтать путене.
Ушкӑн-ушкӑн чӗкеç пӗлӗтре, –
Эп çуралнӑ кунта,
Раççейре.

Эп каятӑп куллен ирхине
Сӑр вӑрманӗн Сӑрнай ӗшнине.
Хурӑнсем пуç таяç ман енне,
Саламлаççӗ чӑваш ачине.
Сар хӗвелӗ вылять тӳпере, –
Эп çуралнӑ кунта,
Раççейре.

Эп тăратăп куллен ирхине
Мĕнпур халăхпала ĕç умне.
Ӳс, çĕклен эс, Çĕршывăм-анне,
Вăюпа тĕлĕнтер тĕнчене:
Çутă ĕмĕт сӳнмест чĕремре, –
Эп çуралнă кунта,
Раççейре.

*1957*

## РАÇÇЕЙ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Раççей тесессĕн куç умне
Тухаççĕ шурă хурăнсем.
Ăшшăн лăпкаççĕ чĕрене
Сергей Есенин сăввисем.

Раççей тесессĕн куç умне
Тухаççĕ Атăл хумĕсем.
Вĕçе-вĕçе вĕсем çине
Анса лараççĕ акăшсем.

Раççей тесессĕн куç умне
Тухаççĕ паттăр салтаксем,
Тăван çĕршыв вутра чухне
Пуç хунă хаклă тантăшсем.

Раççей тесессĕн куç умне
Тухать тăван атте-анне.
Туяп Çĕршывăм вăйлине,
Туяп тăванлăх хаклине.

*1967*

## ÇĔРШЫВ-АННЕМĔР

Çӳл ту тăрне утса хăпартăм, –
Çĕршыв-аннемĕр умăмра.
Вăл ман телей, чунри хăватăм,
Ăна мухтатăп юррăмра.

Çĕршыв-аннемĕр, çитĕнтертĕн
Пире эс хăвăн хӳттӳнте,
Чĕрçӳ çинче савса сиктертĕн,
Халь те усратăн чĕрӳнте.

Асап, хĕн-хур килсе кĕрсессĕн
Сыхларăн ху ачусене.
Ялан тĕреклĕ, вăйлă эсĕ, –
Сана манмастпăр ĕмĕрне.

*1965*

## ЯЛАН ПĔРЛЕ

Кĕвви *В. Петровăн*

Инçе çĕрте, ют çĕршывра,
Çын мар, хур кайăк тунсăхлать...
Ахаль-им ĕнтĕ чунăмра
Калас сăмахăм çуралать:
Çĕршыв-аннемĕр, эс пуртан
Хĕвел ăшши кашни çуртра.
Мĕн чухлĕ çывăх тус-тăван, –
Хакли çав мар-и пурнăçра!
Çĕршыв-аннемĕр, эп санпа
Ялан пĕрле мĕн ачаран.
Кун-çулăм, ĕçĕм — халăхпа,
Хăват илетĕп эп унран.

*1972*

## КУНТА, ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔНЧЕ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Саватăп эпĕ ирхине
Садри саркайăк юррине.
Çĕклет ыр туйăм чĕрене,
Вăй-хал сунать вăл çынсене.

Васкатăп эпĕ уй-хире.
Çĕр ăстисем пурте ĕçре.
Акаççĕ сĕлĕ, хура тул, –
Çĕршывăм,
вăйлă, пуян пул!

Тухатăп эпĕ урама
Ĕçрен килсен кăштах канма.
Шавлаççĕ шурă хурăнсем.
Ташлаççĕ çамрăк çăкасем.

Сиксе юхаççĕ çырмасем,
Тапса тăраççĕ çăлкуçсем.
Кунта, Чăваш çĕршывĕнче,
Мăнаçлă Атăл хĕрринче.

*1963*

## ÇĔРШЫВ-АННЕМĔР, ЭП САНПА...

Çынна мухтарăм юррăмра,
Тус-тантăшсем, сиртен юлмарăм.
Вăй-халăм хĕрчĕ çулăмра,
Атте-анне ятне ямарăм.

Ч-36193
Национальная библиотека Чувашской Республики

Хама çуратнă çĕршывра
Çирĕпленсех пырать тымарăм.
Телей эп тупрăм туслăхра,
Ăна ĕçпе, чунпа упрарăм.

Çĕршыв-аннемĕр, эп санпа
Хам сассăма парса утатăп,
Хăватлă, аслă халăхпа
Çĕн самана çуртне тăватăп.

*1972*

## ЧĂВАШ ЮРРИ

Кĕвви *З. Петрован*

*Г. Я. Хирбю тусăма*

Çӳл тӳпери çăлтăр таран
Чăваш юрри янрать паян.
Эс шухăша кайса тăран,
Ху сассуна илтен, туян.

Чăваш юрри, чĕре юрри,
Эс те паян кĕрекере.
Çак хисепрен пахи, ырри
Мĕскер-ши пур çут тĕнчере?!

Чăваш юрри, чунри илем,
Çунат çумне хуш эс çунат.
Сана Çĕршыв-анне итлет,
Телейлĕ çул, ыр кун сунать.

*1966*

## ЧĂВАШ ТĔРРИ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, –
Унта пин-пин çулсен йĕрри,
Унта хăват илет çĕнни,
Çынсем ĕмĕртенпе кĕтни.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри, –
Ун курăнмасть вĕçĕ-хĕрри.
Унта асамлă çăлкуçсем,
Илемлĕ çутă çăлтăрсем.

Мĕнле чипер чăваш тĕрри, –
Унта маттур хĕрсен тĕрри,
Унта шур хурăнсен ĕшни,
Унта шур акăшсем вĕçни.

Мĕн авалтан чăваш тĕрри
Хĕвеллĕ, хӳхĕм çав тери, –
Унта тăван ял-йыш сасси,
Хирти ака-суха касси.

Мĕнле хитре чăваш тĕрри, –
Унта çынсен хĕрӳ чĕри,
Яш-кĕрĕмсен паха парни,
Çĕршыв-анне çунат сарни...

Мĕнле пуян чăваш тĕрри, –
Унта пин-пин çулсен йĕрри.

*1980*

## ЧĔРЕ ЮРРИ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Çурхи çут хĕвел пек сăнăмпа,
Аслă Атăл, сана çутатасчĕ,
Чĕререн килекен юррăмпа
Пур çынсен чĕрине ăшăтасчĕ.

Çурхи çут хĕвел пек чунăмпа
Сăпай çын, маттур çын ман пуласчĕ.
Ĕçĕмпе, иксĕлми вăй-халпа
Яланах халăха пулăшасчĕ.

Çурхи çут хĕвел пек кăмăлпа
Ĕмĕрех туслăхра пурăнасчĕ.
Чĕререн килекен юррăмпа,
Çĕрĕм-шывăм, сана ман мухтасчĕ.

*1973*

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИ, ТĂВАН ЧĔЛХЕМ

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхем,
Эс чунăма ялан çĕклен.
Сана телейлĕ çул пиллем
Сăваплăн, пĕтĕм чĕререн.

Анне чĕлхи, тăван чĕлхем,
Эс ĕмĕрхи сӳнми илем.
Ялан шутлатăп сан çинчен, –
Ан тух эс халăх асĕнчен.

Атте чĕлхи, тăван чĕлхем,
Куллен-кунах вăй-хал илсем.
Эс тухрăн ак тĕнче умне.
Çĕклерĕн туслăх кĕперне.

Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхем,
Санпа пĕрле ялан çĕклем
Çĕн саманан çĕн керменне,
Çĕршыв ятне, çĕршыв чысне!

*1985*

## ТĂВАН ХАЛĂХĂМА

Тăван халăх енне пуç тăйса
Эп утатăп çаплах малалла.
Мирпе туслăх çинчен шутласа
Çĕклес тетĕп мĕнпур вăй-хала.

Тăван халăх, сана ыр сунса
Эп ĕçлетĕп çанна тавăрса.
Çĕршыва чĕререн юратса
Эп паратăп хĕрÿллĕ сасса.

Тăван халăх, эп сан ывăлу, –
Эс ÿстертĕн, эс шантăн мана.
Умăмра – çĕнтерÿллĕ çулу, –
Нихăçан çухатмастăп ăна!

Тăван халăх, эп ĕмĕр санпа,
Юлас марччĕ кун-çул уттинчен.
Чун хавалĕ пĕрле Çĕршывпа
Вут чĕреçĕм таппи сÿниччен.

*1957*

## МУХТАТПĂР ВЫРĂС ХАЛĂХНЕ

Кĕвви *Г. Максимовăн*

Мухтатпăр вырăс халăхне –
Вăл пирĕн çывăх тус-тăван.
Çĕршыв-аннемĕр хăватне
Пĕрле çĕклетпĕр унпалан.

Мухтатпăр вырăс халăхне –
Эпир телейлĕ вăл пуртан.
Пире вăл панă ăс-халне
Сума суса мĕн авалтан.

Мухтатпăр вырăс халăхне –
Вăл шанчăк пирĕн пурнăçра.
Унпа Çĕршывăн ялавне
Тытатпăр çирĕп алăра.

Мухтатпăр вырăс халăхне
Асаттесен ыр йăлипе.
Тавах сана, Раççей-анне,
Пĕрле эс ĕмĕр пирĕнпе.

*1980*

## ЭПИР УЛĂП ЙĂХĔНЧЕН

Эпир çуллен тăрăшнипе,
Пур халăхсен пĕрлĕхĕпе
Мĕнле çĕнелчĕ Чăваш ен, –
Эпир çав Улăп йăхĕнчен.

Эпир писмен çĕр ĕçĕнчен,
Юлман çĕн ĕмĕр уттинчен.
Çаплах пуян юрăсенчен,–
Эпир çав Улăп йăхĕнчен.

Эпир çĕкленнĕ тӳпене,
Эпир тухмастпăр ĕмĕрне
Асаттесен пиллĕхĕнчен,–
Эпир çав Улăп йăхĕнчен.

Эпир мăн Атăл хĕрринчен,
Ĕçчен Чăваш çĕршывĕнчен,
Раççей–аннемĕр çемйинчен,–
Эпир çав Улăп йăхĕнчен.

*1987*

## ПАРНЕ

Кĕвви *А. Токаревăн*

Утрăм уйăх хăпарсан
Улма пахчипе.
Савăнайрăм кăмăлтан
Ун илемĕпе.

Илтрĕм йывăç пахчинче
Шăпчăк сассине,
Туйрăм çамрăк чĕремре
Юррăм пуррине.

Эп пуçларăм юррăма
Чи илемлине.
Пултăр çĕрĕм-шывăма
Вăл манран парне.

*1984*

## АТĂЛПА УРАЛ ХУШШИНЧЕ

Ай-хай Атăлпа Урал хушшинче,
Раççей çĕрĕнче, Чăваш çĕрĕнче
Ĕçчен халăхсем çывăх тăванла
Пĕрле пурăнни çĕклет вăй-хала.

Ай-хай чун-чĕрем çаплах хĕпĕртет –
Мирпе туслăхра Çĕршыв çĕнелет,
Ыр пурнăç пиллет ĕçчен сынсене,
Хĕвел ялкăшать, сапать шевлине.

Ай-хай, тантăшсем, тăрар ĕç умне,
Куллен ӳстерер Çĕршыв хăватне,
Упрар тĕнчери мирпе туслăха –
Вăл кирлĕ ялан мĕнпур халăха!

*1982*

## ЮРĂ

Сад пахчи чечекпе тумлансан
Эп илтеп шăпчăксен юррине.
Вĕсемех те юрлаç савăнса,
Тăван çĕрĕм, сана мухтаса.

Тӳпене сар хĕвел хăпарсан
Эп илтеп çамрăксен юррине.
Вĕсемех те юрлаç савăнса,
Тăван çĕрĕм, сана мухтаса.

Уй-хирсем тырпулпа кашласан
Эп илтеп ват çынсен юррине.
Вĕсемех те юрлаç савăнса,
Тăван çĕрĕм, сана мухтаса.

*1946*

## ХУ ЫВӐЛНА КӖТСЕ ИЛ...

Кӗвви *Ф. Лукинӑн*

Хӗвел вылять тӳпере,
Мӗн чул савнӑҫ чӗрере:
Таврӑнатӑп инҫетрен
Эпӗ халӑх Ҫарӗнчен.

Атте килӗ, тӑван кил,
Эс ывӑлна кӗтсе ил.

Тӑваң ҫӗршыв-аннене,
Унӑн ӗҫлӗ халӑхне
Юратнӑран, савнӑран
Сыхӑ тӑтӑм эп ялан.

Атте килӗ, тӑван кил,
Эс ывӑлна кӗтсе ил.

Ялта каллех сирӗнпе,
Хамӑн ҫывӑх туссемпе,
Чун туртнӑран ҫӗр ӗҫне
Тӑрап эп те ӗҫ умне.

Атте килӗ, тӑван кил,
Эс ывӑлна кӗтсе ил.

*1978*

## ÇАМРĂКЛĂХ ИЛЕМЛĔ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Таврара хĕвеллĕ
Çутă çуркунне.
Çамрăклăх илемлĕ
Туслăх пур чухне.

*Хушса юрламалли:*

Çĕршыва савса,
Ăна мухтаса
Юрă юрлар-и.

Ĕçре çитĕнетпĕр.
Ĕмĕт – малалла.
Çĕршыва пиллетпĕр
Çамрăк вăй-хала.

*Хушса юрламалли.*

Ан шиклен, чĕреçĕм,
Йывăрлăх килсен.
Ӳс, Çĕршыв-аннеçĕм,
Ӳс, татах çĕклен!

*Хушса юрламалли.*

*1973*

## КĂМĂЛĂМ

Сынна чунтан мухтарăм,
Ĕç айккинче тăмарăм.
Туссем, мана ан ятлăр,
Начар тесе ан калăр.

Тĕрĕслĕхе пуç тайрăм,
Ултавлăха таптарăм.
Туссем, мана ан ятлăр,
Начар тесе ан калăр.

Юратăва ăнлантăм,
Юлташлăха ал патăм.
Туссем, мана ан ятлăр,
Начар тесе ан калăр.

Çĕршывăма юратрăм,
Ăна савса юрларăм.
Туссем, мана ан ятлăр,
Начар тесе ан калăр.

*1960*

## ЭПИР, ÇĔН ĔМĔР КАЧЧИСЕМ

Симпыллă туслăх куркине
Йăтар-и, хаклă тантăшсем.
Çула тухатпăр ирхине
Эпир, çĕн ĕмĕр каччисем.

Совет салтакĕн тивĕçне
Хурар чĕремĕр варрине:
Тăшман ан пăстăр ĕмĕрне
Çĕршыв-аннемĕр чиккине.

Çырсамăр ăшă саламсем
Эсир, маттур чипер хĕрсем.
Манмастпăр эпĕр чикĕре,
Чун çумĕнчи туссем, сире.

Атте-аннемĕр пиллĕхне
Ялан асра тытса çÿрес.
Вĕсен мухтавлă ыр ятне
Савса упрас, çÿле çĕклес.

*1967*

## ÇĔРШЫВ-АННЕМĔР, ТАВ САНА

Çĕршыв-аннемĕр, тав сана,
Пире эс патăн ырлăхна.
Вăй-хал сунан кал-кал утма,
Чуна çĕклен ĕçчен пулма.

Çĕршыв-аннемĕр, тав сана,
Эс – пурнăç, ырă самана.
Илемлĕ, аслă туслăха
Пиллерĕн пĕтĕм халăха.

Çĕршыв-аннемĕр, тав сана,
Ĕмĕр упра чысна, ятна.
Юрларăм юрă чун-вартан,
Эпир телейлĕ эс пуртан!

*1960*

# ТĂНĂÇ ПУРНĂÇ, ТĂВАН ТАВРАЛĂХ, ĔÇ ПАТТĂРĔСЕМ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂСЕМ

## ÇĔР-ПЛАНЕТА ЧĔНЕТ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Çĕр-планета чĕнет пурнăçа юратма,
Тĕнчипе пур йышпа çирĕп миршĕн тăма.
Çĕр-планета чĕнет...

Çĕр-планета чĕнет пĕр-пĕрне ал пама.
Халăхсем хушшинчи туслăха упрама.
Çĕр-планета чĕнет...

Çĕр-планета чĕнет хĕрӳ ĕçшĕн çунма,
Çĕнтерӳшĕн куллен çĕнĕ ӳсĕм тума.
Çĕр-планета чĕнет.

Çĕр-планета чĕнет вăрçа хирĕç тухма,
Çут тĕнче илемне – пурнăçа – сыхлама.
Çĕр-планета чĕнет...

## ХАЛĂХСЕМ, ПĔРЛЕШЕР!

Йăлтăр-йăлтăр çиçет çут хĕвел тӳпере.
Ырлăхне парнелет Çĕр-аннемĕр пире.
Парас марччĕ нихçан хĕвеле сӳнтерме,
Парас марччĕ çĕре вăрçăпа пĕтерме.

Çĕр-аннемĕр чĕнет, ĕç сынни çĕкленет,
Çирĕп миршĕн çунать, улăпла кĕрешет.
Халăхсем, пĕрлешер! Чан çапни илтĕнет –
Кар тăрсан тĕнчипе мир вăрçа çĕнтерет.

Ытарми уй-хирсем, ешерен вăрмансем,
Илĕртеççĕ чуна тинĕссем, çăлкуççсем...
Парас марччĕ нихçан пĕтерме вĕсене,
Парас марччĕ тăкма мирлĕ халăх юнне.

Çĕр-аннемĕр чĕнет – ĕç сынни çĕкленет,
Çирĕп миршĕн çунать, улăпла кĕрешет.
Халăхсем, пĕрлешер! Чан çапни илтĕнет –
Кар тăрсан тĕнчипе мир вăрçа çĕнтерет.

Пирĕн пур ачасем, пирĕн пур мăнуксем,
Çут телейшĕн ĕçре кĕрешеççĕ вĕсем.
Парас марччĕ татма ачасен ĕмĕтне,
Парас марччĕ татма мăнуксен кун-çулне.

Çĕр-аннемĕр чĕнет — ĕç сынни çĕкленет,
Çирĕп миршĕн çунать, улăпла кĕрешет.
Халăхсем, пĕрлешер! Чан çапни илтĕнет –
Кар тăрсан тĕнчипе мир вăрçа çĕнтерет!

*1985*

## МИР КĂВАКАРЧĂНĔ

Çӳлелле хăпарать кăвакарчăн,
Вĕçнĕçем ӳстерет хăватне.
Ав ăна çăхансем тытса чарчĕç,
Амантма май шыраç çунатне.

Шурă-шурă кăвакарчăн,
Çӳл тӳпере ярăнан.
Эсĕ пирĕн чун хăвачĕ,
Мирлĕ куншăн сас паран.

Янкăр пĕлĕт йăлтах кăвакарчĕ,
Тăшман вăрçă пуçласшăн каллех.
Вăр-хурах ушкăнне кăвакарчăн
Парăнмасть, шав вĕçет çӳлеллех!

Шурă-шурă кăвакарчăн,
Çӳл тӳпере ярăнан.
Эсĕ пирĕн чун хăвачĕ,
Мирлĕ куншăн сас паран.

Çĕнтерӳллĕн вĕçет кăвакарчăн
Сар хĕвел ăшшипе савăнса,
Пурнăçа упраса хăварасшăн,
Хăварасшăн мире сыхласа.

Шурă-шурă кăвакарчăн,
Çӳл тӳпере ярăнан.
Эсĕ пирĕн чун хăвачĕ,
Мирлĕ куншăн сас паран.

*1981*

## САВНĂÇ ЮРРИ

Кĕвви *А. Асламасăн*

Чĕвĕл чĕкеçсем,
Çепĕç шăпчăксем
Савăнса юрлаç янкăр ирхине.
Хастар каччăсем,
Çамрăк пикесем
Васкаса утаç тулă пуссине.

Ылтăн уй-хирсем,
Ешĕл вăрмансем
Тухайса тăраç пирĕн куç умне.

Çутă кӳлĕсем,
Атăл хумĕсем
Чыс-илем кӳреç Чăваш çĕршывне.

Ырă шухăшсем,
Çĕнĕ ĕмĕтсем
Ялкăшса çунаç пирĕн чĕрере.
Хаклă тантăшсем,
Сывăх тусăмсем,
Мухтаса юрлар чаплă ĕмĕре.

*1955*

## ПУЛТĂР МИР

Çĕкленӳллĕн калатпăр эпир:
«Тĕнчере яланах пултăр мир!»

Хисепле, Вашингтон, Кубăна,
Ан хăмсар вутпала Ливана.

Лондон, эс килĕштер Мускавпа,
Лайăх пурăн, Париж, Прагăпа...

Ĕмĕтсем калама çук аван –
Вăй илсе тымарсем ярайсан.

Çĕршывсем туслăхра пурăнсан,
Пĕр-пĕрне чĕререн ăнлансан

Кĕтни çитĕ çак çут тĕнчене, –
Тăнăç пурнăç кирлех çынсене!

*1959–1984*

## МИРПЕ ТУСЛĂХШĂН...

Çĕр-аннемĕр ялан чечеклентĕр:
Çут хĕвел сÿнес çук ĕмĕрне!
Мирлĕ пурнăç татах çирĕплентĕр,
Алă паччăр çынсем пĕр-пĕрне.

Вăрçа хирĕç йышпа çĕкленетпĕр, –
Çĕр çинче ĕмĕрех пултăр мир!
Чун-чĕре чĕннипе кĕрешетпĕр
Çĕнĕ куншăн, телейшĕн эпир.

Çĕр-аннемĕр, сана тайма пуçăм, –
Ырлăхна парнелетĕн пире.
Ялкăшса хăпарать ирхи шуçăм,
Саламлать тус-тăванлăн мире.

*1982*

## МИРЕ, ПУРНĂÇА СЫХЛАР!

Халăхсем, чун-чĕре хушнипе кар! тăрар,
Пĕр-пĕрне тăванла ыр сунса ал парар,
Тăрăшар çирĕп миршĕн пĕрле вăй хурса,
Пурнăçа хăварар çулăмран сыхласа.

Халăхсем, чун-чĕре хушнипе кар! тăрар,
Сар хĕвел çутине сӳнтерме парас мар.
Тĕнчене тус-тăванлăх тытса тăмалла.
Мирлĕ пурнăç куллен çĕнтерсе пымалла.

Халăхсем, чун-чĕре хушнипе кар! тăрар,
Хамăр тупнă мире сыхласа хăварар.
Пурте çирĕп калар ачасен ячĕпе:
Яланах, ĕмĕрех пултăр мир тĕнчипе!

*1982*

## МИРШĔН КĔРЕШЕР!

Ырăран усала пĕлмелле уйăрма,
Тăшмана парас марччĕ çĕре аркатма,
Пурнăçа вилĕмрен сыхласа хăварар, –
Пурте миршĕн пĕрле кĕрешме кар! тăрар.

Тĕнчене тус-тăванлăх тытса тăмалла.
Тăшмана вăрçăпа ашкăнма чармалла!
Ялкăшан хĕвеле сӳнтерме парар мар, –
Пурте миршĕн пĕрле кĕрешме кар! тăрар.

Чăн-чăн пысăк телей – çĕр çинче пурăнни,
Чăн-чăн пысăк телей – çынна юратни.
Чун-чĕре хушнине ĕçпеле кăтартар, –
Пурте миршĕн пĕрле кĕрешме кар! тăрар.

*1982*

## МИРЕ СЫХЛĂР ПУРТЕ

Кĕвви *М. Михайловăн*

Çуркунне çут тĕнче çунат сартăр тесен,
Кайăксем савăнса юр юрлаччăр тесен,
Чĕрере юрату çунса тăтăр тесен, —
Мире сыхлăр пурте, тĕнчери тусăмсем.

Алăри ачасем хавас ÿсчĕр тесен,
Амăшсем татăлса ан куляннччăр тесен,
Кашни çын килĕнче пурнăç пултăр тесен, –
Мире сыхлăр пурте, тĕнчери тусăмсем.

Уй-хирсем тырпулпа пуян пулччăр тесен,
Вăрмансем хунаса каш! кашлаччăр тесен,
Тинĕссем хумханса ĕмĕр выртчăр тесен, –
Мире сыхлăр пурте, тĕнчери тусăмсем.

Çĕн ялсем, хуласем чечекленччĕр тесен,
Çĕр çинчи халăхсем ырă курччăр тесен,
Сар хĕвел ялкăшса хĕлхем саптăр тесен, –
Мире сыхлăр пурте, тĕнчери тусăмсем!

*1961*

## МАНМАСТПĂР САНА

### *Реквием*

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Хаяр тăшман килсе тухсан,
Хăрушă вилĕм ашкăнсан
Çĕршывшăн хутăн эс пуçна,
Çĕршывшăн патăн пурнăçна.

Выртатăн хурăн айĕнче,
Кăвак тӳпе хӳтлĕхĕнче.
Манмастпăр эпир сан ятна,
Манмастпăр çутă сăнарна.

Чун-чĕререн сума суса,
Тăпру çине чечек хурса
Тăратпăр ак пуçа тайса...
Тăванăм, канлĕ çывăрсам.

*1974*

## ПАЛĂК

Кĕвви *Г. Моклаковăн*

Ларать çӳллĕ шурă палăк
Тăван ялăм варринче.
Пуç таятăп: салтак-паттăр
Выртать унăн айĕнче.

Эй, юлташăм, канлĕ çывăр,
Парăмра эп сан умра.
Çулсем пулчĕç питĕ йывăр,
Çĕршыв çунчĕ çулăмра...

Сыввисемшĕн эс çĕклентĕн,
Вилĕм кӳтĕн тăшмана,
Ĕç сыннишĕн хĕрхенмерĕн
Хăвăн çамрăк пурнăçна.

Ларать çӳллĕ шурă палăк
Áслă ялăн варринче.
Пуç таятăп: салтак-паттăр
Выртать унăн айĕнче.

*1962*

## ЮЛТАШ ТĂПРИ

*М. Ястрана*

Хĕвеланăç енчи вăрманта
Пур чечеклĕ уçланкă хĕрри.
Тантăшсем, çак хитре вырăнта
Пирĕн хаклă юлташăн тăпри.

Пуç таяр-и юлташ умĕнче,
Тăприне эрешлер чечекпе.
Вăл сыхланă хаяр кунсенче
Çĕршыва хăй таса чунĕпе.

Ĕмĕр-ĕмĕр усрар чĕрере
Хамăр çывăх юлташăн ятне.
Вилĕмрен вăл хăтарнă пире,
Çирĕп тытнă Çĕршыв ялавне.

*1945*

## КРЕПКОВ ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂ

Кĕвви *А. Михайловăн*

Тăван Çĕршыв вутра чухне
Эс кайрăн граждан вăрçине.
Аркатрăн эс тăшмансене,
Сыхларăн халăх телейне.

Крепков, сана эпир манмастпăр,
Усратпăр хамăр чĕрере.
Эс вилĕме çĕнтернĕ паттăр,
Яту сан юлĕ ĕмĕре.

Çĕклерĕн эс Çĕршыв чысне,
Çĕклерĕн халăх ялавне.
Чĕрӳ тапма пăрахиччен
Тухмарăн вăрçă хирĕнчен.

Эс улăпла çапăçнине,
Çĕн пурнăçа сыхланине
Савса юрлатпăр юрăра,
Мухтав-чыс тетпĕр паттăра.

Крепков, сана эпир мухтатпăр,
Тытатпăр хамăр чĕрере.
Эс вилĕме çĕнтернĕ паттăр,
Яту сан юлчĕ ĕмĕре!

*1962*

## ЁМĔРЕХ ЫРĂПА АСĂНАТПĂР

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Николай Афанасьев, сана,
Ĕмĕр-ĕмĕр манми тăвана,
Вăрçăра паттăр çын пулнăран,
Çутă куншăн пуçна хунăран –
Яланах ырăпа асăнатпăр,
Çак юрра чĕререн халаллатпăр.

Николай Афанасьев, сана,
Ĕмĕр-ĕмĕр манми тăвана,
Вилĕме çĕнтерсе тухнăран,
Пурнăçна Çĕршыва панăран –
Яланах ырăпа асăнатпăр,
Çак юрра чĕререн халаллатпăр.

Николай Афанасьев, сана,
Ĕмĕр-ĕмĕр манми тăвана,
Александр Матросов ятне
Çӳле йăтнă чăваш каччине –
Яланах ырăпа асăнатпăр,
Çак юрра чĕререн халаллатпăр.

Николай Афанасьев, сана,
Ĕмĕр-ĕмĕр манми тăвана,
Вутра хĕрнĕ ятна мухтаса,
Çӳллĕ палăк лартса, чысласа –
Яланах ырăпа асăнатпăр,
Çак юрра чĕререн халаллатпăр.

*1975*

## СĂМАХ ХĂВАЧĔ

Сăмах хăватлă иккенне
Эп сиснĕ, пĕлнĕ пĕчĕкрен.
Унпа вĕçетĕн тӳпене
Тăван аннен чĕрçи çинчен.

Сăмах хăватлă иккенне
Эп шаннă, туйнă ĕлĕкрен.
Унпа ĕшеннĕ çын чунне
Çунат паран, çĕклентерен.

Сăмах хăватлă иккенне
Эп туйнă йывăр кунсенче:
Унпа тăшман вăйне-халне
Аркатнă вăрçă хирĕнче.

*1967*

* * *

Ан тив, мана хурлаччăр
Кĕвĕçекен чунсем.
Юррăмсене юрлаччăр
Юлташăмсем, туссем.

Ан тив, мана калаччăр
Юрри начар тесе.
Анчах хăйсем ан ларччăр
Пӳрне вĕçне ĕмсе.

Ан тив, хĕлхем кăлартăр
Поэт сăвви-юрри.
Ăна Çĕршыв юрлатăр –
Мĕн пур унтан ырри!

*1961*

## УПРА ТӐВАН ЧӖЛХЕМӖРЕ

*З. Петрова* кӗвӗленӗ

Ан тиркесем чӗлхемӗре,
Ан хӑй ӑна начар теме, –
Унпа сана аннӳ ӳстернӗ,
Юрла-юрла хуллен сиктернӗ.

Савар, мухтар чӗлхемӗре,
Ӑна усрар чыс-хисепре, –
Унпа эпир ӗҫе вӗреннӗ,
Ҫӳл тӳпене ҫити ҫӗкленнӗ.

Упрар тӑван чӗлхемӗре,
Чун-чӗрери хӗлхемӗре, –
Унпа эпир ялан ҫӗнтернӗ,
Ҫӗршыв ятне ҫӳле ҫӗкленӗ!

*1962*

## ЫТАРАЙМИ ТӐВАН ЧӖЛХЕМӖР

Кӗвви *Ю. Кудаковӑн*

Ытарайми тӑван чӗлхемӗр,
Эс ҫав тери хитре, чипер!
Санпа пӗрле кӑвар чӗремӗр, –
Пӗрлех ҫӗн ӗмӗре кӗрер.

Ытарайми тӑван чӗлхемӗр,
Сана манмастпӑр ӗмӗрне.
Ҫухатас ҫук, атте-аннемӗр,
Эсир пилленӗ парнене.

Ытарайми тăван чĕлхемĕр,
Хисеплĕ эс те çĕр çинче.
Чунăмăрти сӳнми хĕлхемĕр,
Эс ялкăш халăх чĕринче.

Ытарайми тăван чĕлхемĕр,
Упра асаттесен пилне.
Нихçан асран кайми парнемĕр,
Çĕкле эс пурнăç илемне!

*1980*

## ХУСАНКАЙ ÇИНЧЕН ХЫВНĂ ЮРĂ

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Хусанкай хăйĕн пĕтĕм вăйне,
Çăлтăр пек çуталан ăс-халне,
Пархатарлă хĕрӳ пурнăçне
Парнелерĕ чăваш халăхне.

Хусанкай тăван халăх ятне,
Илĕртӳллĕ чĕлхе илемне,
Ун сăваплă сӳнми хăватне
Илсе тухрĕ тĕнчемĕр умне.

Хусанкай пиллесе хăварни,
Унăн хаклă асамлă парни
Нихăçан тухас çук асăмран, –
Ăна уншăн тавах чун-вартан!

Хусанкай чунĕпе, ĕçĕпе,
Янăравлă сăвви-юррипе
Юлчĕ пирĕн пин-пин чĕрере,
Юлчĕ пирĕн асра ĕмĕре!

*1987*

## ПИРĔН ÇЕÇПĔЛ

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Çĕкленчĕ Çеçпĕл ирĕкре,
Сас пачĕ, сарчĕ çунатне.
Çĕн кун çынни, кăвар чĕре,
Пире пиллерĕ пурнăçне.

*Хушса юрламалли:*

Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Ырă Çеçпĕл.
Яту юлтăр ĕмĕре.
Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Савнă Çеçпĕл,
Пурăн пирĕн чĕрере.

Тăван чĕлхемĕр хăватне
Ĕненнĕ Çеçпĕл чунĕпе,
Ун илемне, пуласлăхне
Пуç тайнă халăх ячĕпе.

*Хушса юрламалли.*

Çĕршыв-аннемĕр ялавне
Вăл тытнă çирĕп, ÿкермен.
Мухтатпăр Çеçпĕл ыр ятне,
Юрлатпăр юрă ун çинчен.

*Хушса юрламалли.*

## ПИРĔН МИТТА

Кĕвви *А. Бурундуковăн*

Митта Ваçлейĕн юррине,
Янравлă, уçă сассине,
Ун ырă, çутă сăнарне
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

*Хушса юрламалли:*

Хĕвел вылять сăнра-питре,
Митта юрри мĕнле хитре!
Çĕклет вăл пирĕн чĕрене,
Çĕклет вăл халăх кăмăлне.

Митта Ваçлейĕн сăмахне –
Тăванлăх-туслăх кирлине,
Çĕршыв-аннемĕр хаклине –
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

*Хушса юрламалли.*

Митта Ваçлейĕн юррине,
Вăл халăха пуç тайнине,
Тăван чĕлхешĕн çуннине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

*Хушса юрламалли.*

*1990*

## ПЫРСА КУРĂР ШУРШĂЛА

Ахаль мар пуль чĕрем çĕкленет, –
Пирĕн Шуршăл çуллен çĕнелет!
Ялăм-йышăм савать çĕр ĕçне,
Тупать мар-и унта телейне.

*Хушса юрламалли:*

Çитсе курăр эсир Шуршăла,
Андриян çула тухнă яла.
Савăнар-ха пĕрле уявра,
Чун юратнă Тăван çĕршывра!

Мĕн чул пирĕн ĕçри паттăрсем –
Тăван ялăн сÿнми çутисем.
Вăйй хураççĕ вĕсем уй-хирте, –
Пултарулăх пурах çав пирте!

*Хушса юрламалли.*

Пирĕн ял çыннисем ĕлĕкрен
Хисепленĕ атте-аннене,
Тупа тунă чунтан-чĕререн
Упрамашкăн Çĕршыв илемне.

*Хушса юрламалли.*

*1988*

## ÇУРХИ ТĔНЧЕ

Мĕнле чипер çурхи тĕнче –
Çунат пиллет çынсен чунне.
Тăванлăх, туслăх çĕр çинче
Çĕклет пур халăх кăмăлне.

Мĕнле маттур çурхи тĕнче –
Пур çĕршыва пырса кĕрет.
Ун хӳттинче, ытамĕнче
Пусмăрти çын вăй-хал илет.

Ытарайми çурхи тĕнче,
Сыхла этемлĕх хăватне –
Чăн ирĕк пурнăç садĕнче
Çын куртăр хăйĕн телейне.

*1964*

## ХИТРЕ ИККЕН ÇУ КАÇĔ

Хитре иккен çу каçĕ,
Уçать этем чунне.
Хĕрсем вăййа тухаççĕ
Ыраш пусси хĕрне.

Аван иккен çу каçĕ,
Йĕри-тавра илем.
Ура хуçса ташлаççĕ
Ĕçчен, маттур яшсем.

Тӳлек иккен çу каçĕ,
Сиксе тапать чĕрем.
Пире кĕтсе тăраççĕ
Асран кайми туссем.

*1960*

## ÇУРХИ CĂНСЕМ

Кĕвви *А. Токаревăн*

Ырă-çке çуркунне:
Ылтăн хĕвел йăл кулать,
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать.

Ешĕл сад пахчинче
Чăпар кукук авăтать,
Шăпчăк юрă шăрататъ.

Ырă-çке çуркунне
Чун савнипе тĕл пулма,
Унпа ăшшăн калаçма.

Ырă-çке çуркунне:
Ылтăн хĕвел йăл кулать,
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать.

## ÇĔНЬЯЛ ÇАМРĂКĔСЕН ЮРРИ

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Эпир мар-и çурхи чечексем,
Çут хĕвел пек чипер сăнлисем,
Пултаруллă Çĕньял пикисем,
Ĕçпеле ырă ят илнисем.

Эпир мар-и тырпул ăстисем,
Çĕр илемĕ – уй-хир хуçисем,
Пултаруллă Çĕньял каччисем,
Пăлаçи, Юхма ен çыннисем.

Эпир мар-и ирхи шăпчăксем,
Юрăпа, ташăпа туслисем,
Пултарullă Çĕньял пикисем,
Хĕпĕртӳллĕ хĕрӳ чĕресем.

Эпир мар-и сӳнми çăлтăрсем,
Пурнăçра ĕмĕрех малтисем,
Пултарullă Çĕньял каччисем,
Пултарullă Çĕньял пикисем.

## КĂВАК ЧЕЧЕК, ÇЕÇПĔЛ

Çуркуннепе шур юр кайсан,
Çӳлтен хĕртсе хĕвел пăхсан
Кăвак чечек шăтса тухать,
Вăл – Çеçпĕл хĕмлĕн ялкăшать.

Кун пек чипер кĕтес пур-и? –
Чуна çĕклет тăри юрри!
Хĕвел шевли, хĕвел кулли...
Кăвак чечек ĕшне тулли.

Ан татăрсам çав Çеçпĕле –
Тымар ярса ун ӳсмелле!
Тайма пуçах сар хĕвеле –
Савăнтарать ăшшипеле!

Çуркуннепе шур юр кайсан,
Çӳлтен хĕртсе хĕвел пăхсан
Кăвак чечек шăтса тухать,
Вăл – Çеçпĕл хĕмлĕн ялкăшать.

*1970*

## МĔНЛЕ ЛАЙĂХ УПРАСАН

Эпĕ утрăм вăрман çулĕпе
Ирхине шурăмпуç çутипе.
Ак пуçларĕ шăпчăк юрлама,
Тыткăнларĕ кĕвви чунăма.

Пуç таятăп ирхи вăрмана
Хăй патне илĕртнишĕн мана.
Утнăçемĕн чĕрем савăнать,
Çакна сиснĕ – куккук авăтать.

Сăр вăрманĕ хуллен хумханать,
Мана, тен, ыр сунса саламлать.
Юрататăп ăна чун-вартан,
Мĕнле лайăх ăна упрасан!

*1988*

## КУККУК САССИ

Çут тĕнче илемлĕ. Садсем чечекре.
Йăлтах çĕр çĕнелнĕ тăван кĕтесре.

Туссемпе çӳретĕп ĕшне хĕрринче.
Куккук сасă пачĕ çăка тăрринче.

Шăрăх... Вăй выляççĕ хĕвел шевлисем.
Ирех ав ĕçлеççĕ хирте ачамсем.

Кунтах çут çăлкуçĕ. Килеп шыв ĕçме.
Куккукĕ хушать ав çĕр çула çитме.

*1960*

## ПӐЛАҪИ ТУҪА ЕН ҪЫННИСЕМ

Кӗвви *Ф. Лукинӑн*

Эпир мар-и Туҫа ен хастар ҫыннисем,
Чи хӗрӳллӗ ӗҫре ырӑ ят илнисем.
Сӳнес ҫук ӗмӗрне пултарулӑх пирте, –
Ылтӑн тырӑ ӳсет кашласа уй-хитре.

*Хушса юрламалли:*

Пӑлаҫи Туҫа ен ҫыннисем,
Малалла чӗнекен маяксем,
Шӑратар-ха чӗре юррине,
Тав тӑвар-ха Ҫӗршыв-аннене!

Шурӑмпуҫ ҫуталса ҫӗкленет тӳпене.
Пурте ҫывӑх кунта пирӗн чун-чӗрене.
Ӗлӗкрен-авалтан юрататпӑр ӗҫе,
Тулӑх пурнӑҫ, телей парнелет вӑл пире

*Хушса юрламалли.*

Хастар пирӗн хӗрсем,
паттӑр пирӗн яшсем,
Пултаруллӑ йышра хисепре ваттисем.
Тӑван ял ҫулсерен ҫӗнелет, вӑй илет, –
Уншӑн чун савӑнать, уншӑн чун хӗпӗртет.

*Хушса юрламалли.*

*1984*

## АВАН ИККЕН ТРОЛЛЕЙБУСПА*

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Троллейбуспа аван иккен:
Çитес çĕре часах çитен.
Малтан мала вĕçтернĕçем
Чун савăнать, тăванăмсем.

*Хушса юрламалли:*

Çил çунат пек троллейбуспа,
Хитре, чипер машинăпа,
Иртетпĕр аслă урампа,
Иртетпĕр çĕнĕ проспектпа.

Сар хĕвел пек йăлтăртатса,
Шăнкăрав пек шăнкăртатса
Илем кӳрен эс хулана,
Илем кӳрен эс таврана.

*Хушса юрламалли.*

Ытарайми троллейбуса
Чун-чĕререн сума суса
Мухтатпăр хӳхĕм юрăпа
Янравлă уçă сасăпа.

*Хушса юрламалли.*

*1981*

* Ку юрра Шупашкарти троллейбус управленийĕнче ĕçлекенсем ыйтнипе çырнă.

## САВНĂ ЯЛĂМ, ПАТĂРЬЕЛ

Кĕвви *А. Бурундуковăн*

Тӳпере ялкăшать сар хĕвел,
Çул тытатпăр ирех уй-хире.
Савнă ялăм, тăван Патăрьел,
Ĕмĕрех хисеплетĕн пире.
Эх, юратнă тăван ялăм,
Илемлен эс кунсерен.
Юрă тупрăм, ай юрларăм
Саншăн пĕтĕм чĕререн.

Пăла шывĕ юхать сарăлса,
Куллен ырлăх кӳрет ялăма.
Пуç таятăп ăна ыр сунса,
Парнелетĕп ăна юррăма.
Эх, юратнă тăван ялăм,
Илемлен эс кунсерен.
Юрă тупрăм, ай юрларăм
Саншăн пĕтĕм чĕререн.

Çĕр-аннемĕр, ялан эс çĕнел,
Çуллен ӳстĕр тырпул кашласа.
Çунат сарнă тăван Патăрьел,
Ма юрлас мар сана мухтаса.
Эх, юратнă тăван ялăм,
Илемлен эс кунсерен.
Юрă тупрăм, ай юрларăм
Саншăн пĕтĕм чĕререн.

*1975*

## СĔВЕ ЮХАТЬ МАЛАЛЛА

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Каллĕ-маллĕ çаврăнса,
Кукăр-макăр йĕр туса
Сĕве юхать малалла,
Çаплахваскать Атăла.
Эп те хамăн чунăмпа,
Мĕнпур сăввăм-юррăмпа
Ялан пĕрле Раççейпе,
Пĕрле вырăс халăхпе.
Ытарайми çĕр çинче,
Сӳнми хĕвел айĕнче,
Атăлпала Сĕве пек,
Эпир туслă Раççейпе.

*1962*

## КАÇХИ АСЛАТИ

Аслати кĕрлерĕ,
Шарт! çапса аçа
Ыйхăран çĕклерĕ
Çуллахи каçа.
Сиплĕ çумăр çурĕ
Шăварса çĕре,
Шарласа шыв юхрĕ
Ирĕклĕ çĕре.
...Килчĕ ирхи шуçăм
Янкăр тӳпене.
Ыталарĕ куçăм
Çĕнĕ тĕнчене!

*1988*

## ХЁВЕЛ АНСАН

Вăрман хыçне хĕвел ансан
Хĕрсем тухаççĕ выляма.
Пурте пĕрле карталанса
Пуçлаççĕ сăвă калама.

Ян-ян каять чăваш юрри,
Ăна итлеп каçса кайса.
Пулмарĕ вăл тĕнче хурри,
Хастар вĕçет çунат сарса.

*1964*

## САД ПАХЧИНЧЕ

Сад пахчи шап-шурах чечекре,
Ытарма çук çурхи илемне.
Çакăнта хамăн савнă хĕре
Эпĕ куртăм паян ирхине.

Савнă тусăм утать васкаса,
Аллинче икĕ симĕс витре.
Сăнĕ ун çут хĕвел пек таса,
Утти акăш утти пек хитре.

Савнă тусăм хăйсен садĕнче
Юрласа улмуççи шăварать.
Унăн хўхĕм, ĕçчен сăнĕнче
Ырă ĕмĕт çиçсе ялкăшать.

*1946*

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Умра выртать тӳр çул. Утатăп
Тăван яла инçе çĕртен.
Ярса пусмассерен çĕн атă
Чĕриклетсе илет хуллен.

Йĕри-тавра пăхса илетĕп, –
Чун савăнать, сикет чĕрем.
Кунта хур кайăксем иленнĕ,
Кунта асран кайми илем.

Кама савса мĕскер калам-ши, –
Ытарма çук çыннисене.
Хăшне малтан пуçа таям-ши
Пырса кĕрсен ял хушшине?

*1960*

## ТĂВАН ЯЛĂМ

Кĕвви *Н. Карлинăн*

Садсенче чечексем çурăлаççĕ,
Пăла шывĕ юхать çуталса.
Тăван ял халăхне вăратаççĕ
Шăпчăксем юрăсем юрласа.

Уй-хирте, фермăра ялăм-йышăм
Тăрăшать, пултаруллăн ĕçлет.
Çĕрĕм-шывăм,
пиртен парне йышăн, –
Пӳлмене çĕнĕ тырă кĕрет.

Эх, хитре тăван ял сăн-сăпачĕ
Эпир уншăн çунса тăнăран.
Юрăра янăрать ырă ячĕ
Тăван халăх çĕрпе туслăран.

*1980*

## ÇУРЛА УЙĂХ

### *Романс*

Кĕвви *А. Токаревăн*

Çӳлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

Эх, мĕн чухлĕ кĕмĕл çăлтăр
Çиçет пĕлĕт маччинче.
Лăпкă кӳлĕ йăлтăр-йăлтăр
Вылять улăх варринче.

Çӳлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп куратăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

*1962*

## ÇУРХИ ИЛЕМ

Çитрĕ çутă çуркунне,
Чун-чĕреçĕм хĕпĕртет.
Çунат сарать çĕр-анне,
Уй-хир, вăрман ешерет.

Çитрĕ çутă çуркунне,
Хĕвел вылять тӳпере.
Саркайăк та юррине
Пуçлать чипер ĕшнере.

Çитрĕ çутă çуркунне,
Садсем шап-шур çеçкере.
Тавах çĕршыв илемне,–
Мĕн чул савнăç чĕремре!

*1976*

## ХИТРЕ ИККЕН ÇУРХИ КУНСЕМ

Хитре иккен çурхи кунсем
Хĕвел сиксе ташланăран.
Карталанса кайăк хурсем
Вĕçсе килеççĕ кăнтăртан.

Чипер тумне уртса ярать
Сăр хĕррипе иртен вăрман.
Шăнкăртатса çырма юхать,
Туллин сывлать уй-хир, çаран...

Каçса кайса тăри юрлать,
Кĕрлет ĕç шавĕ таврара.
Хастар ял-йышăм тăрăшать
Тулли пучахшăн акара.

*1976*

## ÇУРАЛНĂ ЯЛĂМ, ТĂВАН ЯЛ

Тăван ялăм тухать куç умне
Тараватлăн сарса çунатне.
Мĕнле ырă, илемлĕ тĕнче, –
Сад пахчи çут Пăла хĕрринче.
Илĕртеççĕ чуна çĕн суртсем,
Çăкасар айккинчи çăлкуçем.

Тăван кил умĕнче, урамра,
Эпĕ лартнă, ӳстернĕ йăмра
Пуç таять ыр сунса ман енне,
Хĕпĕртӳллĕн çĕклет чĕрене.
Симĕс тумлă Хырай курăнать,
Сăр вăрманĕ унтан пуçланать.

Çакăнта эпир тухнă çуллен
Çамрăк чух çу уявĕ çитсен.
Шăрантарнă чĕре юррине,
Эх, çаптарнă чăваш ташшине.
Çак тавралăх ялан илĕртет, –
Савнă ялăм, сана мĕн çитет?!

*1981*

## ИРХИНЕ

Сывлăм та типмен-ха иркхине,
Йăлтăр-йăлтăр вылять уй-хирте.
Савăнса авăтать путене,
Çунатне çат! çапса хĕпĕртет.

Анăçран ăшă çилĕ вĕрет,
Ылтăн тулă пусси хумханать.
Сар хĕвел пирĕн хӳхĕм çĕре
Чун пилленĕн савса ăшăтать.

Тырпула сĕткен çутă кĕрет,
Ырă кунăн шевли ун çинче.
Сирĕлет ерипен шур тĕтре,
Вĕрет пурнăç Чăваш çĕрĕнче.

*1948*

## ĔÇ ЮРРИ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Йĕс шăнкрав пек сасăпа
Ай пуçлар-и?
Ылтăн ыраш пуссине,
Тантăшсемĕр, ай васкар-и?

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Пурте пĕрле савăнса
Ай юрлар-и?
Сарă ылтăн тыррине
Ăмăртмалла ай вырар-и?

Хĕрӳ ĕçĕн юррине
Йĕс шăнкрав пек сасăпа
Ай юрлар-и?
Вăхăт хаклă – çийĕнчех
Авăн çапма ай пуçлар-и?

Мухтав илнĕ ĕç юрри
Ян янраса, шăранса
Ай юхтăр-и?
Малашне те вăл пире
Вăй-хал парса ай тăтăр-и?

*1962*

## САД ЯНӐРАТЬ САРКАЙӐК САССИПЕ

Кӗвви *Г. Лебедевӑн*

Эпир ирех тӑратпӑр ӗҫ умне...
Хӗвел хӗртет, сапать ай шевлине.
Хирте каш! кашласа тырпул ӳсет,
Ҫунатланса хӑмла ай ешерет.
Сад янӑрать саркайӑк сассипе,
Чун савӑнать туссем маттуррипе.

Умра эпир ӳстернӗ ҫӑкасем,
Шӑнкӑртатса юхан ай ҫырмасем,
Шур акӑшсем иленнӗ кӳлӗсем,
Йӑлтӑртатса вылян ай ҫӑлкуҫсем.
Сад янӑрать саркайӑк сассипе,
Чун савӑнать туссем маттуррипе.

Ӑмӑртмалла вӗҫеҫҫӗ чӗкеҫсем,
Мӗнле хитре вӗсен ай юррисем.
Мӗнле аван, хавас чун-чӗрене.
Тавах Ҫӗршыв-аннемӗр илемне.
Сад янӑрать саркайӑк сассипе,
Чун савӑнать туссем маттуррипе.

*1970*

## ШУР ХАЛАТЛӐ СЕСТРАСЕМ

Кӗвви *М. Николаевӑн*

Шур халатлӑ хастар сестрасем,
Яштака, хӗвел сӑнлӑ хӗрсем,
Парнелетӗр эсир ҫынсене
Яланах чун-чӗре ӑшшине.

Шур халатлă маттур сестрасем,
Яштака, хӗвел сăнлă хӗрсем,
Юрататăр чунтан ҫынсене,
Хураллатăр вӗсен сывлăхне.

Шур халатлă сăпай сестрасем,
Яштака, хӗвел сăнлă хӗрсем,
Мухтанатпăр эпир сирӗнпе,
Пултаруллă, ӗҫчен ҫынсемпе.

*1980*

## САВНĂ АТĂЛ ҪИНЧЕ

*Туристсен юрри*

Аслă Атăл пире юратса
Парнелерӗ сӳнми илемне:
Пăрахут ҫырана хум ҫапса
Акăш евӗр ишет мал енне.

Савнă Атăлпала
Эпӗр тухнă ҫула.
Хула хыҫҫăн хула
Ҫывăх тус-тăванла
Ҫупăрлаҫҫӗ чуна.

Эпӗр мар-и маттур туристсем,
Пирте тунсăх пулман ӗмӗрне.
Эпӗр Атăл каччи-хӗрӗсем,
Пирӗн юрă юхать инҫене.

Тӗп хуламăр, тăван Шупашкар,
Эс кӗтетӗн пире пуҫ тайса.
Савни пек юратса ална пар,
Ална пар чӗререн ыр сунса.

*1966*

## ÇĔР ĔÇЧЕННЕ МУХТАР-И

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Çуллахи кун илемне
Куçпа пăхса илем-и,
Таса çутă çăл шывне
Чун каниччен ĕçем-и?

*Хушса юрламалли:*

Мĕн чул илем таврара!
Ялăм-йышăм вырмара...
Çĕнĕ юрă пуçлар-и,
Çĕр ĕçченне мухтар-и?

Савнă ялăм уй-хирне
Ирпе ирех çитем-и,
Хĕрӳ кăвар чĕрене
Хастар ĕçре çĕклем-и?

*Хушса юрламалли.*

Тăван уй-хир парнине
Ыр кăмăлпа илем-и,
Çĕршывăмăр-аннене
Мирпе телей пиллем-и?

*Хушса юрламалли.*

*1988*

## САЛАМ ЁÇ ГЕРОЙĚСЕНЕ

Кěвви *Г. Лебедевăн*

Ёç геройěсене саламлатпăр,
Пуç таятпăр савса чěререн.
Вěсен йышě ўссе нумайлантăр,
Тăван ял хăват илтěр çуллен.

*Хушса юрламалли:*

Салам сире,
Мухтав сире,
Мухтав ěç геройěсене,
Тăван çěршыв,
Чăваш çěршыв
Паттăр ывăль-хěрěсене.

Ылтăн тырă хирте каш! кашлатăр
Тинěс евěр хитрен хумханса.
Кашни çын ěçе савтăр, юраттăр,
Уя тухтăр çанна тавăрса.

*Хушса юрламалли.*

Ěмěр-ěмěр илем кўрсе ларччăр
Эпир лартнă, ўстернě садсем.
Ěçри паттăр çынсем йышлăланччăр,
Сывă пулччăр тырпул ăстисем.

*Хушса юрламалли.*

*1960*

# ЭПИР МАТТУР ХĂМЛАÇĂСЕМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Эпир маттур хăмлаçăсем,
Мĕн авалтан ĕçчен çынсем,
Çĕклетпĕр пурнăç илемне
Хĕвеллĕ çутă тӳпене.

*Хушса юрламалли:*

Ик куç тулли хăмла пахчи,
Чун савăнать унта тухсан.
Юрлать ватти, ачи-пăчи
Ĕçсем кал-кал ăнса пырсан.

Эпир маттур хăмлаçăсем,
Ăмăртура чи малтисем,
Ял-йышпала пурте пĕрле
Хĕрсе ĕçлетпĕр çĕнĕлле.

*Хушса юрламалли.*

Эпир маттур хăмлаçăсем,
Ĕçпе ыр ят илнĕскерсем,
Асран ямастпăр ĕмĕрне
Сана, Тăван çĕршыв-анне!

*Хушса юрламалли.*

## САЛАМ СИРЕ, КОСМОНАВТСЕМ!

Кĕвви *В. Ходяшевăн*

Салам сире, космонавтсем!
Асран кайми тусăмăрсем!
Эсир Тăван çĕршыв чысне
Çĕклерĕр çÿллĕ тÿпене.
Космонавтсем,
Космонавтсем,
Сире савать, мухтать тĕнче.
Эсир – патвар,
Эсир – хастар
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче.

Этем нихçан çитмен çĕре
Çул хыврăр, улăп-паттăрсем.
Илемлĕ, чаплă ĕмĕре
Пиллерĕр çĕнĕ çунатсем.

Телейлĕ çул сунать сире
Тăван çĕршыв –тăван анне.
Çитме чĕнет Çĕршыв пире
Çÿле, çут çăлтăрсем патне.

Космонавтсем,
Космонавтсем,
Сире савать, мухтать тĕнче.
Эсир – патвар,
Эсир – хастар
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче.

*1962*

## ЫЛТĂН ТЫРĂ ПУССИНЧЕ

Тӳпере, тăван ял тĕлĕнче,
Сар хĕвел йăлтăр-йăлтăр çиçет.
Иртенпех укăлча çумĕнче
Хир карапĕ мăнаçлăн кĕрлет.

*Хушса юрламалли:*

Çутă ĕмĕт сӳнмест чĕрере.
Ялăм-йышăм хĕрӳллĕ ĕçре.

Маттур каччă комбайнпала
Васкаса ылтăн тырă вырать.
Тантăшсемĕр, паян кам малта? –
Чи малта çамрăк каччă пырать.

*Хушса юрламалли.*

Эпир тухнă ĕçе эртелпе,
Тырă-пулă куçа илĕртет.
Тăрăшатпăр чĕре хушнипе.
Пӳлмене ылтăн пурлăх кĕрет.

*Хушса юрламалли.*

*1982*

## МУХТАВ СИРЕ, ÇĔР ĂСТИСЕМ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Ытарайми тусăмăрсем,
Çĕнелнĕ ял ĕçченĕсем,
Вăйлă тырпул тăвакансем, –
Мухтав сире, çĕр ăстисем.

Ытарайми тусăмăрсем,
Çунатлă ĕмĕр çыннисем,

Сĕт-çу туса илекенсем, –
Мухтав сире, çĕр ăстисем.

Ытарайми тусăмăрсем,
Хастар, хĕрӳллĕ чĕресем,
Пахчаçăсем, хăмлаçăсем, –
Мухтав сире, çĕр ăстисем.

Ытарайми тусăмăрсем,
Ĕçе чунтан савакансем,
Çĕршыв чапне çĕклекенсем, –
Мухтав сире, çĕр ăстисем!

## ПАТĂРЬЕЛСЕМ

Кĕвви *А. Бурундуковăн*
*А. Асламас* та кĕвве хывнă

Мĕскер ĕнтĕ калар-ши сире,
Тĕлĕнетпĕр тухсан уй-хире,
Эсир пурте ĕçлетĕр хĕрсе,
Юхма ен, Патăрьел хĕрĕсем,
Пăлаçи, Патăрьел каччисем.

Кам-ха савмĕ, юратмĕ сире:
Сăн-пуçран питĕ хӳхĕм, хитре,
Эсир мар-и тырпул ăстисем,
Юхма ен, Патăрьел хĕрĕсем,
Пăлаçи, Патăрьел каччисем?

Мухтанатпăр эпир сирĕнпе,
Çĕрпе туслă, ĕçчен çынсемпе,
Эсир мар-и кăвар чĕресем,
Юхма ен, Патăрьел хĕрĕсем,
Пăлаçи, Патăрьел каччисем?

*1967*

## МАТТУР ÇЫНСЕМ, САЛАПАЙСЕМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Хулари пек çуртсем-йĕрсем,
Килсеренех сад пахчисем...
Эпир вĕсем, Салапайсем,
Мĕн авалтан маттур çынсем.

*Хушса юрламалли:*

Салам сана, тăван яла,
Ялан çĕклен эс кăмăла.
Куллен ӳсетĕн, çĕнелен,
Пире сӳнми телей пиллен.

Çапла, çĕр астисем эпир.
Пире кĕтет тăван уй-хир...
Туссем, çитсемĕр кĕркунне
Салапайсен ĕç уявне!

*Хушса юрламалли.*

Ăнса пулсан тырри-пулли
Салапайсен пӳлми тулли.
Пурăннăçем чун хĕпĕртет,
Татах аван ĕçлес килет.

*Хушса юрламалли.*

*1975*

## КАШМАШ КАЧЧИ

Кĕвви *А. Токаревăн*

Колхоз пахчи, улма пахчи,
Унта ĕçлет Кашмаш каччи,
Унта ĕçлет Кашмаш каччи –
Маттур кăна чăваш ачи.

Хăй мухтанмасть пули-пулми,
Пахчи тулли пулать улми,
Пахчи тулли пулать улми,
Турат йăтса ай ларайми.

Ун ĕçĕпе колхоз пуять,
Ăна мĕнпур ял-йыш мухтать,
Ăна мĕнпур ял-йыш мухтать,
Телейлĕ çул, вăй-хал сунать.

Колхоз пахчи, улма пахчи,
Унта ĕçлет Кашмаш каччи,
Унта ĕçлет Кашмаш каччи –
Маттур кăна чăваш ачи.

*1962*

## АСАМЛĂ ТĔНЧЕ

Саватăп эпĕ ирхине
Садри саркайăк юррине,
Мĕнле чипер, мĕнле хитре,
Çĕклет ыр туйăм чĕрене.

Васкатăп эпĕ уй-хире,
Çĕр ăстисем пурте – ĕçре.
Акаççĕ тулă, хура тул, –
Çĕршывăм, вăйлă, пуян пул!

Тухатăп эпĕ урама
Ĕçрен килсен кăштах канма.
Ташлаççĕ шурă хурăнсем,
Эпир ӳстернĕ çăкасем.

Сиксе юхаççĕ çырмасем,
Тапса тухаççĕ çăлкуçсем.
Асамлă пирĕн çут тĕнче
Мăнаçлă Атăл хĕрринче.

*1963*

## ĔÇ ÇĔКЛЕТĔР ВĂЙ-ХАЛА

Кĕвви *В. Алексеевăн*

Сывлăш уçă, тӳпе тăрă,
Пур тавралăх тап-таса.
Анлă тинĕс – уй-хир тăрăх
Юрă юхтăр шăранса.

Эпир акнă тырă-пулă
Ăнса пулнă, хумханать.
Кунта пирĕн пултарулăх
Тапса тăнăн туйăнать.

Ырă куртăр пĕтĕм халăх
Хамăр савнă Çĕршывра.
Алла-аллăн ĕçлер халĕ
Çак илемлĕ пурнăçра.

Ӳс эс, пирĕн тус-тăванлăх,
Ялкăш çутă çăлтăрла.
Улăп халăх савăнмалăх
Ĕç çĕклетĕр вăй-хала.

*1967*

## ТАВАХ СИРЕ, УЧИТЕЛЬСЕМ!

Кĕвви *А. Никитинăн*

Ытарайми çыннăмăрсем,
Асран кайми учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Мĕн ачаран ăс панишĕн,
Анне пекех юратнишĕн, –
Тайма пуç, учительсем, сире!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Нихçан манми учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Сăпай пулма вĕрентнишĕн,
Ĕçчен пулма хал панишĕн, –
Тайма пуç, учительсем, сире!

Ытарайми çыннăмăрсем,
Пире саван учительсем,
Чун-чĕререн тав тăвап сире
Мăшăр çунат пилленишĕн,
Çӳл тӳпене çĕкленишĕн, –
Тайма пуç, учительсем, сире!

*1988*

## ÇĔРШЫВ МАНМĔ

Эй, юлташăм, итле:
Тăрăшса эс ĕçле.
Пурнăçпа пыр пĕр тан,
Ан юлсам халăхран.

Халăха пар чунна,
Ху ăсна, пурнăçна.
Çĕршыв манмĕ сана –
Ĕçпе ӳснĕ çынна!

## ЁҪЧЕНЛЁХРЕ — ИЛЕМ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Ҫут ирхине ҫĕмĕртлĕхре
Юрлаççĕ кайăксем.
Мĕн чухлĕ ыр туйăм чĕрере,
Нихҫан сӳнми илем.

*Хушса юрламалли:*

Ёҫлерĕмĕр, ҫĕклерĕмĕр
Чăваш ҫыннин ятне.
Ӳркенмĕпĕр,
Ӳстерĕпĕр
Ҫĕршывăн хăватне.

Пуҫа тайса илеҫ хуллен
Шур акăш хурăнсем,
Пире кĕтсе илеҫ куллен
Тăван уйсем, хирсем.

*Хушса юрламалли.*

Этем тупать хĕрӳ ĕҫре
Хăй кĕтнĕ телейне.
Пиллет Ҫĕршывăмăр пире
Ҫĕн пурнăҫ керменне.

*Хушса юрламалли.*

*1980*

## ЭПИР, КОМБИНАТ ĔÇЧЕНĔСЕМ

Кĕвви *А. Бурундуковăн*

Комбинат çыннисем, ĕçпе ÿснĕ çынсем,
Яланах пултаруллă хĕрÿ чĕресем.
Çип арлатпăр эпир, пир тĕртетпĕр эпир...
Ыр сунсассăн пире – пырса курăр эсир.

Комбинат каччисем, комбинат пикисем,
Ăмăрту пуçаран çĕнĕ кун çутисем.
Пурнăçри телее ĕçре тупнă эпир.
Ыр сунсассăн пире – пырса курăр эсир.

Комбинатăм, санпа пĕтĕм чун-чĕререн
Мухтанать çĕрĕм-шывăм, тăван Чăваш ен!
Çĕнĕ куншăн ĕçпе кĕрешетпĕр эпир,
Ыр сунсассăн пире – пырса курăр эсир!

*1988*

## ХĔРӲ ЧĔРЕМĔР ХУШНИПЕ

Чӑн тӳпере чĕкеç вĕçсессĕн,
Хĕвел сапсассӑн шевлине,
Çӑл хĕрринче кĕтсе илсессĕн
Яш-кĕрĕм чунĕ савнине,
Пичче, инке тесе чĕнсессĕн
Каччӑсемпе хĕрсем пире –
Вӑя-хала парса ĕçлер-и,
Тӑван ял-йышӑм, эртелпе,
Асаттесен ятне çĕклер-и
Хĕрӳ чĕремĕр хушнипе!

*1984*

## ЯЛАН КУРАСЧĔ ВĔСЕНЕ

Курсах каймастпӑр хӑш чухне
Ĕçчен, сӑпайлӑ çынсене.
Килет пуласлӑх вĕсенчен –
Хĕрӳ, вĕри чĕресенчен.

Вĕсем хӑйсен чун ӑшшине,
Çунатлӑ ӑсӑн илемне
Пиллеççĕ çĕнĕ ĕмĕре,
Тӑван çĕршыв-аннемĕре.

Ялан курасчĕ вĕсене –
Ĕçчен, сӑпайлӑ çынсене.
Пуласчĕ манӑн ĕмĕрех
Çав çынсемпе пĕр ĕретрех!

*1966*

# АТТЕ-АННЕМĔРСЕНЕ ХАЛАЛЛАНĂ ЮРĂСЕМ

## ЮРАТНĂ АННЕ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Хĕвел пек хĕрӳ çыннăм, анне,
Çук санран çывăххи тĕнчере.
Эс кӳретĕн кил-çурт илемне,
Юратса ӳстеретĕн пире.
  Эй, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,
  Яланах эс çĕклен чĕрене.
  Тайма пуçăм сана, тайма пуçăм!
Çăлтăр пек çутă çыннăм, анне,
Çук санран лайăххи тĕнчере, –
Сывлăм пек таса чун хавалне,
Пурнăçна парнелетĕн пире.
  Эх, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,
  Яланах эс çĕклен чĕрене.
  Тайма пуçăм сана, тайма пуçăм!
Ылтăн пек ырă çыннăм, анне,
Çук санран кăмăлли тĕнчере.
Çĕклемешкĕн Çĕршыв хăватне
Араскал пехиллетĕн пире.
  Эх, аннеçĕм, пĕртен-пĕр анне,
  Яланах эс çĕклен чĕрене.
  Тайма пуçăм сана, тайма пуçăм!

*1978*

## АТТЕ-АННЕ ЯТНЕ ЯМАН

Эпир хӗрӳ ӗҫе тухсан
Ал-урана усса ларман,
Йывӑрлӑхран нихҫан тарман,
Кун уттинчен тӑрса юлман.
Туссем, эпир ҫапла ялан, –
Атте-анне ятне яман.

Эпир Тӑван ҫӗршыв хушсан
Хӑравҫӑсем нихҫан пулман,
Тӑшмансене пуҫа тайман,
Ҫут хӗвеле сӳнме паман.
Туссем, эпир ҫапла ялан,–
Атте-анне ятне яман.

Эпир хресчен мӗн авалтан
Ҫӗре чунтан юратнӑран,
Телейлӗ, мирлӗ халӑхран,
Этемлӗх уҫнӑ ҫӗршывран.
Туссем, эпир ҫапла ялан, –
Атте-анне ятне яман.

*1981*

## АТТЕ-АННЕ ПИРЕ СЫХЛАНӐ

Кӗвви *Ф. Лукинӑн*

Мӗн пӗчӗкрен, мӗн ачаран
Атте-анне пире сыхланӑ.
Сап-сарӑ пушӑт сӑпкаран
Ӳксе аманасран хӑранӑ.

Атте-анне пире юратнӑ,
Сиктернӗ юрӑ юрласа,

Юмах-халап ярса йăпатнă,
Йăпатнă шăпăр каласа.

Атте-анне пире пилленĕ
Вĕçмешкĕн кăйкăр çунатне,
Чун-чĕререн шанса çĕкленĕ,
Ялан вĕрентнĕ çĕр ĕçне.

Атте-анне пире ăс панă
Ята-чыса çӳлте тытма.
Ăс-хал пани ĕçре юранă,
Юранă лайăх çын пулма.

*1975*

## МĔН ÇИТЕТ АННЕНЕ

Кĕвви *Г. Моклаковăн*

Мĕн çитет аннене, мĕн çитет, –
Кунĕн-çĕрĕн пире вăл кĕтет.
Ун сăнарĕ чĕрем варринче, –
Ун пек хаклă çын çук çĕр çинче.

Мĕн çитет аннене, мĕн çитет, –
Вăл пире ырлăх-сывлăх пиллет.
Чун илемĕ, ун чапĕ унта, –
Вăл тытса пурăнать кил-çурта.

Мĕн çитет аннене, мĕн çитет, –
Ачисемшĕн ялан хĕпĕртет.
Япăх ĕçшĕн çунать, тертленет,
Ыр ята упрамашкăн хистет.

*1990*

## ЧИ ЮРАТНӐ ÇЫННӐМ, АННЕ

*З. Петрова* кӗвӗленӗ

Эх, аннеçӗм, пӗртен-пӗр анне,
Санран хаклӑ çын çук тӗнчере.
Эс çӗклетӗн чуна-чӗрене,
Ырӑ пурнӑç пиллетӗн пире.

Эх, аннеçӗм, пӗртен-пӗр анне,
Санран сывӑх çын çук тӗнчере.
Эс сыхлатӑн атте кил-çуртне,
Кунӗн-çӗрӗн çунатӑн ӗçре.

Эх, аннеçӗм, пӗртен-пӗр анне,
Санран савнӑ çын çук тӗнчере.
Эс упратӑн çемье илемне,
Пӗр самант та манмастӑн пире.

Эх, аннеçӗм, пӗртен-пӗр анне,
Çук санран сӑпай çын тӗнчере.
Çак юрра йышӑнсамччӗ пиртен, —
Эс тухмастӑн чунтан-чӗререн.

Чӑн-чӑн пысӑк телей эс пурри,
Саншӑн пултӑр чӗремӗр юрри.
Çӗнӗ юрӑ янрать сан çинчен,
Вӑл сана парне пултӑр пиртен!

*1991*

## КУÇÇУЛЬ ТӐКСА АН ЙӖР, АННЕ

Куççуль тӑкса ан йӗр, анне,
Шансам çумри ачусене, –
Эпир санпа пӗрле ялан,
Атте çуртне нихçан манман.

Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам çумри ачусене, –
Эпир килтен тухса кайман,
Асаттесен ятне яман.

Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам çумри ачусене, –
Эпир тăван ялтан тарман,
Çĕр ĕçĕнче пуçа усман.

Куççуль тăкса ан йĕр, анне,
Шансам çумри ачусене, –
Санпа пĕрле тĕнче хитре,
Вăй-хал парса усра пире.

## ТАВАХ СИРЕ, АТТЕ-АННЕ

Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире ача чухне
Юрла-юрла сиктернине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире ăс панине,
Телейлĕ çул пилленине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире вĕрентнине,
Ыр кăмăлпа ăшăтнине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

Тавах сире, атте-анне.
Эсир пире сыхланине,
Чун-чĕререн юратнине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

## АННЕ,
## ТĔНЧЕРЕ ЭС ПĔРРЕ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Эх, аннеçĕм, анне,
Тĕнчере эс пĕрре, –
Чун-чĕрӳ ăшшине
Пехиллетĕн пире.
Ачусемшĕн ялан
Канăçна çухатан.
Эпир йăнăш тусан
Кулянатăн, çунан.

Эх, аннеçĕм, анне,
Тĕнчере эс пĕрре, –
Пирĕнпе эс утан,
Çул-йĕре çутатан.
Эпир ырă пулсан,
Сан чысна упрасан
Телей тупнăн туян,
Чун-вартан савăнан.

Эх, аннеçĕм, анне,
Тĕнчере эс пĕрре, –
Вут чĕрем сӳниччен
Куç каймасть сан çинчен.
Маншăн эс чи хакли,
Маншăн эс чи кирли.
Эх, аннеçĕм, анне,
Тĕнчере эс пĕрре.

*1980*

## АТТЕ-АННЕ ÇУМНЕ ЛАРСАССĂН

Ўссе çитсен, çунат сарсассăн,
Çўле вĕçессĕн туйăнать,
Тăван анне çумне ларсассăн,
Хĕвел пек, чунăм ăшăнать.

Çурхи кунсем йăл-йăл кулсассăн
Уйра янрать тăри сасси.
Тăван атте пĕрле пулсассăн
Ăнса пырать суха касси.

Илем кўрсе çўретĕр пăчăр
Кĕрхи вăрман уçланкинче.
Тус-тантăшсем, нихçан ан хуçăр
Атте-аннемĕр кăмăлне.

*1985*

## АСАТТЕСЕН ЮРРИСЕНЕ

Асаттесен юррисене,
Ача чухнех илтнисене,
Эпир манмастпăр ĕмĕрне, –
Вĕсем çĕклеççĕ чĕрене.
Пуçлар-и, хаклă тăвансем,
Ытарайми тус-тантăшсем,
Асаттесен юррисене,
Ача чухне илтнисене.

Асаттесен юррисене,
Асăмăрта юлнисене,
Савса пиллер-и вĕсене
Мĕнпур килес ăрусене.
Пуçлар-и, хаклă тăвансем,
Ытарайми тус-тантăшсем,
Асаттесен юррисене,
Асăмăрта юлнисене.

6 — Заказ № К-1127

## АСТУМАСТĂП АТТЕНЕ...

*Кĕвви Г. Моклаковăн*

Эп астумастăп аттене...
Атте, атте...
Анчах манмастăп ун ĕçне:
Усал хаяр тăшмансене
Çапăçура аркатнине...
Шел, астумастăп аттене,
Вăл вилнĕ вăрçă хирĕнче,
Ун ячĕ – халăх асĕнче.

Эп астумастăп аттене...
Атте, атте...
Сыхларăн эс ачусене...
Анне сана çаплах кĕтет,
Вăл çухалман, килет вăл тет.
Шел, астумастăп аттене,
Вăл вилнĕ вăрçă хирĕнче,
Ун ячĕ – халăх асĕнче.

Эп астумастăп аттене...
Атте, атте...
Тăван çĕршыв – тăван анне –
Хăйĕн чăн улăп-паттăрне
Хисеплĕ, манмĕ ĕмĕрне.
Шел, астумастăп аттене,
Вăл вилнĕ вăрçă хирĕнче,
Ун ячĕ – халăх асĕнче.

*1970*

## САХАЛ-И КУЛЯНТАРНĂ

Сахал-и эпĕ аннене
Кулянтарнă,
Мĕн чухлĕ унăн чĕрине
Ыраттарнă?
Сахал-и йывăр кун килсен
Анне çуннă?
Ĕшеннĕ мăшăр куçĕнче
Куççуль юхнă.
Сахал-и эпĕ чирлесен
Анне ларнă?
Мана çăласшăн пĕр-пĕччен
Хураллană...
...Аса илсессĕн çаксене
Ӳкĕнетĕп,
Пăхса пулмарĕ аннене
Хăй пек тетĕп.

## КАÇАР, АННЕ

Каçар, анне, час-час çырмарăм,
Ан кӳренсем, ан ӳпкеле.
Сан умăнта сахал-и парăм,
Хăçан татса пĕтермелле!

Каçар, анне,чунри çунатăм,
Сисетĕп эп, тек ан пытар –
Çыру çук чух хыпса çунатăн,
Пăшăрханса кĕтен хыпар.

Аннеçĕм, эс мана ăсатрăн
Инçе çула, çĕн хулана.
Ху ачуна асран ямарăн,
Эп этем мар мансан сана!

## ĂÇТА-ШИ ЭС, КУККУК-АННЕ

Ăçта-ши эс, куккук-анне,
Касса çӳретĕн тĕнчене?
Аса илен-ши эс мана,
Пĕртен-пĕр айăпсăр чунна?
Пăрахрăн эсĕ ачуна!
Ăçта-ши эс, куккук-анне?

Ăçта-ши эс, куккук-анне?
Туян-ши эпĕ çуннине,
Куççуль тăкса макăрнине,
Сана кĕтсе ывăннине.
Пăрахрăн эсĕ чĕппӳне!
Ăçта-ши эс, куккук-анне?

Ăçта-ши эс, куккук-анне,
Туян-ши халĕ ху камне?
Çухатрăн эсĕ çын чысне!
Чунтан тавах ыр çынсене,
Вĕсем усраççĕ пепкӳне.
Ăçта-ши эс, куккук-анне?!

*1993*

## ÇУК ÇАВ ХАКЛИ АННЕРЕН

Эпир пурте пĕр тĕпрен –
Санран, тăван аннерен.
Эпир ĕçчен çитĕнсен
Эс çав тери хĕпĕртен.

Тăванăмсем, тĕнчере
Мĕн пур хакли аннерен?
Вăл çут çăлтăр – сăнĕпе,
Вăл çут хĕвел – чунĕпе.

*1980*

# ТУС-ТĂВАНЛĂХ ЮРРИСЕМ

## ТĂВАНСЕМĔР, ТАВ СИРЕ

Халăх юрри тăрăх кĕввине
*А. Токарев* йĕркеленĕ

Тăвансемĕр, пĕрле чухне
Ай юрлар-и юррине?
Эсир пире хăна турăр, –
Каяс пулать, сыв пулăр.

*Хушса юрламалли:*

Ай, ытарма та çук сире,
Чунтан саватăр пире,
Ай усратăр ялан чĕрере.

Тăвансемĕр, тавах сире,
Туслăх пытăр ĕмĕре.
Кĕрекĕрсем тулли пулччăр,
Ватти-вĕтти ыр куртăр.

*Хушса юрламалли.*

Тăвансемĕр, ĕç пуçтарсан,
Кĕрхи кунсем пуçлансан
Пире хисеп-чыс тусамăр,
Пырса курма ан манăр.

*Хушса юрламалли.*

*1961*

## МĔН КАЛАМ-ШИ СИРЕ, ТĂВАНСЕМ!

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

Мĕн калам-ши сире, тăвансем, мĕн калам-ши,
Чун-чĕрем хушнипе хăш юрра эп пуçлам-ши?
Кĕр çитсен пĕрмаях çакăн пек тĕл пулар-и,
Пĕр-пĕрне хĕвел пек ăшăтса пурăнар-и?

Мĕн калам-ши сире, тăвансем, мĕн калам-ши,
Чун-чĕрем хушнипе ыр сунса тав тăвам-и?
Тăвансемĕр, пĕрле ĕçлĕ куншăн çунар-и,
Çулти çут çăлтăр пек ĕмĕте пурнăçлар-и?

Мĕн калам-ши сире, тăвансем, мĕн калам-ши,
Пултаруллăн, кал-кал малалла эп утам-и?
Тăвансемĕр, пĕрле пур йышпа тăрăшар-и,
Çĕрĕм-шывăм, сана юратса пуç таяр-и?

*1976*

## ĔМĔР ПĔРЛЕ

Çĕр-планета, çĕршыв, пĕтĕм халăх кĕтет,
Пуç тайса йышăнать мирпе туслăх çулне,
Сас парать, вăрçа хирĕç тăрать, çĕкленет –
Сÿнтерме юрамасть çут тĕнче хĕвелне!

Çĕнĕ çулăм, ан яр ирĕке, тытса чар
Вутпала ашкăнан, иртĕхен çынсене.
Тĕнчери халăхсем, пурте çирĕп тăрар –
Курас марччĕ текех хаяр вăрçă кунне!

Тулли пултăр сĕтел çăкăрпа-тăварпа,
Алă паччăр çынсем ыр сунса пĕр-пĕрне.

Эпир ĕмĕр пĕрле, Çĕрĕм-шывăм, санпа –
Вăй парса эс çĕклетĕн чуна-чĕрене.

Заводра, уй-хирте... Хĕрӳ пурнăç, кĕрле!
Тус-тăванлăх ялан тытса тăтăр пире.
Çĕнĕ çулăм, килех, иртсем эс тĕпеле –
Эпир тивĕç пĕрле сыхламашкăн мире!

## ĂСАТСА ЯР, ТĂВАН

*Халăх юрри майлă*

Кĕвви *Г. Максимовăн*

Ута уттарам-ши, чуптарам-ши
Уй-хир, вăрман хыçа ай юличчен.
Юррăма юрлам-ши, калаçам-ши
Çак ыр килтен тухса ай кайиччен.

Авăтать-ши куккук, авăтмасть-ши
Çăка çулçи çилпе ай хумхансан,
Хурланать-ши тăван, хурланмасть-ши
Эпир киле кайма ай шутласан.

Шăнкăр кăна шăнкăр çырма юхать
Çурхи ăшă кунпа ай савăнса.
Ĕнтĕ тăван юрлать, тăван юрлать
Пире чунтан-вартан ай юратса.

Ăсатса яр, тăван, ăсатса яр,
Хаяр симпыл пуçа ай кайиччен.
Çул куркине тытса аллуна пар, –
Чипер юлсам тепре ай куриччен.

*1970*

## САС ПАРАКАН ПУЛМАРĔ

Кĕвви *В. Адюковăн*

Ял хушшине кĕтĕм те
Ачалăха шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ, –
Çав териех хурлантăм.
Ах, ял-йышăм, ял-йышăм,
Мана манса кайрăр-шим,
Ах, ял-йышăм, ял-йышăм,
Эп кунти çын пулман-шим?

Кил хушшине кĕтĕм те,
Атте, сана шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ, –
Çав териех хурлантăм.
Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Мана манса кайрăн-шим,
Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Эп сан ачу пулман-шим?

Пӳрт алăкне уçрăм та,
Анне, сана шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ, –
Çав териех хурлантăм.
Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Мана манса кайрăн-шим,
Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Эп сан чуну пулман-шим?

Лупас айне кĕтĕм те
Тур лашана шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ, –
Çав териех хурлантăм.
Ах, тур лашам, тур лашам,

Мана манса кайрăн-шим,
Ах, тур лашам, тур лашам,
Эп выртмара пулман-шим?

Каç чаршавне карчĕ те,
Вăйă тĕлне шырарăм.
Сас паракан пулмарĕ, –
Çав териех хурлантăм.
Ах, яш-кĕрĕм, яш-кĕрĕм,
Мана манса кайрăр-шим,
Ах, яш-кĕрĕм, яш-кĕрĕм,
Эп çамрăк çын пулман-шим?

*1992*

## СĂРЛĂ АЛĂК ЯРИ УÇĂЛАТЬ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Кĕрхи кун ылтăн пек çуталсан,
Уй-хирти ĕçсене пуçтарсан
Сăрлă алăк яри уçăлать,
Чунтан кĕтнĕ тăван курăнать.

Пĕр-пĕрне хĕвел пек ăшăтсан,
Пĕр-пĕрне юратса пуç тайсан
Сăрлă алăк яри уçăлать,
Чунтан кĕтнĕ тăван курăнать.

Çĕнĕ çăкăр шăрши сарăлсан,
Кил-çуртра килĕшӳлĕх пулсан
Сăрлă алăк яри уçăлать,
Чунтан кĕтнĕ тăван курăнать.

*1980*

## АЙ, МĂНТАРĂН ТĂВАНСЕМ

Ай, мăнтарăн тăвансем,
Йăмăксемпе шăллăмсем,
Манас марччĕ ĕмĕрне
Атте-анне кил-çуртне.

Ай, мăнтарăн тăвансем,
Аппасемпе пиччесем,
Хисеплесе килнĕрен
Тавах сире чĕререн.

Ай, мăнтарăн тăвансем,
Хăтасемпе тăхлачсем,
Пурăнатпăр çĕр çинче
Тертпе савнăç хушшинче.

Ай, мăнтарăн тăвансем,
Чуна çывăх çыннăмсем,
Манас марччĕ ĕмĕрне
Асаттесен пиллĕхне.

*1992*

## ЛАРТАЯСЧĔ АТТЕ КĔРЕКИНЕ

Пире ăшă салам яракана,
Ырлăх-сывлăх, телей сунакана
Лартаясчĕ атте кĕрекине,
Парнелесчĕ чĕре юррине.

Пире пурнăç, вăй-хал пиллекене,
Чăваш халăх ятне çĕклекене
Лартаясчĕ атте кĕрекине,
Парнелесчĕ чĕре юррине.

Пире çӑкӑр-тӑвар паракана,
Чун-вартан юратса тӑракана
Лартаясчӗ атте кӗрекине,
Парнелесчӗ чӗре юррине.

*1991*

## ӐÇТАН ПӖЛНӖ ЭС ПУЛМА

Кӗвви *Ф.Лукинӑн*

Тӑван манмасть тӑвана,
Юри килтӗм хӑнана.
Кӗтсех тӑнӑ эс мана,
Тавах çӑкӑр-тӑварна!

Ӑçтан пӗлнӗ эс пулма,
Тӑван, ларсам ман çума.
Юри килтӗм калаçма,
Юри килтӗм юрлама.

Тӗплӗн, лайӑх шутласан,
Мӗн пур хакли тӑванран?
Çакна туйса эс тӑран,
Ху та çырлан курӑнан.

Вӑхӑт çитрӗ пуль кайма,
Тӑван, ан тух ӑсатма.
Пӗрре çурту пушанать,
Тепре чуну хурланать.

Тӑван манмасть тӑвана,
Юри килтӗм хӑнана.
Кӗтнӗ иккен эс мана,
Тавах çӑкӑр-тӑварна!

*1960*

## ВĔРЕНСЕ ЮЛ, ТĂВАН, ЮРРĂМА

Кĕвви *Г. Максимовăн*
*М. Шуракăш* та кĕвĕленĕ

Килĕшет ак çапла пурăнни:
Час-часах тĕл пулса калаçни,
Кĕрекемĕр чысне упрани,
Пĕр-пĕрне чĕререн юратни.
Çав çĕклет, хал парать чунăма, –
Вĕренсе юл, тăван, юррăма.

Килĕшет ак çапла пурăнни:
Кашниех хĕрӳ ĕçшĕн çунни,
Халăхра яланах маттурри,
Кил-çуртра тараватлăх пурри.
Çав çĕклет, хал парать чунăма, –
Вĕренсе юл, тăван, юррăма.

Килĕшет ак çапла пурăнни:
Ял-йыша ĕмĕрех пуç тайни,
Телейпе пултарулăх сунни,
Çĕр-аннешĕн пĕрле тăрăшни.
Çав çĕклет, хал парать чунăма, –
Вĕренсе юл, тăван, юррăма.

*1960*

## СИРĔНПЕ ТĔЛ ПУЛСА КАЛАÇСАН

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

*Ю.Н., Г.Я.Хлебниковсене*

«Ыр çынтан ыр çынах çуралать»,—
Тенĕ халăх ĕлĕк-авалтан.
Çакă чăнлăх мана хал парать
Сирĕнпе тĕл пулса калаçсан.

Шухӑш-кӑмӑл ҫаплах ӑшӑнать
Эсир харсӑр, ӗҫчен пулнӑран.
Тӑвана курнӑнах туйӑнать
Сирӗнпе тӗл пулса калаҫсан.

Ҫут тӗнчемӗр хитрен курӑнать
Пирӗн туслӑх ӳссе пынӑран.
Ӑна чунӑм сисет, ӑнланать
Сирӗнпе тӗл пулса калаҫсан.

*1985*

## ТӐВАН ПИРЕ МАНМАН-ШИ...

*Халӑх юрри майлӑ*

Тӑван пире манман-ши,
Килме ҫула тухман-ши?
Чӳречерен пӑхатпӑр,
Хапха уҫса тӑратпӑр.

Тӑван пире манман-ши,
Хыпар-хӑнар пыман-ши?
Чӳречерен пӑхатпӑр,
Куҫ пек кӗтсе тӑратпӑр.

Тӑван ҫук чух юрать-ши,
Пичке уҫма пулать-ши?
Чӳречерен пӑхатпӑр,
Ҫаплах кӗтсе тӑратпӑр.

Тӑван ҫакна туять-ши,
Кунта ҫитме васкать-ши?
Чӳречерен пӑхатпӑр,
Чунтан кӗтсе тӑратпӑр.

*1969*

## ПИРЕ ТĂВАН КĔТСЕ ТĂРАТЬ

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

Пире тăван кĕтсе тăрать,
Пÿрт алăкне уçса хурать.
Ыр ут юртать, пуçне ухать,
Çулне кĕске тума васкать.

Пире тăван кĕтсе тăрать,
Сакки çинче сăра ларать.
Сĕтел çинче кукар яшки.
Улми-çырли чашки-чашки.

Пире тăван кĕтсе тăрать,
Çитеймесрен чунтан хăрать.
Ыр ут юртать, пуçне ухать,
Хăта килне çитме васкать.

*1971*

## ТĂВАН КĔРЕКИНЧЕ*

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Юрлас килет, тăванăмсем,
Сире курсан, пĕрле пулсан,
Сĕтелĕрсем, кĕрекĕрсем
Ялан çапла тулли тăрсан.

Ташлас килет, тăванăмсем,
Хут купăса тăсса ярсан,
Ытарма çук кăмăлăрсем
Хăна-йышпа тараватран.

---

* Ку сăвва Петĕр Эреветпе пĕрле çырнă.

Ӳпкевӗм ҫук, тӑванӑмсем,
Эсир пире сума сусан,
Юлаҫ калас сӑмахӑмсем
Киле кайма пуҫтарӑнсан.

Чун савӑнать, тӑванӑмсем,
Куҫ умӗнче эсир пулсан.
Мӑшӑр ҫунат хушать чӗрем
Ӗмӗр пӗрле пурӑннӑран.

*1973*

## СЛАКПУҪ ҪЫННИСЕМ

Кӗвви *А. Орлов-Шуҫӑмӑн*

Чунтан савнӑ Слакпуҫ хӗрӗсем,
Хӗвел сӑнлӑ хальхи Нарсписем.
Эсир мар-и Силпи ҫутисем,
Чи хӗрӳллӗ ӗҫре малтисем!

Ҫӗнӗ пурнӑҫ вӗрет Пушкӑртра,
Мӗн чул ырлӑх, илем — туслӑхра!
Тӑвансемӗр, Слакпуҫ ҫыннисем,
Пӗрле пирӗн хӗрӳ чӗресем.

Илӗртӳллӗ Слакпуҫ каччисем,
Хӗрӳ чунлӑ хальхи Сетнерсем.
Эсир мар-и ҫӗрпе туслисем,
Пултаруллӑ тырпул ӑстисем!

Пире сывӑх Слакпуҫ ҫыннисем,
Кӗҫтенттин пек маттур чӑвашсем.
Ыр сунатпӑр сире чӗререн, –
Ӗҫӗр пытӑр ӑнса ҫулсерен!

*1980*

## МĂШĂРĂМА

*Марье мăшăрăма*

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*
*Ф. Лукин* та кĕвĕленĕ

Сана ырă кăмăлушăн
Тав тăватăп чун-вартан.
Килĕм-çуртăм йăлтах пушă
Унта эсĕ çук пулсан.

Кунĕн-çĕрĕн тăрмашатăн,
Ачасемшĕн эс çунан,
Кайăк евĕр савăнатăн
Вĕсем лайăх пурăнсан.

Çутă çăлтăр эсĕ маншăн,
Тăран куçăм умĕнче.
Тайма пуçăм ютшăнманшăн
Йывăр килнĕ кунсенче.

Эпир вăрăм çула тухнă,
Ĕçпе ўснĕ ачаран.
Килĕшўллĕн пĕрле утнă, –
Хакли мĕн пур çакăнтан!

*1984*

## ТĂВАН, САНПА ТĔЛ ПУЛСАН

Тăван, санпа тĕл пулсан,
Чуна уçса калаçсан
Хуйхă-суйхă çухалать,
Кăмăл тулнăн туйăнать.

Тăван, санпа тĕл пулсан,
Чуна уçса калаçсан
Кун илемлĕн курăнать,
Хĕвел тухнăн туйăнать.

Тăван, санпа тĕл пулсан,
Чуна уçса калаçсан
Килĕм-çуртăм çуталать,
Çунат хушнăн туйăнать.

*1995*

## ПĔРЛЕ ЧУХ САВĂНАР

Эй, хăтаçăм, хăта,
Ан васка-ха, тăхта, –
Тĕл пулатпăр сайра.
Эпир халь хăнара!
Лар çума – калаçар,
Пĕрле чух савăнар.

Эй, хăтаçăм, хăта,
Илем кӳтĕн çурта.
Тайма пуçăм сана,
Манăçми тăвана!
Лар çума, калаçар,
Пĕрле чух савăнар.

Эй, хăтаçăм, хăта,
Мĕн калам-ши тата?
Тыт тулли куркана, –
Ыр сунатăп сана!
Лар çума, калаçар, –
Пĕрле чух савăнар!

*1993*

## ЁМЁР ПЁРЛЕ ПУРНАР-И

Ытарайми тăвансем,
Асран кайми ял-йышсем,
Пĕрле чухне савăнар,
Килĕштерсе пурăнар!

*Хушса юрламалли:*

Мĕн чул илем таврара,
Эпир кунта хăнара
Атте-анне килĕнче,
Тăван ял-йыш умĕнче.

Ай, мăнтарăн тăвансем,
Пĕтĕм пĕлĕш-тантăшсем,
Пурăнатпăр çĕр çинче
Тертпе савнăç хушшинче.

*Хушса юрламалли.*

Вылять çăлтăр тӳпере,
Илем пур çав пĕрлĕхре.
Чун савăнать, хĕпĕртет,
Шухăш-кăмăл çĕкленет!

*Хушса юрламалли.*

*1991*

## МĔН АВАН, ТĂВАНĂМ, МĔН АВАН...

Эх, тăванăм, тăван,
Пурнăçра мĕн аван?
Эп сана юратни,
Эс мана ыр сунни, –
Çав аван, тăванăм, çав аван.

Эх, тăванăм, тăван,
Пурнăçра мĕн аван?
Пирте çынлăх пурри,
Туслăха упрани, –
Çав аван, тăванăм, çав аван.

Эх, тăванăм, тăван,
Пурнăçра мĕн аван?
Çăлтăр пек çутални,
Таса чунлă пулни, –
Çав аван, тăванăм, çав аван.

Эх, тăванăм, тăван,
Пурнăçра мĕн аван?
Халăха пуç тайни,
Çĕршыва юратни, –
Çав аван, тăванăм, çав аван!

*1995*

# МӖНЛЕ ПУРӐНАН, АЯКРИ ТӐВАН

Кӗвви *А. Андреевӑн*

Çуркунне çитет,
Кайӑк хур килет.
Куç тулли илем
Тыткӑна илет.

*Хушса юрламалли:*

Чӗрӗлет вӑрман,
Ешерет çаран.
Мӗнле пурӑнан,
Аякри тӑван?

Тӑвана тӑван
Тараваt ялан.
Килсем хӑнана,
Кӗтетпӗр сана.

*Хушса юрламалли.*

Эс пире чунтан
Хисеплен пулсан
Мӗн пур-ши унтан
Хакли, тус-тӑван.

*Хушса юрламалли.*

*1970*

## ТĂВАНЛĂХ ЮРРИ

Кĕвви *А. Никитинăн*

Тăвансемĕр, савнар-и пĕрле,
Кĕрекемĕр, илемлĕн кĕрле.
Пирĕн çăлтăр çӳлте тӳпере,
Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре.

*Хушса юрламалли:*

Эй, тăвансем, тăвансем,
Мĕн каласа юрлам-ши?
Тытса тăтăр ĕмĕрех
Тăванлăх пире.

Ваттисен пиллĕхне манас мар,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнар.
Пĕр-пĕрне юратса ыр сунар,
Пĕр-пĕрне юратса ал парар.

*Хушса юрламалли.*

Эпир хамăр тăван килĕнче,
Кӳлнĕ утăм йăмра çумĕнче.
Ирĕк парăр чунтан тав тума,
Вăхăт çитрĕ сиртен уйрăлма.

*Хушса юрламалли.*

## ЭПĔ ПАТĂМ СИРЕ ЮРЛАСА

Пĕрчĕн-пĕрчĕн сăмах суйласа
Эп парам-ха сире юрласа.
Таталмастăр çăкăр-тăвартан, –
Хăналарăр, тавах чун-вартан!

Каймалла: çул курки аллăмра,
Уçăрсам вырăсла хапхăра.
Эп кÿлетĕп çÿрен утăма,
Пит йывăр сиртен уйрăлма.

Пĕрчĕн-пĕрчĕн сăмах суйласа
Эпĕ патăм сире юрласа.
Тăвансем пыл та çу пулнăран
Ман тухассăм килмест çак çуртран.

*1974*

## ТУСЛĂХРА ХУÇАЛАНТĂР ИЛЕМ

Кĕвви *А. Никитинăн*

Çав çĕклет кĕрекемĕр чысне, –
Мĕнле хÿхĕм чăваш юррисем!
Пуç таяр-и, тăван, пĕр-пĕрне,
Туслăхра хуçалантăр илем!

Пирĕн çăлтăр çÿлте, тÿпере,
Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре.
Савăнар-ха, тăван, савăнар,
Ĕмĕрех туслăхра пурăнар!

Тус-тăванăм, упрар çынлăха,
Пуç таяр-и тăван халăха.
Пирĕн юрă çĕклетĕр чуна,
Саламлатăр хĕвеллĕ куна!

Пирĕн çăлтăр çÿлте, тÿпере,
Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре.
Савăнар-ха, тăван, савăнар,
Ĕмĕрех туслăхра пурăнар!

*1993*

## ТĂВАН ЮРЛАТЬ, КУÇРАН ПĂХАТЬ...

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Тăван юрлать, юрлать, куçран пăхать,
Хăйне хисеп тунишĕн савăнать.
Ай-хай аван çапла пĕрле пулсан,
Тулли сĕтел пире кĕтсе тăрсан.

Тăван юрлать, юрлать, куçран пăхать,
Эпир çĕрпе туслишĕн савăнать.
Ай-хай аван çапла пире шансан,
Çуллен сума суса килсе курсан.

Тăван юрлать, юрлать, куçран пăхать,
Ача-пăча пурришĕн савăнать.
Ай-хай аван çапла пуян пулсан,
Асаттесен ятне çӳлте тытсан.

Тăван юрлать, юрлать, куçран пăхать,
Эпир хастар пулнишĕн савăнать.
Ай-хай аван çапла маттур пулсан,
Хĕрӳ ĕçре ялан мала тухсан.

*1970*

## МĔН ПУР-ШИ ВĂЛ ХАКЛИ ТĂВАНРАН

Килнĕ мар-и эпир аякран
Атте килĕ чуна çывăхран.
Каяс умĕн ларса шутласан, –
Мĕн пур-ши вăл хакли тăванран?
Ирĕк парăр пире пуç тайма,
Питĕ йывăр сиртен уйрăлма.

Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнсан,
Пĕр-пĕрне чун-вартан юратсан,

Кил-ҫуртра килӗшӳлӗх пулсан, –
Мӗн пур-ши вӑл хакли тӑванран?
Ирӗк парӑр пире пуҫ тайма,
Питӗ йывӑр сиртен уйрӑлма.

Ак ҫапла тӑтӑшах тӗл пулсан,
Хамӑр чыслӑ ята упрасан,
Ырӑ куншӑн ҫунса пурӑнсан, –
Мӗн пур-ши вӑл хакли тӑванран?
Ирӗк парӑр пире пуҫ тайма,
Питӗ йывӑр сиртен уйрӑлма.

*1988*

## КӖРЕКЕ ЮРРИ

Кӗвви *Н. Эривановӑн*

Кӗр кунӗ ҫитсен килетпӗр юри,
Пуҫлатпӑр пӗрле тӑванлӑх юрри.

*Хушса юрламалли:*

Ыр пурнӑҫ, телей
Сунатпӑр сире.
Ҡаятпӑр киле,
Ӑсатӑр пире.

Кил-ҫуртӑр таса, сӗтелӗр – тулли,
Мӗн тумӗ ялти ӗҫчен ҫын алли.

*Хушса юрламалли.*

Тӑванлӑх юрри ҫӗклетӗр чуна,
Манас ҫук эпир нихҫан ҫак куна.

*Хушса юрламалли.*

*1960*

# АЙ-ХАЙ, САВНĂ ЯЛ-ЙЫШСЕМ

*З. Петрова кĕвĕленĕ*

Куçăм-куçăм куç тулли
Тăван ял-йыш тырпулли,
Сар ылтăнăн курăнан
Ăнса лайăх пулнăран.

*Хушса юрламалли:*

Ай-хай, савнă ял-йышсем,
Ытарайми тусăмсем...
Тăван ялта ĕç вĕрет,
Уншăн чунăм хĕпĕртет.

Юррăм-юррăм, ĕç юрри,
Кунта килтĕм эп юри
Уй-хирĕме пуç тайма,
Йышпа тырпул пуçтарма.

*Хушса юрламалли.*

Чунăм-чунăм чун уççи,
Эпир хамăр ун хуçи, –
Çĕр ăстисем, ĕçченсем,
Хастар, çулăм чĕресем.

*Хушса юрламалли.*

Ялăм-ялăм, тăван ял,
Санра мĕн чул çĕн вăй-хал, –
Чун-чĕререн савнăран
Эс каймастăн асăмран.

*Хушса юрламалли.*

*1975*

## ТЕЛЕЙЛĔ МĂШĂР

*Такмаксем*

Старик:

Кĕрхи çутă уявра
Чыс куртăмăр хăнара.
Атя, карчăк, тумланар,
Тăвансене тав тăвар!

Карчăк:

Сăрлă хапха уçăлать,
Пăртак кăмăл хуçăлать, –
Йывăр пире каясси,
Çак кил-çуртран тухасси.

Старик:

Килĕштерсе пурăнни,
Пĕр-пĕринпе курнăçни
Çĕклет мар-и кăмăла,
Çĕклет мар-и вăй-хала.

Карчăк:

Эпир пулман çын кулли, –
Ача-пăча пӳрт тулли.
Ĕçлеç пурте тăрăшса,
Çанăсене тавăрса.

Старик:

Манман эпĕ иртнине,
Эсĕ маншăн çуннине,
Тем те пулнă пурнăçра, –
Ан ил, карчăк, йывăра.

Карчăк:

Ĕмĕр сакки сарлака,
Çул-йĕр пулмасть яп-яка.
Старик, мана ан ятла,
Эп ямарăм сан ятна.

Старик:

Çĕре чунтан юратни,
Мĕн пур унтан аванни!
Çакна, карчăк, манас мар,
Ĕç айккинче тăрас мар.

Карчăк:

Ан тиркесем эс çакна –
Кўлнĕ кăвак лашана.
Атя, старик, çума лар,
Кил еннелле çул тытар.

Старик:

Карчăк, карчăк, карчамас,
Чунтан тата мĕн калас? –
Эпир халĕ пит хавас –
Пĕрле ĕмĕр пурăнас.

*1982*

## МАНА ХЫТĂ АН КАЛА

Кĕвви *В. Ходяшевăн*

Мана хытă ан кала,
Вăл аван мар япала.
Ялан начар шутлани,
Пĕр айăпсăр ятлани
Çапса хуçать кăмăла, –
Мана хытă ан кала.

Мана хытă ан кала,
Пирте çынлăх пулмалла.
Пĕрне-пĕри юратни,
Чунтан шанса пурăнни
Çунат парать вăй-хала, –
Мана хытă ан кала.

Мана хытă ан кала...
Чун савниçĕм, санпала
Пĕрле çула тухмалла,
Пĕрле пурнăç тумалла,
Пĕрле йăлтах чăтмалла, –
Мана хытă ан кала.

*1970*

## ИРТЕТ ĔМĔР, ИРТЕТ

Иртет ĕмĕр, иртет,
Çитет ватлăх, çитет.
Тăвансем, пĕрле чух,
Пуçра сывлăх пур чух
Час-часах тĕл пулар,
Пур йышпа савăнар.

Иртет ĕмĕр, иртет,
Кайма вăхăт çитет.

Тӑвансем, пӗрле чух,
Чунта шанчӑк пур чух
Пӗр-пӗрне ыр сунар,
Туслӑхра пурӑнар.

Иртет ӗмӗр, иртет,
Чун туять, чун сисет.
Тӑвансем, пӗрле чух,
Пирте ҫынлӑх пур чух
Пӗр-пӗрне юратар,
Хӗвел пек ӑшӑтар!

*1993*

## ЭП ВУНУЛТӐ ҪУЛТА

Кирлех мар хурлама,
Кирлех мар ятлама:
Ҫутӑ ӗмӗт чунта, –
Эп вунултӑ ҫулта.

Ыррине упраса,
Ҫӗннине шыраса
Кӗме хатӗр вута, –
Эп вунултӑ ҫулта.

Мӗнпур тус-юлташпа,
Мӗнпур ҫамрӑк йышпа
Ӗҫре харсӑр, малта, –
Эп вунултӑ ҫулта.

Тав, аннеҫӗм, сана,
Ҫунат патӑн мана.
Пур телейӗм кунта, –
Эп вунултӑ ҫулта!

*1979*

## АЙ-ХАЙ ЛАШИ ХУРА ТУР

Кĕвви *Г.Лебедевăн*
*А.Сергеев* та кĕвве хывнă

Ай-хай лаши хура тур,
Юртать,чупать пит маттур.
Ăçтан ăна хурлама -
Илем кӳрет урама.

Ай-хай лаши хура тур,
Тус-тăванăм, ларса кур.
Чупар пĕрле катаччи,
Тыт тилхепе, ял каччи.

Ай-хай лаши хура тур,
Çамки çинче çăлтăр пур -
Пуçне ухса, ташласа
Кĕтет çула тухасса.

Ай-хай лаши хура тур,
Кая ан юл, хур ан кур.
Паян пирĕн санпала
Каллех çула тухмалла.

*1960*

## АТЬĂР ХАЛĂХ УЯВНЕ

Пĕрле атьăр, тантăшсем,
Асран кайми тусăмсем,
Сар хĕвеллĕ ĕшнене,
Тăван халăх уявне,
Ай-яй-яй,
Тăван халăх уявне.

Шăрантарăр, тантăшсем,
Асран кайми тусăмсем,
Тăван халăх юррине
Савса ҫĕршыв-аннене.
Ай-яй-яй,
Савса ҫĕршыв-аннене.

Чун-чĕрери тантăшсем,
Асран кайми тусăмсем,
Ан сӳнтерĕр ĕмĕрне
Юратăван хĕлхемне.
Ай-яй-яй,
Юратăван хĕлхемне.

*1966*

## ҪĔНĔ ҪУРТ ПАРНИ

Кĕвви *П. Романовăн*

Ҫĕн ҫурт валли парне илсен,
Хăта-тăхлач патне килсен –
Мĕн чул илем кĕрекере,
Ыр туйăм пирĕн чĕрере.

Хăта-тăхлач, тавах сире,
Упрарăр хăвăр ҫурт-йĕре,
Эсир ямарăр ҫын ҫине
Асаттесен чысне-ятне.

Хăта-тăхлач, чунтан калас,
Эпир кунта килме хавас.
Ҫĕн ҫуртăр лартăр ҫуталса,
Шур акăш пек ҫунат сарса.

*1990*

## ХĔВЕЛЛĔ КУН ÇИМĔКРЕ

Хĕвеллĕ кун çимĕкре
Чĕкеç вĕçет тӳпере.
Эпир атте килĕнче
Çавра сĕтел хушшинче.

*Хушса юрламалли:*

Ытарайми тăвансем,
Пуçра сывлăх пур чухне
Савăнайса юлар-и,
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и!

Манас марччĕ ĕмĕрне
Атте-анне пиллĕхне.
Упрар пурнăç илемне,
Тус-тăванлăх пĕрлĕхне.

*Хушса юрламалли.*

Çу илемĕ таврара,
Эпир кунта хăнара,
Пĕрле пĕтĕм тус-йышпа
Савăнатпăр юрăпа.

*Хушса юрламалли.*

*1993*

## МЁНРЕН НАЧАР...

– Эпир Ҫӗньял пикисем –
Садри сарӑ кайӑксем,
Чипер пирӗн юрӑсем,
Илтетӗр-и, каччӑсем?

– Ан мухтанӑр, пикесем,
Мӗнрен начар каччисем.
Эпир ташӑ ӑстисем,
Хӗрӳ ҫулӑм чӗресем!

– Эпир Ҫӗньял пикисем –
Ҫуркуннехи чечексем,
Хӗвел сӑнлӑ ӗҫченсем,
Куратӑр-и, каччӑсем?

– Ан мухтанӑр, пикесем,
Мӗнрен начар каччисем.
Эпир мар-и паттӑрсем,
Вӑйлӑ тырпул ӑстисем!

– Эпир Ҫӗньял пикисем –
Пиҫсе ҫитнӗ ҫырласем.
Эсир мар-и айвансем,
Мӗн кӗтетӗр, каччӑсем?

– Ан мухтанӑр, пикесем,
Мӗнрен начар каччӑрсем.
Ылтӑн тумлӑ кӗр ҫитсен
Туй тума та вӑхӑт, тен!

*1975*

## ĂÇТА КАЯН, АЧАМ?

*Кĕвви А. Никитинăн*

Ăçта каян, ачам, ăçта каян? –
Шухăшласа çаплах пуçна таян.
Сана тăван уй-хир пăхса юлать,
Çав териех, хытах пăшăрханать.

Ăçта каян, ачам, ăçта каян? –
Чуну вутпа çунать, хăвах туян.
Тăван кил-çуртăнтан тухса таран,
Яла-йыша хытах кулянтаран.

Ăçта каян, ачам, ăçта каян? –
Шухăшласа çаплах пуçна таян.
Аçу-аннӳ çине пăхса илсем, –
Куççуль тăкса юлаççĕ ват çынсем.

Ан кай, ачам, тăван ялтан ан тар, –
Пире мансан кураймăн пархатар.
Çĕр-аннене чунтан сума сусан
Ху телейне кунтах, килтех, тупан.

*1988*

## ХĂНАРА

Кунтан аван мĕнле пулать –
Пире чыслатăр хăнара.
Çаплах кĕрлет каçхи хула
Кĕрхи тату тăванлăхра.

Пĕр-пĕринпе эпир çапла
Пур кăмăлтан юлташ, тăван.
Сăра курки тытса алла
Çынна мухтатпăр чун-вартан.

*1967*

# АСЛИ ÇУК ÇĂКĂРТАН

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Халăх ĕмĕр çапла шухăшлать:
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Ял ĕçченĕ хирте тар тăкать,
Уншăн чунĕ çунать ун ялан.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман, –
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Тыт асра: ан тĕпрет эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

Çăкăр вăл — çĕр-аннемĕр парни,
Вăл пулсан эпир вăйлă, пуян.
Ĕçлĕ халăх ăна хаклани
Ĕмĕр-ĕмĕр пырать авалтан.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман, –
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Тыт асра: ан тĕпрет эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

Ачаран пултăр пирĕн асра:
Тĕпретме юрамасть çăкăра!
Пирĕн пурнăç хăвачĕ унта,
Унăн ячĕ ялан чи малта.

Тус-тăванăм, çакна эс ан ман, –
Çĕр çинче асли çук çăкăртан!
Тыт асра: ан тĕпрет эс ăна,
Вăй та пурнăç парать вăл сана.

*1981*

## ЁМЁРЕХ УПРАТĂП ТУСЛĂХА

Юррăмпа вăратрăм вăрмана,
Уявра эп кайрăм хăнана...
Ыр сунса пуç тайрăм тăвана,
Пуç таяп, аннеçĕм, эп сана.

Юррăмпа ăнлантăм эп хама,
Йывăр чух йăпатрăм чунăма,
Чĕререн юратрăм тусăма,
Хисеплерĕм ялăм-йышăма.

Юррăмпа уçатăп куçăма,
Кĕскететĕп вăрăм çулăма,
Ёмĕрех упратăп туслăха,
Ёмĕрех мухтатăп халăха.

*1993*

## МĔНЛЕ ИЛЕМЛĔ ÇЫН ПУЛНИ!

Мĕнле илемлĕ çын пулни,
Хам çăлтăра хамах тупни,
Уй-хир ĕçне кал-кал утни,
Чĕремĕрте хĕвел çутни.

Мĕнле илемлĕ пурăнни,
Хĕрӳ ĕçре телей тупни.
Малашлăха çĕн çул уçни,
Тăван çĕре пуçа тайни.

Мĕнле илемлĕ тăрăшни,
Ял-йышăма сума суни,
Атте çуртне тытса тăни,
Ыр ĕçĕмпе ыр ят илни.

*1987*

## ÇĂКĂР

*З. Петрова* кĕвĕленĕ

Тыт, тăванăм, асра:
Ан тĕпрет çăкăра.
Вăл пулсан эс пуян,
Хăвна вăйлă туян.

Асли çук çăкăртан:
Сывлăшпа вăл пĕр тан.
Эс саван вăл пуртан
Пурнăçа чун-вартан.

Асли çук çăкăртан:
Хĕвелпе вăл пĕр тан.
Эс вĕçен вăл пуртан
Çăлтăр-уйăх таран.

Тыт, тăванăм, асра:
Ан тĕпрет çăкăра!

*1965*

## ЯЛ-ЙЫШПАЛА ПĔРЛЕ ЧУХНЕ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Аван çапла килсе курни,
Пĕрне-пĕри хисеп туни.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне!

Ăнса пулсан тырри-пулли
Ĕçме-çиме сĕтел тулли.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне!

Тухас килмест çак кил-çуртран
Килĕштерсе пурăннăран.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне!

Шуçăмпалах ĕçе тухар,
Çĕр-аннене сума săвар.
Мĕнле хитре чун-чĕрене
Ял-йышпала пĕрле чухне!

*1985*

## ШУР АППАÇĂМ, ШУР АППА*

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Шур аппаçăм, шур аппа,
Хăвăн чипер сăнупа
Çупăрлатăн эс пире,
Илем кӳрен уй-хире.

Шур аппаçăм, шур аппа,
Акăш евĕр уттупа
Вĕçсе пынăн туйăнан,
Ялан сăпай курăнан.

Шур аппаçăм, шур аппа,
Хăвăн хӳхĕм юррупа
Çын кăмăлне эс çĕклен,
Пире савнăç парнелен.

Шур аппаçăм, шур аппа,
Çут хĕвел пек чунупа
Ăшăтатăн эс пире, –
Çук сан пекки тĕнчере!

*1993*

---

* Ф. Лукинăн юлашки юрри.

## ЧУНТАН ЮРЛАТĂП ЭП

Кĕвви *В. Ходяшевăн*

Çуркуннепе садсем чечек сарсан,
Эпир хире ака тума тухсан,
Ĕçĕмĕрсем кал-кал, ăнса пырсан,
Хĕрӳ ĕçре кайри малта пулсан, –
Чунтан юрлатăп эп.

Чуна уçса çу кунĕсем çитсен,
Пур таврара улма-çырла пиçсен,
Уй-хирсенче хĕвел шевли çиçсен,
Каш! кашласа парка тырпул ӳссен, –
Чунтан юрлатăп эп.

Сар тум уртса кĕрхи кунсем çитсен,
Пӳлмесене таса тырпул кĕрсен,
Кĕрекесем тулли, пуян пулсан,
Тус-тăвансем кĕтни пурнăçлансан, –
Чунтан юрлатăп эп.

Шур тум уртса хĕл кунĕсем килсен,
Çитес çĕре çуна çулсем ӳксен,
Çынсем тус-тăванла килĕштерсен,
Пĕрне-пĕри савсан, хисеплесен, –
Чунтан юрлатăп эп.

*1965*

## ЯКА ÇУЛПА ÇӐ̈РЕН УТПА...

Яка çулпа çӳрен утпа
Тӑван патне кайма тухсан,
Тус-тантӑшпа, юлташӑмпа
Йӗри-тавра пӑхса пырсан, –
Çав териех чун хӗпӗртет,
Çав териех юрлас килет.

Аван çулпа çӳрен утпа
Акатуйне кайма тухсан,
Пире савса ыр кӑмӑлпа
Шур хурӑнсем пуçа тайсан, –
Çав териех чун хӗпӗртет,
Çав териех юрлас килет.

Яка çулпа çӳрен утпа
Савни патне кайма тухсан,
Чӗремӗрсем юратупа
Çут хӗвелле çунса тӑрсан, –
Çав териех чун хӗпӗртет,
Çав териех юрлас килет.

*1976*

## ТӐВАНӐМ, ӖНТӖ МӖН КАЛАС

Тӑванӑм, ӗнтӗ мӗн калас,
Пӗрле чухне сӑмах татас:
Этем тени ӗçпе паха –
Ан ман эс çакӑ чӑнлӑха.
Пире хисеп – малта пулсан,
Каю шӑтать – кая юлсан,
Этем тени ӗçпе паха –
Ан ман эс çакӑ чӑнлӑха.

*1965*

## ЮЛАÇ ЙĔРСЕМ

Эй, тантăшсем,
Тантăшсем,
Иртеç кунсем,
Иртеç çулсем.
Мĕн калас, тен,
Чылайăшсем
Ватă çынсем:
Асаттесем,
Асаннесем.
Иртеç кунсем,
Иртеç çулсем.
Ма кулянас,
Ма хурланас, –
Шăпа тухсан,
Эпир кайсан –
Юлаç йĕрсем,
Ĕçсем-хĕлсем.

## ÇУНАТЬ ЧУНĂМ, ÇУНАТЬ...

Çунать чунăм, çунать –
Вут тухни курăнмасть.
Мĕн парать, мĕн сунать –
Пуç усма юрамасть.

Ашкăнса пурăнни,
Пĕр-пĕрне çунтарни
Никама ыр туман,
Çынлăха упраман.

Çынна çын юратни,
Туслăхра пурăнни
Пурнăçра чи кирли,
Илемли, чи хакли!

## ТӐВАНСЕМПЕ ПӖРЛЕ ЧУХНЕ

Тӑвансемпе пӗрле чухне
Мӗнле аван чун-чӗрене –
Ҫунат ҫумне ҫунат хушан,
Малашлӑха шанса утан.
  Мӗнле аван тӑван пурри,
  Кӗрекере янрать юрри.

Мӗн чул илем тӑванлӑхра –
Ҫав хаклӑ мар-и пурнӑҫра.
Эпир юлхав ҫынсем пулман,
Атте-анне ятне яман.
  Мӗнле аван тӑван пурри,
  Кӗрекере янрать юрри.

Асаттесен пиллӗхӗпе,
Хӗрӳ чӗремӗр хушнипе
Ҫут ҫӑлтӑр пек ҫунса тӑрар –
Упрар тӑванлӑха, упрар!
  Мӗнле аван тӑван пурри,
  Кӗрекере янрать юрри.

*1996 ҫулхи*
*авӑн уйӑхӗн 8-мӗш кунӗ*

# ТӐВАН ХУЛАМӐР ШУПАШКАР ÇИНЧЕН КĔВĔЛЕНĔ ЮРӐСЕМ

## ТӐВАН ХУЛА

Кĕвви *Ф. Лукинӑн*

Атӑл тӑрӑх хӑпаратпӑр,
Ак умра инçех те мар
Курӑнса каять хуламӑр, –
Пирĕн капӑр Шупашкар.

Эс ялан кĕтсе илетĕн
Пире çывӑх тӑванла.
Сӑнупа илем кӳретĕн
Ирĕк, аслӑ Атӑла.

Савӑнатпӑр, тĕлĕнетпĕр
Эсĕ хӑвӑрт ӳснинчен.
Сӑвӑ-юрӑ кĕвĕлетпĕр
Хамӑр хуламӑр çинчен.

Ĕмĕр пул эс пĕртӑванлӑ
Аслӑ, чаплӑ Мускавпа,
Пирĕн ĕçлĕ, çĕн вӑй-халлӑ,
Хӑвӑрт ӳсекен хула.

*1945*

## ÇĔНЕЛЕН ШУПАШКАРĂМ

Кĕвви *А. Бурундуковăн*

Чун-чĕре юррине эп шырарăм,
Ачаран кăмăлларăм сана,
Çуллен-çул çĕнелен Шупашкарăм,
Эс кӳретĕн илем таврана.

*Хушса юрламалли:*

Шупашкарăм, тăван Шупашкар,
Сана мĕншĕн чунтан мухтас мар!
Ĕмĕрех туслă эс Атăлпа,
Ĕмĕрех эс пĕрле çĕршывпа.

Чун-чĕре юррине эп пуçларăм,
Саламлатăп тăван хулана.
Çурхи сар хĕвел пек Шупашкарăм,
Юрататăп сан çутă сăнна.

*Хушса юрламалли.*

Чун-чĕре юррине эп юрларăм,
Куç илмерĕм пĕрре сан çинчен.
Туслăхра пурăнан Шупашкарăм,
Ӳс татах, куллен-кун чечеклен.

*Хушса юрламалли.*

*1973*

## МУХТАНАТПĂР САНПА, ШУПАШКАРĂМ

Юрлаймасăр эпир чăтаймарăмăр
Чун-чĕре савнăçпа тулнăран.
Мухтанатпăр санпа, Шупашкарăмăр, –
Куллен-кун эс ÿсен, сарăлан.

*Хушса юрламалли:*

Шупашкар, Шупашкар,
Эс пире ыр сунан,
Юратса ал паран.
Шупашкар, Шупашкар,
Ўс, татах лайăхлан,
Хăват ил халăхран.

Таçтанах курăнать комбинатăмăр,
Пир тĕртеççĕ унта пикесем.
Заводсем, çĕн çуртсем туса лартрăмăр, –
Маттур-çке Шупашкар çыннисем!

*Хушса юрламалли.*

Чăвашсен тĕп хули – Шупашкарăмăр,
Сана пĕтĕм Çĕршыв саламлать.
Раççей çĕрĕ – анне, ĕмĕр манмăпăр, –
Яланах тăванла ал парать.

*Хушса юрламалли.*

*1960*

# ШУПАШКАР ÇУТИСЕМ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*
*Н. Зимин* та юрра хывнă

Çулсерен сирĕнпе тĕл пулатпăр,
Савăнатпăр кăмăл туличчен.
Тăванла пĕр-пĕрне ал паратпăр,
Тав тăватпăр чунтан-чĕререн.

*Хушса юрламалли:*

Шупашкар каччисем,
Шупашкар хĕрĕсем,
Кĕтсе илтĕр пире,
Пирĕн çывăх туссем,
Чăваш ен çутисем,
Ыр сунатпăр сире!

Пиртен пысăк салам йышăнсамăр,
Çулсерен çĕнелен Шупашкар.
Эсĕ пирĕн юратнă хуламăр, –
Çыннусем хĕрӳ чунлă, хастар.

*Хушса юрламалли.*

*1980*

## ШУПАШКАР ВАЛЬСĔ

Тӳпери хĕвел пек ялкăшса эс ларан,
Хитререн те хитре курăнан.
Ачаран чĕререн юрататпăр сана,
Хамăрах та тăван хулана.

*Хушса юрламалли:*

Шупашкар, Шупашкар,
Ĕмĕрех çамрăк хула.
Шупашкар, Шупашкар,
Эс çĕклен кăмăла.

Юмахри пек çуртсем, сарлака урамсем...
Илĕртеççĕ куçа çăкасем.
Шупашкар хĕрĕсем, Шупашкар каччисем,
Ăмăртуллă ĕçри паттăрсем.

*Хушса юрламалли.*

Кунсерен çĕнелен, кунсерен вăй илен,
Юрату эс пире парнелен.
Тус-тăванлăх хули, Шупашкар, сан çинчен
Юр юрлатпăр эпир чĕререн.

*Хушса юрламалли.*

*1974*

## ТĔП ХУЛАМĂР, ТĂВАН ШУПАШКАР

Тăванла пуç тайса саламлатпăр
Манăçми Шупашкар хулине.
Чун-чĕре хушнипе ал паратпăр,
Ыр сунатпăр эпир пĕр-пĕрне.

*Хушса юрламалли:*

Шупашкар хĕрĕсем,
Шупашкар каччисем, –
Эпир мар-и çурхи чечексем.
Шупашкар хĕрĕсем,
Шупашкар каччисем, –
Эпир мар-и хула çутисем!

Пирĕн туслăх татах çирĕплентĕр,
Вăл ан сӳнтĕр нихçан, ĕмĕрне.
Тĕп хуламăр ялан тĕреклентĕр,
Илем кӳтĕр Чăваш çĕршывне.

*Хушса юрламалли.*

Эс пиртен ĕç парни йышăнсамăр,
Çуллен-çул çĕнелен Шупашкар!
Хĕвел сăнлă юратнă хуламăр,
Сан çинчен юрăсем шăратар!

*Хушса юрламалли.*

*1989*

## ШУРӐ-ШУРӐ ШУПАШКАРӐМ

Шурӑ-шурӑ Шупашкарӑм,
Эс каймастӑн асӑмран.
Сана эпӗ кӑмӑлларӑм,
Хисеплерӗм ачаран.

Эх,ҫӗнелнӗ Шупашкарӑм,
Сартӑн мӑшӑр ҫунатна.
Юрӑ тупрӑм, юр юрларӑм, –
Саврӑм санӑн ыр ятна.

Шурӑ-шурӑ Шупашкарӑм,
Аслӑ Атӑл — ҫумӑнта.
Мӗн чул эпӗ савӑнмарӑм
Акӑш евӗр ҫакӑнта.

Эх, ҫӗкленнӗ Шупашкарӑм,
Сартӑн мӑшӑр ҫунатна.
Юрӑ тупрӑм, эп юрларӑм,
Саврӑм санӑн ыр ятна.

Шурӑ-шурӑ Шупашкарӑм,
Салам ӗҫлӗ халӑха.
Ахаль мар пуль эп мухтарӑм, –
Эс ҫӗклетӗн ман чуна.

Эх, юратнӑ Шупашкарӑм,
Сартӑн мӑшӑр ҫунатна.
Юрӑ тупрӑм, эп юрларӑм, –
Саврӑм санӑн ыр ятна.

*1965*

## ШУПАШКАРĂМ, ТĂВАН ШУПАШКАР

Шупашкарăм, тăван Шупашкар,
Чунтанах юрататăп сана.
Куллен-кун эс çĕклен, çунат сар,
Сăнупа илем кӳр таврана.

Шупашкарăм, тăван Шупашкар,
Ан хавшат улăпла утăмна.
Ĕмĕрех пул чипер, пул хастар,
Çулсерен эс ӳстер ху чысна.

*1968*

## ШУПАШКАРПА ЙОШКАР-ОЛА

Шупашкарпа Йошкар-Ола
Авалтанпа тус-тăванла
Кал-кал утаççĕ малалла
Хăюллăн, паттăр улăпла.

Шупашкарпа Йошкар-Ола
Çĕршыв чĕри – Мускавпала –
Килĕштерсе пурăннăран
Кун уттинчен тăрса юлман.

Шупашкарпа Йошкар-Ола
Ялан пĕрле халăхпала.
Çаплах ĕçчен, çаплах маттур –
Вĕсен çунатлă хăват пур.

Шупашкарпа Йошкар-Ола
Ялан ӳсеççĕ улăпла
Раççей çĕршывĕ вăйлăран,
Унпа тăванлă пулнăран.

*1987*

## ЮРАТНĂ ШУПАШКАРĂМ

Эс мăнаçлăн ларан хĕвел пек çуталса,
Илĕртÿллĕ хуламăр, тăван Шупашкар.
Çумăнта аслă Атăл юхать сарăлса, –
Сан ятна мухтаса халь мĕнле юрлас мар!

*Хушса юрламалли:*

Эх, юратнă тăван Шупашкар,
Çак юрра халаллатпăр сана.
Эс ĕçчен, пултаруллă, хастар.
Эс çĕклетĕн куллен хăватна.

Пĕлĕте кармашаççĕ чипер керменсем.
Савăнатпăр илтсе заводсен сассине.
Эпир мар-и вĕсем, сан маттур çыннусем?
Йышăнсам эс пиртен хĕрÿ ĕç парнине!

*Хушса юрламалли.*

Мухтанатпăр санпа, мирлĕ халăх хули,
Иксĕлми туслăхра эс ÿсен, çĕнелен.
Чи таса юрату чун-чĕремĕр тулли, –
Эс пире яланах хисеплен, вăй пиллен.

*Хушса юрламалли.*

*1975*

## ШУПАШКАР КАЛАÇАТЬ

Кун пуçланчĕ. Тăнлар: Шупашкар калаçать,
Халăха ырлăх-сывлăх сунса саламлать.
Малалла çĕкленÿллĕн утма йыхăрать –
Эфирта чăвашла çĕн хыпар янăрать.

Тӳпере сар хӗвел. Шупашкар калаҫать.
Тӗп хуламӑр сасси таврана саланать.
Эпӗр ӗмӗр кӗтни чунӑма хал парать –
Эфирта тӑван халӑх юрри янӑрать.

Шупашкар калаҫть тесенех куҫ умне
Тухать савнӑ, юратнӑ Ҫӗршывӑм-анне.
Тӑван халӑх кунта ҫӗнӗ куншӑн ҫунать.
Халӑхсен туслӑхне упраса пурӑнать.

*1996*

## ТӐВАН ХУЛАМӐР, ШУПАШКАРӐМ

Кӗвви *В. Ильдяковӑн*

Хам тивӗҫе пӗрре манмарӑм,
Куллен хӗрӳ ӗҫе васкарӑм.
Сана савса чунтан юрларӑм,
Тӑван хуламӑр, Шупашкарӑм.

Ытарайми сӑнна мухтарӑм,
Ҫут Атӑла куҫпа лӑпкарӑм,
Сана савса чунтан юрларӑм,
Тӑван хуламӑр, Шупашкарӑм.

Ӑҫта кӑна ҫитсе курмарӑм,
Сана нихҫан асран ямарӑм,
Сана савса чунтан юрларӑм,
Тӑван хуламӑр, Шупашкарӑм.

Чӑваш ҫӗршыв чысне упрарӑм,
Юратнӑран унран хӑпмарӑм.
Сана савса чунтан юрларӑм,
Тӑван хуламӑр, Шупашкарӑм.

*1977*

# ЮРАТУ ЮРРИСЕМ

## КИЛ, САВНИ, ЛАР ÇУМА

Кӗвви *Ю. Мясниковăн*

Шурă хурăн айӗнче
Каçхи кӳлӗ хӗрринче
Эп ларатăп пӗр-пӗччен, –
Тусăм, мӗншӗн кӗттерен?

*Хушса юрламалли:*

Кил, савни, лар çума,
Ăшăтсам ман чуна.
Чăн чипер юррăма
Парнелетӗп сана.

Уйăх тухрӗ тӳпене
Сарса мăшăр çунатне.
Мӗнле ырă чӗрене
Юратсассăн пӗр-пӗрне.

*Хушса юрламалли.*

Юратуçăм, вăй пилле,
Ăшăт пире хӗвелле.
Тусăм, эсӗ пур чухне
Туяп пурнăç илемне.

*Хушса юрламалли.*

## ЮРАТУСĂР МĔНЛЕ ПУРĂНАН

*Кĕвви Ф. Васильевăн*

Савнă тусăм, санпа тĕл пулсан
Хуйхă-суйхă иртет, çухалать.
Чун-чĕрем хĕвелле çуталать...
Юратусăр мĕнле пурăнан?

Савнă тусăм, санпа тĕл пулсан
Сăмах хыççăн сăмах тупăнать,
Вăрăм çул та кĕскен туйăнать...
Юратусăр мĕнле пурăнан?

Савнă тусăм, санпа тĕл пулсан
Сисĕнмест, вăхăт хăвăрт шăвать,
Васкаса шурăмпуç хăпарать...
Юратусăр мĕнле пурăнан?

*1968*

## АН ÇУНТАР, ТУСĂМ, ЧĔРЕНЕ

Кунĕ ырă... Ларса калаçар,
Хамăр çамрăк чуна йăпатар.
Мĕн çитет пĕр-пĕрне савнине,
Ан çунтар, тусăм, ман чĕрене.

Ĕшнере шăпчăк шăппăн юрлать,
Сассипе тунсăха хăвалать.
Туян пуль эп сана кĕтнине,
Ан çунтар, тусăм, ман чĕрене.

Чун туять юрату хаклине,
Çамрăк ĕмĕр пĕрре килнине,
Пиллесемччĕ телей уççине,
Ан çунтар, тусăм, ман чĕрене.

*1965*

## ЧУПРĂМ ТУХРĂМ КӲЛĔ ХĔРРИНЕ

*«Шуршăл тăхлачи» музыкăлла комедирен*

Кĕвви *А. Асламасăн*

Чупрăм тухрăм эпĕ кӳлĕ хĕррине,
Çамрăк сăнăм ӳкрĕ шыв çине.
Çулăм хыпрĕ манăн çамрăк чĕрене,
Эп çухатрăм,
ай çухатрăм чунăм савнине.

Садра вăштăр-вăштăр çилĕ вĕрнипе
Шурă çĕмĕрт лăпкăн хумханать.
Тусăм, кунĕн-çĕрĕн саншăн çуннипе
Канăç пĕтрĕ, канăç пĕтрĕ, чунăм хурланать.

Сарă çутă уйăх çӳллĕ тӳпере,
Куртăм: кĕчĕ пĕлĕт хушшине.
Хамăн савнă тусăм чунăм-чĕрере,
Вăл туять-ши, ах, туять-ши эпĕ çуннине?

*1970*

## КĔТСЕ ИЛ, САВНИÇĔМ*

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Çавра кĕмĕл уйăх тӳпене тухсан,
çутине сапсан
Кĕтсе ил, савниçĕм, кăмăллăн пăхса,
çепĕççĕн кулса.
Санпала эп тухăп Атăл хĕррине
Курса савăнмашкăн çĕршыв илемне.

* В. Веселовпа пĕрле çырнă.

Саншăн ман чĕремçĕм тунсăхлă пулсан,
çуннине туйсан
Йăпатсам, савниçĕм, кăмăллăн пăхса,
çепĕççĕн кулса.
Эп ун чухне туйăп юрату вăйне,
Эсĕ, чунăм, маншăн çывăх иккенне.

Сенкер шурăмпуçĕ килни курăнсан,
автан авăтсан
Ăсатсам, савниçĕм, кăмăллăн пăхса,
çепĕççĕн кулса.
Утăпăр хаваслăн, утăпăр пĕрле,
Лăпкă ăшă çилĕ ачашлĕ пире.

*1980*

## ЧУН САВНИÇĔМ, ĂÇТА ЭС ÇӐРЕН?

Хĕвел анчĕ Сăрнай катине,
Чĕкеç кĕчĕ вĕçсе йăвине.
Чун савниçĕм, ăçта эс çӳрен,
Мĕншĕн-мĕншĕн мана кĕттерен?

Тулли уйăх пăхать тӳперен,
Хăйçути ялкăшать килсерен.
Чун савниçĕм, ăçта эс çӳрен,
Мĕншĕн-мĕншĕн мана кĕттерен?

Канăç çук – вут хыпать чĕреме,
Çăмăл мар-мĕн ăна сӳнтерме.
Чун савниçĕм, ăçта эс çӳрен,
Мĕншĕн-мĕншĕн мана кĕттерен?

Шуçăмлах тухмалла уй-хире,
Хĕрӳ ĕç кĕтет мар-и пире...
Чун савниçĕм, ăçта эс çӳрен,
Мĕншĕн-мĕншĕн мана кĕттерен?

## ЭП ÇӲРЕРĔМ

*Романс*

Эп çӳрерĕм çĕр хута
Сирĕн умăрта.
Сана кĕтрĕм тухасса
Тури Çĕнкаса.

Савнă тусăм, ан ятла,
Ан кӳрен мана.
Тĕл пулсассăн санпала
Çăмăл ман чуна.

*1960*

## ЮРАТУШĂН ЮРĂ ТУПРĂМ

Юратушăн юрă тупрăм,
Юратушăн ăш çунать.
Саншăн, саншăн, савнă тусăм,
Пĕр канăç çук ман чуна.

Юрă пултăн эсĕ маншăн,
Юлчĕ юрă асăмра.
Маттур каччă эпĕ саншăн,
Саншăн чунăм – çулăмра.

Юрă пулнă юратушăн
Эп юрларăм юррăма.
Саншăн уçрăм, савнă тусăм,
Çулăм хыпнă чунăма.

*1971*

## КАÇХИ ИЛЕМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Сад пахчийĕ чечек сарчĕ,
Мĕнле ырă сывлама.
Савнă тусăм, эс тухсамччĕ
Пĕрле юрă юрлама.

Çӳлте ылтăн çурла уйăх
Шăвать пĕлĕт хушшипе.
Эп сăнатăп: каçхи улăх
Ташлать унăн çутипе.

Эх, мĕн чухлĕ кĕмĕл çăлтăр
Çиçет пĕлĕт маччинче.
Лăпкă кӳлĕ йăлтăр-йăлтăр
Вылять улăх варринче.

Çакна эпĕ йăлтах çыртăм
Таса шурă хут çине.
Каçхине те эс, Çĕршывăм,
Çухатмастăн илемне.

*1949*

## ÇИТРĔ АСЛĂ ÇĂВАРНИ

Чун савниçĕм, чун савни,
Çитрĕ кĕтнĕ çăварни, –
Кăлар хыçлă çунуна,
Кӳл те тух эс лашуна.

Çут хĕвелĕ çуркунне
Çĕклет ĕçлĕ çын чунне.
Савăнтар эс, ял каччи,
Чуптар пире катаччи.

Çăварниçĕм, çăварни,
Эпир чунтан савăнни
Пуçра сывлăх пур чухне
Асран каймĕ ĕмĕрне.

Мĕн чул илем таврара.
Мĕнпур ял-йыш – урамра,
Çурхи кунпа савăнать,
Çăварние саламлать.

*1993*

## МЕХЕЛ ÇИТСЕН

Юрлатăп эп мехел çитсен
Телейлĕ юрату çинчен.
Пĕрле юрлаççĕ уй-хирсем,
Юрлаççĕ симĕс çарансем...

Юрлатăп эп мехел çитсен
Телейлĕ юрату çинчен.
Пĕрле юрлаççĕ йывăççем,
Юрлаççĕ шурă хурăнсем...

Юрлатăп эп мехел çитсен
Телейлĕ юрату çинчен,
Пĕрле юрлаççĕ кайăксем,
Юрлаççĕ çепĕç шăпчăксем...

Юрлатăп эп мехел çитсен
Телейлĕ юрату çинчен.
Пĕрле юрлаççĕ çырмасем,
Юрлаççĕ çутă çăлкуççем.

Юрлатăп эп мехел çитсен
Телейлĕ юрату çинчен.

*1987*

## СӐНАРӐМ ТА КАЛАЙМАРӐМ

Кӗвви *Т. Фандеевӑн*

Ҫур ҫул ытла сана сӑнарӑм,
Хам савниех тесе шутларӑм.
Эс ма ҫавна сиссех каймарӑн,
Чуна вут хыпнине туймарӑн.

Мӗнле савса сӑмах чӗнмерӗм,
Куҫран пӗрре пӑхса илмерӗн.
Аса илсен ҫунать чӗреҫӗм,
Ман еннелле пӑхсам, чӗкеҫӗм.

Пӑхатӑп эп сана куҫран...
Тухмастӑн эс ман асӑмран.
Ҫула тухап, ҫумрах тӑран,
Чуна илем кӳрсе утан.

*1962*

## МАНРАН МӖНШӖН ЮТШӐНАН...

Мӗн калам-ши эп сана, –
Пӑхса илсем таврана...
Чун савниҫӗм, эс хӑҫан
Манпа тепре курнӑҫан?

Ыйтам халӗ эп санран, –
Манран мӗншӗн пӑрӑнан?
Ҫулӑм хыпнӑ чунӑма
Ҫав териех ҫунтаран?

Пӑрчӑканӑм, ан тарсам, –
Ҫурла уйӑх хӑпарсан
Сана хамах ӑсатам,
Ыталаса чуп тӑвам.

## ÇУРХИ КУНСЕМ ÇИТСЕН

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Çурхи чипер кунсем çитсен
Çунат сарать кăвак сирень.
Хастар çамрăксем,
Маттур тантăшсем,
Ăш çил вĕрет кăнтăр енчен.
Пур яш-кĕрĕмсем,
Манми тусăмсем,
Чĕре юрри юхать хитрен.

Хĕвел ансан вăрман хыçне,
Вăййа тухсан ĕшне хĕрне,
Хастар çамрăксем,
Маттур тантăшсем,
Каç чаршавне сирсе утар.
Пур яш-кĕрĕмсем,
Манми тусăмсем,
Пĕрни-пĕри чунтан савар.

Хăват пур чух чун-чĕрере
Илем кӳрер çĕн ĕмĕре.
Хастар çамрăксем,
Маттур тантăшсем,
Малта пулар хĕрӳ ĕçре.
Пур яш-кĕрĕмсем,
Манми тусăмсем,
Çĕршыв телей сунать пире!

*1967*

## ЙЫВĂР КУН ПАЛЛИ

Укăлча енче – ешĕл сад пахчи,
Унта пикепе калаçать каччи.
Пулнă вăл салтак вăрçă хирĕнче,
Йывăр кун палли унăн сăнĕнче.
Туять хĕр-пике ку мĕн паллине,
Туять тăшмансем йĕр хăварнине.
Пăхрĕ те вара çак суран çине
Çурĕ куççульпе савнă çын питне.
Сисет ак каччи пике çуннине:
«Сăна эс, – терĕ, –
шуçăм килнине...»
Укăлча енче – ешĕл сад пахчи,
Унта пикепе калаçать каччи.

*1944*

## САВНИ КИЛСЕ КУРМАН ПУЛСАН

Савни килсе курман пулсан
Ăшă сăмах ăçтан тупан,
Чун çуннине мĕнле чаран? –
Вăйли çуках юратуран.

Савни килсе курман пулсан
Хуйха-суйха ăçта хуран,
Пур савнăçа кампа пайлан? –
Вăйли çуках юратуран.

Савни килсе курман пулсан
Каçхи вăййа кампа тухан,
Юрлас юрра кампа пуçлан? –
Вăйли çуках юратуран.

*1965*

## КĔТЕРУК

*Кĕвви А. Токаревăн*

Чиперук, Чиперук,
Пирĕн маттур Кĕтерук
Епле пулма пĕлнĕ-ши,
Мĕнле каччă савмĕ-ши?

Кĕтерук, Кĕтерук,
Саврĕç ăна пĕр тăрук
Икĕ каччă: Михала
Тата вĕçкĕн Микула.

«Юрату, юрату...
Эсĕ мана кăмăл ту...» –
Çапла калать Михала.
«Эх, чунăм!» – тет Микула.

Чиперук, Чиперук,
Йăрăс пӳллĕ Кĕтерук
Çыру илчĕ Муркашран
Чунĕ савнă каччăран.

Кĕтерук, Кĕтерук,
Сар хĕр, ĕçчен Кĕтерук
Çыру çырчĕ çав касах:
«Пырап, – терĕ, – кăçалах».

## ЭС ТУХСАМЧЧĔ

Чӳрече курăнать йăлтăр-йăлтăр,
Сад пахчи тĕлĕрет-мĕн канса.
Эс тухсамччĕ каçпа çутă çăлтăр
Тӳпене тухнă пек ярăнса.

Валакран шыв шарлать пит илемлĕн
Ыйхăри улăха вăратса.
Эс тухсамччĕ, сада тин иленнĕ
Шăпчăк пек, юрруна шăратса.

Тĕтрепе ак пĕркенчĕ тавралăх,
Ир те килĕ часах çутăлса.
Эс тухсам чун-чĕре савăнмалăх
Ытарми тутупа йăл кулса.

Тем ĕçлерĕн, пĕлме хăяймарăм,
Çĕрĕпех те сÿнмерĕ çутту.
Çутăлсан, тен, тухмашкăн ăнкарăн.
Пит кичем-çке капла юрату!

*1957*

## САВНИ МАНА ЧУНТАН САВСАН

Кĕвви *А. Токаревăн*

Çÿрен утпа çула тухсан,
Савни çумра ларса пырсан,
Мана шанса куçран пăхсан
Телейлĕ çын çук пуль манран.

Вăрман хĕрне вăййа тухсан,
Савни мана чунтан савсан,
Пĕрле пулма сăмах парсан
Телейлĕ çын çук пуль манран.

Вăхăт çитсен, кĕр пуçлансан,
Тус-тăвансем ĕç пуçтарсан,
Хисеп туса туя пырсан
Телейлĕ çын çук пуль манран.

*1965*

## ШУРĂ ЛАНТĂШ

Кĕвви *А. Никитинăн*

Саншăн пухрăм шурă лантăш
Эп хĕвеллĕ ĕшнере.
Мĕншĕн-мĕншĕн эс, хĕр-тантăш,
Ялан манăн чĕрере?

Мĕншĕн-мĕншĕн, савнă тусăм,
Çунтаратăн чунăма?
Эс тухсамччĕ, хура куçăм,
Каç пулсассăн шыв ăсма.

Ун чух шурă лантăш парăп
Сана кӳлĕ хĕрринче,
Юрă тупăп, шăрантарăп
Кĕмĕл уйăх çутинче.

## ПАРНЕЛЕМ ЮРРĂМА

Сар хĕвел пек чипер сăнупа,
Акăш евĕр кал-кал уттупа
Эс çырлан курăнан куçăма, –
Кил, савни, парнелем юррăма.

Чĕресем пĕр-пĕрне савнăран,
Юратушăн çунса тăнăран
Эс çырлан курăнан куçăма, –
Кил, савни, парнелем юррăма.

Эс маттур, сăпай çын пулнăран
Хисеплетĕп сана чун-вартан,
Эс çырлан курăнан куçăма, –
Кил, савни, парнелем юррăма.

## ЧУН САВНИҪӖМ УКҪИНЕ

Чун савниҫӗм Укҫине
Тухать тулӑ пуссине.
Ҫут ҫӑлтӑр пек сӑнӗпе,
Йӗс шӑнкрав пек сассипе
Тӗлӗнтерет вӑл пире,
Илем кӳрет уй-хире.

Чун савниҫӗм, Укҫине,
Ан кар кантӑк каррине.
Тӗл пулӑпӑр касхине
Кӑвак кӳлӗ хӗрринче,
Улма пахчи варринче,
Кӗмӗл уйӑх ҫутинче.

Чун савниҫӗм, Укҫине,
Пӑхса илсем ман ҫине.
Эс яланах чӗрере,
Сан пекки ҫук тӗнчере.
Сӑмах татар, килӗшер,
Ҫӗнӗ ҫулта пӗрлешер.

*1981*

## КӖМӖЛ ҪӖРӖ

Халь те кӗмӗл ҫӗрӗ
Куҫӑм умӗнче.
Мӗншӗн эсӗ, хӗрӗм,
Манран пит инҫе.

Чунӑм сивӗнмерӗ,
Кӑвар – чӗремре.
Сан ҫӗррӳ ҫӗтмерӗ
Вӑтам пӳрнере.

Эс хăçан килетĕн,
Тусăм, пĕлтерсем.
Чунри çут хĕвелĕм,
Хал пĕтрĕ кĕтсе.

*1967*

## САРПИКЕ

*Халăх юрри майлă*

Кĕвви *К. Архиповăн*

Улма пахчинче,
Хĕвел ăшшинче,
Саркайăк юрлать,
Сасси ян каять.

Вăрман хĕрринче,
Çăка айĕнче,
Кĕтет сарпике
Чунĕ савнине.

Анаткас енчен,
Сăрнай катинчен,
Тухрĕ ун каччи –
Кўршĕ ял ачи.

Çил çук ĕшнере,
Çăка çеçкере,
Эх, мĕнле хитре
Каччăпа хĕре!

*1970*

## ТУСĂМ, ХĂÇАН ЭС ТУХАН?..

Çĕнĕ уйăх – çутă уйăх –
Каç илемĕ – тӳпере.
Савнă уй-хир, ешĕл улăх
Сунать ырлăх халь пире.

Маншăн хакли çук санран,
Тусăм, хăçан эс тухан?..

Килсем, тусăм, ларсам, тусăм,
Калаçар-и чĕререн.
Эсĕ маншăн – йăлтăр шуçăм, –
Сӳнми телей парнелен.

Маншăн хакли çук санран,
Тусăм, хăçан эс тухан?..

Ак эс килтĕн, алă патăн,
Уçрăн тунсăх кăмăла,
Пуçна тайрăн, çума лартăн,
Савса пăхрăн тăванла.

Маншăн хакли çук санран,
Эп телейлĕ эс пулсан.

*1985*

## ТУСĂМ, ХĂÇАН ТАВРĂНАН...

Кунĕ лайăх. Тӳпе тап-таса...
Эп çӳретĕп сана шыраса.
Савнă тусăм, хăçан таврăнан,
Мĕншĕн çамрăк чуна çунтаран?

Чуна йывăр сана курмасан,
Çук пек пурнăç пĕрле пулмасан,

Савнă тусăм, хăçан таврăнан,
Мĕншĕн çамрăк чуна çунтаран?

Хĕр чухне хĕрĕх тус тупăнать,
Ман çула урăххи, тен, тататъ.
Савнă тусăм, хăçан таврăнан,
Мĕншĕн çамрăк чуна çунтаран?

Эп çеç мар, ăнланан пуль мана,
Тăван ялăм кĕтет халь сана.
Савнă тусăм, хăçан таврăнан,
Мĕншĕн çамрăк чуна çунтаран?

*1970*

## ĂСАТСА ЯР МАНА

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Савнă тусăм, санран уйрăлатăп,
Вăхăт çитрĕ – тухса каймалла.
Юлашки хут ларсам эс, çунатăм,
Калаçса йăпатар кăмăла.

Пĕр-пĕрне юратса пурăнсассăн
Питĕ йывăр иккен уйрăлма.
Хура пĕлĕт килет кассăн-кассăн, –
Каймалла çĕршыва сыхлама...

Ăсатса яр мана, савнă тусăм,
Чипер юл, туслăха эс упра.
Васкаса хăпаратъ ирхи шуçăм,
Каяс çулăм выртатъ умăмра.

*1950*

## САВНИ ВАЛЛИ

Ҫӗлетрӗм йӗтӗн пирӗнчен
Савни валли хитре кӗпе.
Тӗрри ун пурҫӑн ҫиппинчен, –
Пуян эп ҫакӑ парнепе.

Ӗҫсем пӗтсессӗн, кӗркунне,
Сӑмах татма савни килне
Асаттесен ыр йӑлипе
Кайма илемлӗ парнепе.

Чун савнине юратнине,
Чӗремҫӗм уншӑн ҫуннине
Каласшӑн уҫҫӑн пӗтӗмпе, –
Каясшӑн эпӗ парнепе.

*1971*

## СУКМАКПАЛА ХӖР КИЛЕТ

Ӳкнӗ сывлӑм ҫӗр ҫине,
Сасӑ пачӗ калинкке.
Анать кӳлӗ хӗррине
Савнӑ тусӑм, сарпике.

Чун савнине чун кӗтет, –
Илтеп ура сассине.
Сукмакпала хӗр килет,
Тем тесен те – Марине.

Тарай тутри пуҫӗнче,
Юратушӑн вӗл вӗҫет.
Унӑн мӑшӑр куҫӗнче
Ирхи шуҫӑм ирӗлет.

*1971*

## ШАП-ШУР ИККЕН ҪЫРЛА ҪЕҪКИСЕМ

*Халăх юрринчен*

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Шап-шур иккен ҫырла ай ҫеҫкисем
Атăлпала Сĕве ай хушшинче.
Маттур иккен чăваш ай хĕрĕсем
Тăван ҫĕршыв чыслă ай ĕҫĕнче.

Кӳлсен кӳлĕр утне лайăххине,
Пĕкĕрен те ҫӳллĕ ай пуҫлине.
Чунтан савăр тусне, маттуррине,
Хурлăханран хура ай куҫлине.

Хăвалăхран тухать, юрра ярать,
Сар пăрчăкан чĕппи ай мар-ши ҫав.
Кантăк витĕр пăхать, чупса тухать,
Пирĕн ялăн хĕрĕ ай мар-ши ҫав.

*1938*

## ТЕЛЕЙЛĔ ТУСЛĂХ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ таса ăшă ҫилĕ,
Ылтăн хĕвел тухрĕ янкăр тӳпене.
Хитре уҫă сасă уй-хир тăрăх кайрĕ,
Эпĕ илтрĕм савнă сар хĕр юррине.

Кăмăллăн савниҫĕм мана ырлăх сунчĕ,
Сума сурĕ хăйĕн ĕҫри тантăшне.
Сăнĕ ун сăпайлăн ялкăшса ҫуталчĕ,
Юрри илем кӳчĕ тăван уй-хире.

Лăпкăн-лăпкăн вĕрчĕ таса ăшă ҫилĕ,
Ылтăн хĕвел шурĕ пĕлĕт хушшипе.
Савнă тусăм, халĕ эпир те телейлĕ,
Кун-ҫулăмăр чапĕ ҫав ҫут хĕвел пек.

*1950*

## КĔТСЕ ИЛЕЙМЕРĔМ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Утрăм-утрăм, утса тухаймарăм, –
Такăрлатрăм куллен урама.
Савнă тусăм, сана тупаймарăм, –
Эс ҫукки ҫунтарать чунăма.

Чупрăм-чупрăм, чупса ҫитеймерĕм, –
Пурпĕрех эс манран инҫетре.
Юрату ҫулăмне сӳнтермерĕм, –
Кунĕн-ҫĕрĕн сăну чĕрере.

Кĕтрĕм-кĕтрĕм, кĕтсе илеймерĕм, –
Савнă тусăм, ăҫта эс ҫӳрен?..
Тен, сана хаклама пĕлеймерĕм, –
Халь кама юрруна парнелен?

*1975*

## САРПИКЕҪĔМ

Сарпикеҫĕм, курса калаҫар,
Хамăр ҫамрăк чуна йăпатар.
Мĕн ҫитет пĕр-пĕрне савнине? –
Сисен-ши, сисен-ши
Эп сана кĕтнине.

Сарпикеҫӗм, пӗрле тӗл пулсан,
Пӗр-пӗрне юратса пуҫ тайсан
Ҫухалать хуйхӑ-суйхӑ, иртет. –
Сисен-ши, сисен-ши
Сана чунӑм кӗтнине.

Сарпикеҫӗм, эс ман чун савни,
Пӗрле ӗмӗр пулма тур ҫырни.
Манас марччӗ ҫакна ӗмӗрне, –
Сисен-ши, сисен-ши
Саншӑн эп ҫуннине.

*1970—1994*

## ДАГЕСТАН ПИКИ НУРЖАН

Кӗвви *Ф. Лукинӑн*

Сӑрт-туллӑ Дагестан пики, Нуржан,
Чун-чӗрене мӗн-ма-ши ҫунтаран?
Ху ӑсупа, илемӳпе мана
Ӗмӗрлӗхе эс илтӗн тыткӑна.

Хӗвеллӗ чун тени пулать Нуржан –
Ялан ҫакна сиссе, туйса тӑран
Санпа пӗрле Каспи хӗрне ансан,
Ту хушшине персик татма тухсан.

Пар аллуна, лар ман ҫума, Нуржан,
Ан именсем ҫынсем тем каласран.
Телей сунсамччӗ эсӗ чун-вартан
Пире, хӗвеллӗ, ҫутӑ Дагестан.

*1972*

## САРПИКЕÇЁМ, САРПИКЕ...

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Сарпикеçĕм, сарпике,
Мана эсĕ ан тирке.
Сăр вăрманĕ хĕрринче,
Сăрнай кати тĕлĕнче
Эп кĕтетĕп каçсерен
Сана пĕтĕм чĕререн.

Сарпикеçĕм, сарпике,
Мана эсĕ ан тирке.
Эп хĕрӳллĕ кунсенче
Хирте, тулă пуссинче,
Маттур, сăпай çынсемпе
Мала тухрăм ĕçĕмпе.

Сарпикеçĕм, сарпике,
Мана эсĕ ан тирке.
Эпĕ саншăн çуннине,
Каçхи вăййа тухнине
Сăнать уйăх тӳперен, –
Ах, мĕн-ма эс кĕттерен?!

*1979*

## ЧУН САВНИ

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Кăмăлна пĕлесчĕ ман:
Эсĕ мĕн-ши шухăшлан?
Ах, ăçта çӳретĕн-ши,
Ăш çунать – сисетĕн-ши,
Чун савни...

Шухăшна туясчĕ ман:
Эсĕ мĕншĕн пăрăнан?

Ах, ĕмĕтĕм çитĕ-ши,
Çут çăлтăр пек çиçĕ-ши,
Чун савни...

Сан сăнна курасчĕ ман,
Эсĕ мĕн-ши шухăшлан?
Ах, хăçан килетĕн-ши,
Сассăма илтетĕн-ши,
Чун савни...

*1982*

## ÇУК ПУЛЬ САН ПЕККИ...

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Эп тухап-и хĕвел ăшшине,
Сывлăм ӳкнĕ ĕшне хĕррине.
Ăçта пул – эсĕ ман чĕрере, –
Çук пуль çав сан пекки тĕнчере.

Эп иртеп-и урам хушшипе,
Сукмакпа, сад пахчи çуммипе.
Ăçта пул – эсĕ ман чĕрере, –
Çук пуль çав сан пекки тĕнчере.

Эп ларап-и йăмра хӳттине,
Сирĕн çурт çумĕнчи сак çине.
Ăçта пул – эсĕ ман чĕрере, –
Çук пуль çав сан пекки тĕнчере.

Эп утап-и хире ĕçлеме,
Тăван ял хăватне çĕклеме.
Ăçта пул – эсĕ ман чĕрере,
Çук пуль çав сан пекки тĕнчере.

*1979*

## ПАРНЕЛЕТĔП САНА ЮРАТУ ЮРРИНЕ

Эп утатăп каçхи укăлча тĕлнелле,
Укăлча тĕлнелле, сирĕн кил еннелле.
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем уççине.

Чун савни, яриех уçса яр кантăкна,
Уçса яр кантăкна, кĕтсе ил эс мана.
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем уççине.

Хитре çав çурхи каç: тӳпере çăлтăрсем,
Тӳпере çăлтăрсем, вăйăра çамрăксем...
Парнелетĕп сана юрату юррине,
Юрату юррине, чун-чĕрем уççине.

*1972*

## ТЕЛЕЙ ПУР — ЮРАТУ ТУПĂНСАН

Ах, çунатăп, çаплах эп çунатăп,
Чун савниçĕм, сана курмасан.
Çутă çăлтăр пекех ялкăшатăп
Кĕтнĕ чух куç умне эс тухсан.

Çĕрĕн-кунĕн çаплах шухăшлатăп,
Эс каймастăн нихçан асăмран.
Çĕр çинче саншăнах пурăнатăп,
Телей пур – юрату тупăнсан!

Сарпикеçĕм, тата мĕн калам-ши,
Мĕн калам-ши сана юратса?
Мĕнле юрă тупса эп юрлам-ши,
Чун савниçĕм, сана ыр сунса!

*1988*

## ТАНТӐШСЕМӖР, ТУЙРӐР-И...

Кӑвиҫ-кӑвик кӑвакарчӑн
Вӗҫсе иртрӗ, куртӑр-и,
Ҫӳл тӳпере йӗр хӑварчӗ,
Тантӑшсемӗр, туйрӑр-и?

Ҫав йӗр тӑрӑх вӗҫсе анчӗ
Шап-шурӑ хут, куртӑр-и,
Яш-кӗрӗме хыпар пачӗ,
Тантӑшсемӗр, туйрӑр-и?

Салтак янӑ ҫыру пулчӗ
Ҫак шурӑ хут, куртӑр-и,
Пике чунӗ хытах ҫунчӗ,
Тантӑшсемӗр, туйрӑр-и?

*1944*

## САВНИ, САНА ЮРАТНӐРАН

Аванах ҫав савни пулсан,
Вӑл манпала ҫумра утсан.
Кӗрес килмест ҫак урамран,
Савни, сана юратнӑран.

Аванах ҫав савни пулсан,
Вӑл ман куҫран пӑхса утсан,
Каяс килмест тӑван ялтан,
Савни, сана юратнӑран.

Аванах ҫав савни пулсан,
Вӑл яланах мана шансан.
Ун чух чунтан ҫунса тӑран,
Савни, сана юратнӑран!

*1987*

## ХУТКУПĂСА ТЫТСАССĂН

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Хĕвел анса ларсассăн
Хăш сукмакпа утам-ши,
Чун савнине курсассăн
Мĕнле сăмах пуçлам-ши?

Çаран çине тухсассăн
Хăш чечекне татам-ши,
Савни çумне ларсассăн,
Мĕнле тăрса каям-ши?

Пăла хĕрне ансассăн
Хăш еннелле пăхам-ши,
Чуна вут-хĕм хыпсассăн
Мĕскер сапса чарам-ши?

Хуткупăса тытсассăн
Хăш урама тухам-ши,
Савни савать пулсассăн
Мĕн каласа юрлам-ши?

*1975*

## ÇĔР ÇИНЧЕ ПУРĂНАТПĂР ПĔРРЕ

Парнелерĕн мана кĕр çитсен,
Çураçса, туй туса пĕрлешсен
Аллăмри çутă ылтăн çĕрре, –
Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре.

Мĕнле ырă, илемлĕ тĕнче.
Эп упратăп арча тĕпĕнче

Ман ятпа эс ӳкернӗ тӗрре, –
Ҫӗр ҫинче пурӑнатпӑр пӗрре.

Чун ҫунсан, ыратсан эс сиплен,
Ӗҫӗме яланах хисеплен,
Ӑсти-ҫукшӑн кӗместӗн чӗрре, –
Ҫӗр ҫинче пурӑнатпӑр пӗрре.

Чӗререн юратар пӗр-пӗрне.
Савнӑ ҫыннӑм, ан ман ӗмӗрне
Хамӑр тупнӑ телейлӗ йӗре, –
Ҫӗр ҫинче пурӑнатпӑр пӗрре!

*1976*

## ЭПӖ САНӐН ТУСУ АЙ ПУЛАМ-И

Кӗвви *М. Шуракӑшӑн*

Эпӗ санӑн тусу ай пулам-и,
Ҫӑлтӑр пек ялкӑшса ҫуталам-и,
Юратушӑн ҫунса пурӑнам-и,
Пӗрле пурнӑҫ тума шантарам-и?

Эпӗ санӑн тусу ай пулам-и,
Сирӗн кил еннелле уттарам-и,
Эс пурришӗн чунтан савӑнам-и,
Ӗмӗр-ӗмӗр сана ыр сунам-и?

Эпӗ санӑн тусу ай пулам-и,
Кӑмӑла калаҫса йӑпатам-и,
Ҫӗр ҫинче саншӑнах пурӑнам-и,
Саншӑнах ҫак юрра шӑратам-и?

*1993*

## КĔТРĔМ-КĔТРĔМ САНА

Кĕвви *Ф. Васильевăн*

Эп çухатрăм йăлтах канăçа:
Кĕтрĕм-кĕтрĕм сана çĕр каçа.
Çулăм хыпрĕ, чунра шĕл кăвар,–
Пĕр сăлтавсăр мана ан çунтар.

Çамрăк ĕмĕр иртет васкаса,
Тĕл пулар пĕр-пĕрне юратса.
Кил, савни, чĕререн калаçар,
Пĕр сăлтавсăр мана ан çунтар.

Çĕклесемччĕ чуна, кăмăла,
Телее валеçер çурмалла.
Пултаруллăн пĕрле çул хывар, –
Пĕр сăлтавсăр мана ан çунтар.

*1970*

## САНА ЧУНТАН ЮРАТНĂРАН

Ял-йышăмсем ай умĕнче,
Мĕнпур хĕрӳ ай ĕçсенче
Маттур пулас килет-çке ман
Сана чунтан юратнăран.

Çурхи хитре ай кунсенче,
Çут çăлтăрлă ай каçсенче
Сăпай пулас килет ялан
Сана чунтан юратнăран.

Çурхи хитре ай кунсенче,
Çут çăлтăрлă ай каçсенче
Сăпай пулас килет ялан
Сана чунтан юратнăран.

*1962*

## ÇĂЛТĂР ПЕК ВĂЛ ТУХРĔ

Каççерен тухап эп
Атăл хĕррине,
Курса савăнатăп
Çĕршыв илемне.

Эп чунтан кĕтетĕп
Хамăн савнине,
Тусăм тухĕ тетĕп
Манăн куç умне.

Шăпчăксем юрлаççĕ
Лăпкă каçхине.
Вĕсем те туяççĕ
Çĕршыв илемне.

Сарă уйăх шурĕ
Пĕлĕт хĕррипе.
Мана савни курчĕ
Унăн çутипе.

Эпĕ кĕтсе илтĕм
Чунăм савнине,
Çăлтăр пек вăл тухрĕ
Манăн куç умне.

*1945*

## САВНӐ ТУСӐМА

Кӗвви *Ф. Лукинӑн*

Ҫутӑ кӗмӗл сывлӑм
Ӳкнӗ таврана.
Ирхи уҫӑ сылӑш
Ачашлать чуна.

Вӑштӑр кӑна вӑштӑр
Ӑшӑ ҫил вӗрет,
Тусӑм евӗр вӑрттӑн
Чуптуса илет.

Сад пахчи пит капӑр,
Ларнӑ чечеке.
Юрлать тапхӑр-тапхӑр
Унта сарпике.

Манӑн шухӑш-кӑмӑл
Унпала ялан.
Ӗҫлеме те ҫӑмӑл
Чун савни пулсан.

Пурнӑҫӑмӑр селӗм —
Ешӗл ҫуркунне.
Юрлар, сарпикеҫӗм,
Савар пӗр-пӗрне.

Ҫутӑ кӗмӗл сывлӑм
Ӳкнӗ таврана.
Эп сунатӑп ырлӑх,
Тусӑмҫӑм, сана.

*1962*

## АН ХУРЛА

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Ташла, тусăм, эс ташла
Çĕнĕ çемĕ каласа.
Анчах мана ан хурла,
Эп юлас çук намăса.

Хăвах пĕлен ман çинчен:
Сăнăм тухрĕ хаçатра.
– Пултаруллă, пит ĕçчен, –
Теççĕ мана таврара.

Вăтанмасть те – мухтанать
Тесе пĕртте ан ятла.
Висĕ каччă хăтана
Пычĕç çич кун каялла.

Мĕн калас тен – эп санах
Савап чунтан-чĕререн.
Хăçан эс ху хăтана
Пырассине пĕлтерен?

Пырсан пыр эс хăвăртрах,
Мĕншĕн нумай кĕттерен?
Хальхи хĕрÿ вăхăтра
Ĕçсем нумай, ху пĕлен.

Ташла, тусăм, эс ташла
Çĕнĕ çемĕ каласа.
Анчах мана ан хурла,
Эп юлас çук намăса.

*1950*

## ПУРÇĂН ТУТĂР

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Пурçăн тутăр савни пуçĕнче –
Ыр сунса эпĕ панă парне.
Курăнать ав урам вĕçĕнче,
Чĕнет пулĕ мана хăй патне.

Пурçăн тутăр, сана шыраса
Такăрлатрăм Тури урама.
Кĕтсе ил шурă лантăш йăтса,
Вĕçсе çитĕп чуна йăпатма.

Пурçăн тутăр савни пуçĕнче, –
Çĕр пин тĕрĕ, пĕрре кивелмен.
Пур телей, пур илем çĕр çинче
Чĕрере юрату сӳнмесен.

*1962*

## АРАПУÇ ХĔРĔСЕМ

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Ялкăшан хĕвел пек пичĕсем,
Мăшăр çут çăлтăр пек куçĕсем...
Вĕсем мар-и çурхи чечексем, –
Чипер çав Арапуç хĕрĕсем.

Çырла тейĕн – çӳхе тутисем,
Акăш тейĕн – кал-кал уттисем...
Вĕсем мар-и эпир савнисем, –
Сăпай çав Арапуç хĕрĕсем.

Уй-хирте çулсерен – малтисем,
Симĕс ылтăн хăмла ăстисем...
Вĕсем мар-и хĕрӳ чĕресем, –
Ĕçчен çав Арапуç хĕрĕсем.

Шăратаççĕ хитре юрăсем,
Илĕртеççĕ чуна сассисем...
Вĕсем мар-и садри шăпчăксем, –
Маттур çав Арапуç хĕрĕсем.

## ЮРАТУ ЮРРИ

Кĕвви *А. Токаревăн*
*В. Петров* та юрра хывнă

Атăл, Атăл, хумлă Атăл,
Эс çĕклетĕн чунăма.
Савнă тусăм, эп пуçлатăп
Юратушăн юррăма.

Пытармастăп, савнă тусăм,
Эп телейлĕ – эс пуртан.
Юрла, чунăм, хура куçăм,
Юратушăн манпала.

Эс саватăн, эп саватăп, –
Чун-чĕремĕр хушнипе.
Юратушăн, чипер Атăл,
Юрла эс те пирĕнпе.

Атăл, Атăл, хумлă Атăл,
Эс юхатăн сарăлса.
Чунăм, тусăм, эп юрлатăп
Юратушăн савăнса.

*1960*

## ИРТЫШ ХĔРРИНЧЕ

Тухрăм çеç ирхине
Эп Иртыш хĕррине:
Сиснĕ пулĕ чĕре, –
Куртăм сарă хĕре.

Хăй сăпайлă, чипер:
Мăшăр куçĕ – сенкер.
Тур палли – питĕнче,
Шур шăрçа – мăйĕнче...

Те чипер сар хĕртен,
Те Иртыш шывĕнчен
Тăтăм эп именсе,
Хĕвел пек хĕрелсе.

*1960*

## ÇАМРĂК ЧУНĂМ ÇУНАТЬ

Ĕнтĕ кăмăл тулать
Эс тухсан куç умне.
Çамрăк чунăм çунать
Эс çумра çук чухне.

Кĕтнĕ пурнăç пулать
Эс мана юратсан.
Ай-хай, чунăм çунать
Эп сана çухатсан.

Çĕнĕ уйăх тухать
Тĕнчене çутатса.
Çаплах чунăм шанать
Эс пĕрле пуласса.

*1994*

## ÇĔН УЙĂХ ЙĂТРĔ ÇУРЛИНЕ

*Романс*

Çĕн уйăх йăтрĕ çурлине,
Çул тытрĕ тулă пуссине.
Кĕтетĕп эпĕ савнине –
Хам телее, чун уççине.

Çухатрĕ уйăх хăй йĕрне,
Анма васкарĕ кӳл хĕрне:
Вăл курнă чунăм савнине –
Çĕн уйăхран та хитрине!

*1968*

## ЧУНĂМ ÇУННĂРАН...

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Пĕрех эс маншăн хĕвелпе,
Пĕрех эс маншăн чĕремпе, –
Сăну ытла илемлĕрен,
Чуну ялан хĕрӳллĕрен.

Пĕрех эс маншăн уйăхпа,
Пĕрех эс маншăн çăлтăрпа, –
Çут ĕмĕтпе пурăннăран,
Чи çывăх çыннăм пулнăран.

Пĕрех эс маншăн тăванпа,
Пĕрех эс маншăн пурнăçпа, –
Пĕрле хăюллăн утнăран,
Пĕр саншăн чунăм çуннăран.

*1978*

## ЭХ, ЧУНĂМÇĂМ, МĔКĔТЕ

Эп юратрăм йĕкĕте,
Кÿршĕ ялăн каччине.
Эх, чунăмçăм, Мĕкĕте,
Ма пăхмастăн ман çине?

Пытармастăп эп санран, –
Çулăм хыпрĕ чунăма, –
Инçетре мар пурăнан,
Çапах çук-çке курнăçма.

Пухăнатпăр каçсерен
Сăр вăрманĕн хĕррине.
Унта кĕтеп чĕререн
Сана, чунăм савнине.

*1959*

## ЭП ЮРАТРĂМ ПĔР ХĔРЕ

Эп юратрăм пĕр хĕре,
Вăл хăй — çирĕм пĕррере.
Вăрттăн пăхрăм ун çине, –
Тупрăм терĕм савнине.

Тупрăм терĕм савнине.
Çут хĕвел пек сăнлине,
Хура мăшăр куçлине,
Юрă-ташă ăстине.

Тупрăм терĕм савнине,
Çĕр ĕçĕнче малтине,
Çĕнĕ ĕмĕр çыннине,
Чун-чĕреçĕм кĕтнине.

*1973*

## КӐЛЕ ХӖРРИНЧЕ

Каҫхи кӳлӗ хӗрринче,
Шурӑ хурӑн айӗнче,
Эп ларатӑп пӗр-пӗччен, –
Тусӑм, мӗншӗн кӗттерен?..

Кил, савниҫӗм, лар ҫума,
Ҫӗкле ҫамрӑк чунӑма.
Сана, ҫывӑх ҫыннӑма,
Эп парнелӗп юррӑма.

Сӑну-пуҫу аванран –
Эс ҫырла пек курӑнан.
Кӑмӑлу пит ырӑран
Мана лайӑх санпалан!

*1974*

## ЧЕЧЕК ҪЫХХИ

Кӑнтӑртан ӑшӑ ҫилӗ вӗрет,
Ачашлать шур чечек ҫыххине.
Урампа ҫамрӑк каччӑ иртет,
Тем калать ҫумӗнчи савнине.

Уй-хиртен ырӑ шӑршӑ килет,
Ҫутӑ ҫӑлтӑр вылять тӳпере.
Шур чечек ҫыххине парнелет
Ҫамрӑк каччӑ хӑй савнӑ хӗре.

«Пурнӑҫ тӑтӑр ялан ҫуталса,
Тӳпере ялкӑшан ҫӑлтӑр пек...» –
Каччӑ утрӗ чунтан каласса
Укӑлча еннелле савнипе.

*1947*

## ВĂХĂТ ÇИТНĔ

*Хĕр йĕрри*

Кĕвви *Ю. Кудаковăн*

Эс çуратрăн, ÿстертĕн мана,
Уншăн пĕтĕм чунтан тав сана.
Çăмăл мар пуль пĕччен юласси,
Хыçăмран алăка хупасси.
Эй, юратнă аннем, ан ятла, –
Вăхăт çитнĕ – тухса каймалла.

Пурнăç çулĕ выртать умăмра,
Сывăх сын, тус-юлташ ман çумра.
Ĕмĕр-ĕмĕр унпа утмалла,
Пĕрле ырлăх-телей тупмалла.
Эй, юратнă аннем, ан ятла,
Вăхăт çитнĕ – тухса каймалла.

Пултăн эс чун ăшши пурнăçра,
Сăну сан яланах асăмра.
Кун килет, шурăмпуç хăпарать.
Каçхине пирĕн туй пуçланать.
Эй, юратнă аннем, ан ятла, –
Вăхăт çитнĕ – качча каймалла.

*1975*

## САНПА ПĔРЛЕ ЧУХНЕ

Ăçта çÿретĕн эс, телейĕм? –
Тесе ыйтатăп хăш чухне.
Пĕлмен: пĕрлех иккен хĕвелĕм,
Мана пиллет хăй хĕлхемне.

Санпа пĕрле чухне, савниçĕм,
Туяп телейĕм пуррине.
Пулсамччĕ эсĕ – ҫун уççийĕм,
Хисеп ту Атăл каччине.

*1963*

## САЛТАКРИ ТУСĂМА*

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Куçу пек сенкер, илемлĕ
Каçхине тӳпе маччи.
Асăмрах эс, чун хĕвелĕ –
Хамăр ял, пускил каччи.

Пит инçе-çке пирĕн хушă,
Анчах çывăх ик чĕре.
Çурхи сад халь сансăр пушă,
Вăл чĕнет, кĕтет пире.

Çурмалла ялан пайласчĕ
Ырлăха та хурлăха,
Чунăма уçса каласчĕ
Виç çул пухнă сăмаха.

Вăхăт çитĕ: улма сачĕ
Пире сĕнĕ çимĕçне.
Нихăçан та ан мансамччĕ
Эпĕ саншăн çуннине.

*1964*

---

* Ку сăвва Н. Исмуковпа пĕрле çырнă.

## ЧӖРЕМ ТАПМА ПӐРАХСАН

Чӗрем тапма пӑрахсан,
Мана пӑртак юратсан,
Туссем, пырӑр ӑсатма,
Савса юрлӑр юррӑма.
Аса илӗр ун чухне
Эпӗ ҫыншӑн ҫуннине.
Манӑн мӗнпур ӗҫӗме,
Чун-чӗрери хӗлхеме
Сӳнми парне вырӑнне
Пиллӗр Ҫӗршыв-аннене.

*1967*

## ХИТРИ ҪУК САН ПЕККИ

Кӗвви *В. Петровӑн*

Эс утатӑн ҫырма хӗррипе
Манпала, Шупашкар хӗрӗпе.
Сисрӗн пулӗ чӗрем ҫуннине,
Илӗртӳллӗн пӑхан ман ҫине.

Илӗртӳллӗн пӑхан ман ҫине
Туйнӑҫем юрату вӑйлине.
Ҫурхи кун ҫӑкасем ҫеҫкере,
Сан сӑну яланах чӗрере.

Сан сӑну яланах чӗрере.
Пытӑр ҫак юрату ӗмӗре.
Сар хӗвел йӑл ҫиҫет тӳпере,
Хитри ҫук сан пекки тӗнчере.

*1970*

## АТӐЛ ТӐРӐХ УТРӐМ

*Халӑх юрри майлӑ*

Кӗвви *А. Асламасӑн*

Атӑл тӑрӑх утрӑм,
Сана эп шырарӑм,
Ҫӗнӗ юрӑ тупрӑм,
Юрларӑм.
Юх эс, ҫепӗҫ юррӑм,
Янӑра илемлӗн.
Эс ӑҫта-ши, тусӑм,
Хӗвелӗм?

*Хушса юрламалли:*

Атӑл, Атӑл, куҫ умне тухатӑн,
Сан ҫинче ишеҫҫӗ кимӗсем.
Атӑл, Атӑл, лӑпкӑн хумханатӑн, –
Ак кунтах вӗҫеҫҫӗ акӑшсем.

Утӑм хыҫҫӑн утӑм...
Умра — Шупашкарӑм.
Сана, савнӑ тусӑм,
Манмарӑм.
Эсӗ — чун илемӗ,
Эсӗ — чун хӗлхемӗ.
Эсӗ — ман чӗкеҫӗм,
Чӗреҫем.

*Хушса юрламалли.*

*1970*

## ПИРĔН ХĔРСЕМ

Кĕвви *Ф. Лукинăн.*

Маттур хĕрсем, чипер хĕрсем,
Сад пахчинчи саркайăксем.
Мĕнпе сире танлаштарас,
Мĕнле сăмах тупса мухтас?

Маттур хĕрсем, чипер хĕрсем,
Çунса тăран хура куçсем,
Сире курсан чун савăнать,
Чĕрем хавас сиксе тапать.

Маттур хĕрсем, чипер хĕрсем,
Çурхи хĕвел чечекĕсем,
Сире ĕçре телей сунса
Юрлас килет хавхаланса.

*1960*

## ЭП ЮРЛАРĂМ

Савăнсан та – эп юрларăм,
Хурлансан та – эп юрларăм,
Юратсан та – эп юрларăм,
Чун çунсан та – эп юрларăм.
Ача чух та – эп юрларăм,
Каччă чух та – эп юрларăм,
Салтакра та – эп юрларăм.
Авлансан та – эп юрларăм,
Ватăлсан та – эп юрларăм,
Çын кулсан та – эп юрларăм,
Чăвашсене шав мухтарăм!

*1993*

## УТСА МАР, ВĔÇСЕ ÇИТЕСЧĔ*

Çурхи кун чуна иленнĕ,
Урамра — хĕлле.
Шур чаршав хитрен чӳхеннĕн
Юр çăвать хуллен.

*Хушса юрламалли:*

Утса мар, вĕçсе çитесчĕ
Чун савни патне,
Юр пĕрчи пулса ӳкесчĕ
Ун чĕрçи çине.

Хĕл ĕлккенĕ, хĕл илемĕ
Пире çупăрлать.
Шур юртан ыйтса илем-и
Çивĕч çил çунат?

*Хушса юрламалли.*

Кил, савни, чунтан кĕтетĕп,
Эс ăна сисен.
Укăлча панче çӳретĕп,
Юр çăвать хуллен.

*Хушса юрламалли.*

*1989*

* Ку сăвва Н. Исмуковпа пĕрле çырнă.

## КĔМĔЛ УЙĂХ ХĂПАРАТЬ

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Йăлтăр-йăлтăр курăнать.
Хĕре каччă ыталать,
Ыталать те чуптăвать.

Ай-яй-ай! ыталать,
Ыталать те чуптăвать.

Кĕмĕл уйăх хăпарать,
Вăрттăн пăхса йăл кулать.
Хĕр каччăран вăтанать,
Çĕмĕрт айне пытанать.

Ай-яй-ай! вăтанать,
Çĕмĕрт айне пытанать.

Шуçăм çути палăрать,
Шăпчăк юрă шăратать,
Каччă хĕре ăсатать,
Çĕр кĕскишĕн кулянать.

Ай-яй-ай! ăсатать,
Çĕр кĕскишĕн кулянать.

*1955*

## ЁМЁР ТĂТĂР ÇУТАЛСА

Ай-хай, тусăм, савнă тусăм,
Ăшшăн пăхрăм сан çине.
Эс туян-ши, сенкер куçăм,
Çамрăк чунăм çуннине?

Ай-хай, юррăм, хӳхĕм юррăм,
Юх эс, кай эс инçене.
Пăрчăканăм, ĕмĕр пурăн,
Хал парсам ман чĕрене.

Ай-хай, пирĕн пурнăç çулĕ
Ĕмĕр тăтăр çуталса.
Ĕмĕт çитĕ, кăмăл тулĕ, —
Пурăнар-и юратса!

*1985*

## ЭП ÇӲРЕРĔМ ÇĔРĔПЕ

Эп çӳрерĕм çĕрĕпе
Хамăр кӳршĕ хĕрĕпе,
Сăмах татнă савнипе,
Хĕвел сăнлă Марьепе.

Эпĕ каччă пуличчен,
Вунсаккăра çитиччен
Курман Марье пеккине,
Ун пек чипер сăнлине.

Кăçал, ылтăн кĕр çитсен,
Уй-хир ĕçĕ вĕçленсен,
Марье манпа килĕшсен
Туй тума та пулать, тен.

*1941*

## АХ, МЁН-МА-ШИ...

*Ватă хусах юрри*

Мăшăрланма çаплах пике тупаймарăм,
Савни тесе çумне тăрса кураймарăм.
Пур кăмăлтан сăмах тупса калаймарăм,
Ах, мĕн-ма-ши хам телее тупаймарăм?

Шуçăмпалах çаран çине тухаймарăм,
Утса-чупса çурхи чечек пухаймарăм.
Саркайăк пек саркаланса юрлаймарăм,–
Ах, мĕн-ма-ши хам телее тупаймарăм?

Мăшăрланма халь те пике тупаймарăм,
Тантăшăмсем, сире ĕçпе юраймарăм,
Хам айăппах хусах пулса эп юлайрăм, –
Ах, мĕн-ма-ши хам телее тупаймарăм?..

*1987*

## ЭС МАНА ЮРАТСАН

Кĕвви *И. Степановăн*

Тĕл пуласчĕ ман, савниçĕм, сана.
Темшĕн-çке пĕччен пит кичем чуна.
Васкаса тухсам хамăр кил умне,
Укăлча тĕлне, сад пахчи çумне.

Кăнтăртан вĕрет ăшă çил хуллен,
Хумханать çаплах пахчари сирень.
Эх, аван, савни, иккĕн тĕл пулсан,
Юрату çинчен ăшшăн калаçсан.

Сар хӗвел пӑхать, ешерет ҫаран,
Авӑтать куккук, янӑрать вӑрман.
Эх, аван, савни, сана ал парсан,
Ик кӑвак куҫу ман ҫине пӑхсан.

Ытарма та ҫук сенкер ҫут ире,
Пахчари сирень пуҫ таять пире.
Эх, аван, савни, телей тупӑнсан,
Эс мана чунтан савса юратсан.

*1970*

## МӖНШӖН-МӖНШӖН КӖТТЕРЕН

Ҫӗнӗ уйӑх, ҫутӑ уйӑх
Ҫӳлте, тӳпере.
Ылтӑн сӑнлӑ аслӑ улӑх
Кӗтет ав пире.

Мӗншӗн-мӗншӗн, савнӑ тусӑм,
Ҫаплах кӗттерен.
Пӑрчӑканӑм, хура куҫӑм,
Ӑҫта эс ҫӳрен?

Ҫывӑх ҫыннӑм, саншӑн, саншӑн
Ҫунать ман чӗре.
Сас пар, тусӑм, эсӗ маншӑн
Хакли тӗнчере.

Ҫӗнӗ уйӑх, ҫутӑ уйӑх
Ҫӳлте, тӳпере.
Ылтӑн сӑнлӑ, аслӑ улӑх
Кӗтет ав пире.

*1982*

## САВНИ, ХĂÇАН КИЛЕН-ШИ?

Савни, ăçта çӳрен-ши,
Мана аса илен-ши,
Мана аса илен-ши, –
Яла хăçан килен-ши?

Савни, кама кĕтен-ши,
Мĕн-ма пиртен писен-ши,
Мĕн-ма пиртен писен-ши, –
Яла хăçан килен-ши?

Савни, сасса илтен-ши,
Чун çуннине сисен-ши,
Чун çуннине сисен-ши, –
Яла хăçан килен-ши?

Савни, çыру кĕтен-ши,
Эп ăçтине пĕлен-ши,
Эп ăçтине пĕлен-ши, –
Яла хăçан килен-ши?

*1991*

## САВНИ

Ял хĕрринче, Тукасра,
Эп савнă хĕр пурăнать.
Вăл доярка – фермăра,
Çунать ĕçшĕн, тăрăшать.

Ылтăн тейĕн ун алли
Ĕçе тĕплĕ тунăран.
Пичĕ çинче – тур палли,
Чипер, хӳхĕм сăн-пуçран.

Унтан хакли, юратни
Пурнăçăмра çук, пулман.
Çав хĕр ĕнтĕ ман савни,
Уншăн мĕн чул эп çунман...

Кĕр çитсессĕн хĕр патне
Каятăпах çураçма.
Сăмах парăп савнине
Ĕмĕр пĕрле пурăнма.

*1982*

## АТЬĂР ВĂЙЙА ТУХАР-И

*Халăх юрри майлă*

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Атьăр вăййа тухар-и те
Çĕнĕ сăвă калар-и?
Пирĕн çине чун савни те
Ăшшăн пăхса култăр-и.

Атьăр вăййа тухар-и те
Çўл тўпене пăхар-и,
Çитмĕл çичĕ çăлтăр пек те
Савăнайса выляр-и?

Атьăр вăййа тухар-и те
Çĕнĕ юрă юрлар-и,
Йĕс шăнкрав пек сасăпа та
Çĕршыв ятне мухтар-и?

Атьăр вăййа тухар-и те
Вăй кĕввине калар-и,
Вăйă илемпе савăнса та
Ĕçре маттур пулар-и?

*1946*

## ТАЛЬЯНКА

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Алла тытрăм çĕн тальянка,
Тăсса ятăм пĕрмине.
Янăратăр кĕмĕл планка,
Савăнтартăр хĕрсене.

Юрламашкăн, ташламашкăн
Пире купăс вăй парать.
Эх, тальянка, кĕмĕл планка,
Выля эсĕ аллăмра.

Урам тăрăх шăнкăр-шăнкăр
Сассу юхтăр шăранса.
Эх, тальянка, кĕмĕл планка,
Юрлар халĕ савăнса.

Ĕçре эпир пурте харсăр,
Юратмастпăр мухтанма.
Эх, тальянка, кĕмĕл сасă,
Çĕкле манăн юррăма.

*1945*

## ИНÇЕ ÇУЛ

Ан хурлан, чипер юл, Марине,
Эп каятăп инçе Çĕпĕре.
Чун шанать юрату вăйлине,
Çав сыхлатăр, упратăр пире.

Поэт чунĕ çапла ĕмĕрех:
Вăл пĕлмест канăç мĕн иккенне.

Ун шутланă çĕре çитмелле,
Ун йăлтах пĕлмелле çĕннине.

Тем пулас пур каяс çул çинче:
Курăнса килмест теççĕ инкек.
Анчах хамăр çĕршыв хўттинче
Инçе çул та чуна çывăх пек.

*1965*

## ÇАМРĂК ĔМĔР ПĔРРЕ ÇЕÇ КИЛЕТ

Кĕвви *Ю. Жуковăн*
*Г. Максимов* та юрра хывнă

Мĕн çитет пурнăçа савнине,
Тус-йышра килĕшў пуррине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, –
Ай мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

Мĕн çитет сын ĕçчен пулнине,
Ыр туни халăхра юлнине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, –
Ай мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

Мĕн çитет выляни-кулнине,
Юратушăн çунса тăнине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, –
Ай мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

Мĕн çитет малалла пăхнине,
Пирте сывлăх, телей пуррине.
Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет, –
Ай мĕн-ма-ши вăл хăвăрт иртет.

*1975*

## ИНҪЕТРИ ТУСӐМА

Савнӑ тусӑм, эсӗ ҫыртӑн,
Ҫыртӑн ӑшӑ ҫырусем.
Тырӑ акрӑн, тырӑ выртӑн,
Ылтӑн санӑн аллусем.

Вӗҫӗ ҫук-мӗн Ҫӗпӗр ҫӗрӗн,
Вӑл пуян хӑй мулӗпе.
Унта эсӗ, чӑваш хӗрӗ,
Ыр ят илтӗн ӗҫӳпе.

Чун савниҫӗм, пӑрчӑканӑм,
Мухтанатӑп санпала.
Ман телейшӗн, мӗнех калӑн,
Эс ҫуралнӑ пулмалла.

*1955*

## ЧИ ХАКЛИ ВӐЛ — ЧУН САВНИ

Кун ҫутипе витре йӑтса
Эп каятӑп шыв ӑсма.
Сар хӗвел пӑхать кулса,
Ҫӗклет ҫамрӑк чунӑма.

Савнипеле пӗрле пулсан
Сӑмах пӗтмест калаҫса.
Ҫӑл шывӗпе витре тулсан –
Каять кӑмӑл уҫӑлса.

Пӗрне-пӗри чунтан савсан –
Мӗн пур унтан аванни!
Пӗрле пулма сӑмах парсан –
Чи хакли вӑл – чун савни!

*1985*

## ТЕЛЕЙЛИ ÇУК МАНРАН

Савнипе курнăçсан,
Килĕшӳлĕх пулсан,
Пĕр-пĕрне юратсан –
Телейли çук манран.

Кĕтнĕ çăлтăр тухсан,
Ялкăшса çуталсан,
Пире ырлăх сунсан –
Телейли çук манран.

Ĕçĕм-хĕлĕм ăнсан,
Мир хĕвелĕ пăхсан,
Тĕнче лăпкă тăрсан –
Телейли çук манран.

* * *

Аслă ял варри – ешĕл сад пахчи,
Унта сар хĕрпе калаçать каччи.
Килнĕ тус каччи инçе çĕрсенчен.
Йывăр кун палли ун пичĕ çинче.

Сарă хĕр сисет ку мĕн паллине,
Пĕлет тăшмансем йĕр хăварнине.
Пăхрĕ те вара çакă йĕр çине
Çурĕ куççульпе каччийĕн питне.

Шăлчĕ куççульне каччи савнинне:
«Пăхсам эс, – терĕ, – уйăх тухнине».
Аслă ял варрри – ешĕл сад пахчи,
Унта сар хĕрпе калаçать каччи.

*1946*

* * *

Кăлтăртатрĕ кăвик кăвакарчăн
Çĕн пӳрт тăрринчи карнисра.
Калаçаççĕ чунтан хĕрпе каччă
Анат кас çумĕнчи пахчара.

Сăмах хушнăн ларать шурă хурăн
Хĕрпе каччă енне пуç тайса.
Ан сӳн эс, юрату, ĕмĕр пурăн
Çамрăк чун-чĕрене ăшăтса!

*1961*

## КАÇХИ ВĂЙĂРА

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Çырма хĕрринче, тăван ялăмра
Туссем, тантăшсем – каçхи вăйăра.
Çĕклет кăмăла хĕрсем юрлани,
Çĕклет кăмăла яшсем ташлани.

Çурхи сад пахчи шап-шур çеçкере.
Хастарлăх сӳнмест хĕрӳ чĕрере.
Ĕçре пит маттур хĕрсем, каччăсем,
Кӳреççĕ илем пурнăçа вĕсем!

Çӳлте, тӳпере – пин-пин çăлтăрсем...
Каçхи вăйăра – ялти çамрăксем.
Килет шурăмпуç, килет çуталса,
Пире пуç тайса, пире ыр сунса!

*1980*

## ХĔР ÇЫРĂВĔ

Аставатăп: пĕрре çурхи каç
Тӳпере çăлтăрсем ялкăшаç,
Эс каларăн мана ун чухне:
«Манас марччĕ нихçан пĕр-пĕрне...»

Çамрăк вăхăт пит хăвăрт иртет:
Уйрăлни виçĕ çул ак çитет.
Çĕнелет тăван ял кунсерен,
Чечекре эсĕ лартнă сирень.

Савнă тусăм, камран пытарас,
Ăшăм саншăн çунать, мĕн тăвас.
Эс ытла та манран аякра,
Уралтан та инçе, Алтайра.

Тен, унта та чылай пуль хĕрсем,
Ху пекех, хĕвел пек хитрисем...
Шутласан кӳлешес те килет,
Анчах пур-ши усси, кам пĕлет?

Тусăм, тусăм, текех ан çунтар,
Хăвăртрах, хальтерех çыру яр.
Эп пырасшăн кăçал сан патна:
Пит кичем чун савнисĕр мана.

## ÇИТРĔ ПИРĔН КĔМĔЛ ТУЙ

Çитрĕ пирĕн кĕмĕл туй!
Пĕрне-пĕри пуç тайса,
Пĕрне-пĕри юратса
Пуçлар мар-и юрлама,
Пуçлар мар-и савăнма?
Туя туй пек тăвар-и,
Тус-тăванлăн пурнар-и?

Çитрĕ кĕтнĕ кĕмĕл туй!
Пирте сывлăх пур чухне
Телей сунар пĕр-пĕрне.
Туй илемне çав кӳрет,
Чун-чĕрене çав çĕклет.
Туя туй пек тăвар-и,
Килĕштерсе пурнар-и?

Çитрĕ пирĕн кĕмĕл туй!
Пĕтĕм пĕлĕш-тантăшсем,
Ытарайми тăвансем,
Пĕрле чухне савăнар,
Çул куркине пушатар.
Туя туй пек тăвар-и,
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и?

## ÇĔМĔРТ ÇЕÇКИ ÇУРĂЛСАН

Çĕмĕрт çеçки çурăлсан,
Шăпчăк юрă пуçласан
Тухап кӳлĕ хĕррине,
Кĕтеп чунăм савнине.

Кӳлĕ лăпкăн хумхансан,
Шурă хурăн пуç тайсан
Епле ырă савнипе
Утма çĕмĕрт хушшипе.

*1956*

## АН ЯТЛА

Хĕвел анса пытансан,
Савни, санпа тĕл пулсан
Мана усал ан кала,
Çапса ан хуç кăмăла.

Чуна пĕрре амантсан,
Çывăх çынна çухатсан
Мĕнле, кампа йăпанан,
Çула кампа эс тухан?

*1969*

## ПĂХСАМ, САВНИ, КАНТĂКРАН

Умра касхи Шупашкар
Сăмах хушать манпалан.
Ăшăма тек ан çунтар,
Пăхсам, савни, кантăкран.

Килет шурă пăрахут
Атăлпала, анатран
Сасă пачĕ çичĕ хут.
Пăхсам, савни, кантăкран.

Чунта хĕрӳ шĕл кăвар –
Чĕрем саншăн çуннăран.
Чипер сăнна ан пытар,
Пăхсам, савни, кантăкран.

*1970*

## ЭП КĔТЕТĔП САНА

Эп кĕтетĕп сана,
Эс кĕтен пуль мана.
Чĕресем тĕл пулсан
Хĕпĕртетпĕр чунтан.

Эп шыратăп сана,
Эс шыран пуль мана.
Пĕрле çумăн ларсан
Калаçатпăр чунтан.

Эп шанатăп сана,
Эс шанан пуль мана.
Пĕр-пĕрне шаннăран
Савăнатпăр чунтан.

*1971*

## САВНИ САЛАМĚ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Савни, санран салам илсессĕн
Кĕтни çитет чун-чĕрене:
Умра тăран, ятуллă эсĕ,
Пăхатăн ăшшăн ман çине.

Савни, санран салам илсессĕн
Тухать шур хурăн куç умне.
Эпир çурхи кунсем çитсессĕн
Сахал-и ларнă ун çумне.

Савни, санран салам илсессĕн
Куратăп уйăх çутине,
Шур акăшсем вĕçсе килсессĕн
Пĕрле иртгернĕ каçсене.

*1963*

* * *

Савнă тусăм, каласамччĕ,
Мана мĕншĕн çунтаран?
Каç пулсассăн эс тухсамччĕ,
Тĕл пуласчĕ санпалан.

Тĕл пуласчĕ, йăпатасчĕ
Çулăм хыпнă чĕрене.
Савнă тусăм, манас марччĕ
Нихăçан та пĕр-пĕрне!

*1960*

## ШУР КĂВАКАЛ ВĔÇТЕРТĔМ

Шур кăвакал вĕçтертĕм,
Шур хут çине ÿкертĕм.
Пĕр сар хĕре сăнарăм,
Ăна куçран ямарăм.

Пурçăн тутăр вĕçтертĕм,
Сар хĕр умне ÿкертĕм,
Ăна куçпа систертĕм,
Чун çуннине пĕлтертĕм.

*1946*

## ЙĂЛТĂРТАТСА ТĂТĂР-И

Йăлтăр-йăлтăр ярапи
Йăлтăртатса тăтăр-и?
Шур тутăрлă шур аппи
Вăй выляма тухтăр-и?
Сарă çÿçлĕ сар каччи
Вăй картинче пултăр-и?
Хамăр кÿршĕ ял ачи
Сарпикене савтăр-и?
Йăлтăр-йăлтăр ярапи
Йăлтăртатса тăтăр-и?
Хĕре каччă юратни
Чыс-хисепре пултăр-и?

*1990*

# АЧА-ПĂЧА ЮРРИСЕМ

## МАНАС МАРЧЧĔ ĔМĔРНЕ

Кĕвви *М. Шуракăшăн*

Тăван чăваш чĕлхине,
Асаттесен парнине,
Упрамашкăн кирлине
Манас марччĕ ĕмĕрне.

Тăван халăх туприне,
Унăн йăли-йĕркине,
Упрамашкăн кирлине
Манас марччĕ ĕмĕрне.

Чăваш çĕр пин юррине,
Çĕр пин хитре тĕррине
Упрамашкăн кирлине
Манас марччĕ ĕмĕрне.

*1993*

## АННЕ

*Кĕвви Ф. Лукинăн*

– Кам-ха пире юратса,
Ачашласа, йăпатса,
Чунне парса ÿстерет,
Çунат пиллет,
Вĕçтерет?
– Анне.

– Кам-ха эпир чирлесен,
Аран-аран вĕренсен,
Туслăх мĕнне пĕлмесен
Пăшăрханать чĕререн?
– Анне.

*1978*

## УРĂХ ÇУК ТĔНЧЕРЕ

Хаклă çын аннерен,
Хаклă çын аттерен
Урăх çук тĕнчере.
Çутă çăлтăр вĕсем,
Хаклă сывăх çынсем.
Вĕсене ыр сунса,
Чĕререн юратса
Эп васкап пулăшма,
Парнелеп юррăма.

*1990*

## ЧӖРЕРИ ТУЙӐМ

Кӗвви *А. Тогаевӑн*

Йӗс шӑнкӑрав пек сассӑмпа,
Хам чӗрери юррӑмпа
Ман пуласчӗ ӗмӗрех
Пӗрле Тӑван ҫӗршывпа.

Хамӑн ӑшӑ чунӑмпа,
Пӗтӗм кӑмӑл-туйӑмпа
Ман пуласчӗ ӗмӗрех
Пӗрле Тӑван ҫӗршывпа.

Мӗнпур вӑйӑм-халӑмпа,
Мӗнпур ӗҫлӗ халӑхпа
Ман пуласчӗ ӗмӗрех
Пӗрле Тӑван ҫӗршывпа.

*1945*

## ЧӐВАШ ЮРРИ, ЯНРА

Мӑнукӑм, эп санпа пӗрле, –
Чӑваш юрри, янра, кӗрле!
Савӑнтарсам тӑвансене,
Ялан ҫӗкле чун-чӗрене.
Эпир саван чӑваш юрри
Пире савса телей пиллет.
Ӑна итлет Ҫӗршыв-анне
Ҫӗкленӗрен ҫынсен чунне!

*1988*

## ЭПИР ПУРТЕ ӖҪЧЕНСЕМ

Кӗвви *В. Петрован*

Ирхи шуҫăм ҫутипе,
Эпир пĕрле, эртельпе,
Кар! тухатпăр ĕҫлеме,
Чун хĕлхемне ҫĕклеме.

Анлă Атăл хĕрринче
Хальхи Чăваш ҫĕрĕнче
Чи хĕрӳллĕ ĕҫ вĕрет.
Ҫĕнĕ пурнăҫ вăй илет.

Эпир пурте ĕҫченрен
Паллă пулнă ĕлĕкрен.
Аслă, туслă ҫемьере
Халь тĕпелте, хисепре.

Чун-чĕремĕр хĕлхемне
Сӳнтерес мар ĕмĕрне.
Юрлар савнăҫ юррине,
Мухтар ҫĕршыв-аннене!

*1966*

## ПИРӖН КӲЛӖ

Пирĕн ялăн хĕрринче,
Ҫĕн укăлча ҫумĕнче
Кăвак пысăк кӳлĕ пур.

Ҫакă ҫутă кӳлĕре,
Пырса курăр-ха пĕрре,
Темĕн чухлĕ пулă пур.

*1950*

## АСАТТЕПЕ АСАННЕ

Асаттеçĕм, асатте,
Асаннеçĕм, асанне,
Сирĕн вырăн – тĕпелте,
Çĕклер кил-çурт илемне.
  Çапла пурте пĕрле чух
  Юрлар савнăç юррине...

Асаттеçĕм, асатте,
Асаннеçĕм, асанне,
Эпир, сирĕн мăнуксем,
Çурхи çеçпĕл çеçкисем.
  Çапла пурте пĕрле чух
  Юрлар савнăç юррине...

Асаттеçĕм, асатте,
Асаннеçĕм, асанне,
Пуç таяр-и пĕр-пĕрне,
Упрар пурнăç илемне!
  Çапла пурте пĕрле чух
  Юрлар савнăç юррине...

*1993*

## САД ПАХЧИНЧИ УЛМУÇÇИ

Сад пахчинчи улмуççи –
Çав териех чун уççи.
Ана лартнă Униççе,
Хăй кайнă çеç вунвиççе.
Пĕтĕм кил-йыш савăнать,
Униççене тав тăвать:
«Сан пек пурте тăрăшсан,
Ĕçе чунтан юратсан
Ял илемлĕн курăнать,
Садра шăпчăк юр юрлать...»

## ЯНӐРАТЬ ВӐРМАН

Халӑх юрринчен кӗвӗленӗ
Кӗвви *Ф.Лукинӑн*

Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлсан,
Садсем шур тум тӑхӑнсан
Авӑтать куккук:
Ку–ку! Ку–ку!
Янӑрать вӑрман.

Сар хӗвеллӗ ӗшнене
Хӗрсем тухсан сертене
Авӑтать куккук:
Ку–ку! Ку–ку!
Янӑрать вӑрман.

Уй-хир, ҫаран ешерсен,
Ҫурхи тӗнче чӗрӗлсен
Авӑтать куккук:
Ку–ку! Ку–ку!
Янӑрать вӑрман.

*1965*

## УЛАТАККА

Так! так! таккать
Улатакка,
Шырать, тупать
Хурт-кӑпшанка.

*1950*

## ЭПИР — ПУЛАС РАБОЧИСЕМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Эпир пулас рабочисем,
Ĕçе савса ўсен çынсем,
Çунат саран ăстаçăсем,
Çĕршыв кĕтен
строительсем, –
Эпир пулас рабочисем.

Эпир пулас рабочисем,
Вĕренўре хастаррисем,
Çĕн самана хунавĕсем,
Хĕрўллĕ пурнăç
çутисем, –
Эпир пулас рабочисем.

Эпир пулас рабочисем,
Ыр ĕмĕтпе çунакансем,
Малтан мала утакансем,
Ĕçре телей туптакансем, –
Эпир пулас рабочисем.

*1978*

## ПЕТЮК ПИЧЧЕ

Петюк пичче салтакра,
Пиртен инçе, аякра.
Çўллĕ сăртлă вырăнта
Сыхă тăрать хуралта.
Хуласене, ялсене,
Мĕнпур Раççей халăхне
Çирĕп сыхлать ман пичче
Тăван çĕршыв чиккинче.

*1959*

## ÇУРКУННЕ

Кĕвви *А. Токаревăн*

Сар хĕвел çĕре
Тасатать юртан.
Лăпкă çил вĕрет
Ăшă кăнтăртан.

Карти-картипе
Кайăк хур килет.
Уй-хир çийĕпе
Тĕтре сирĕлет.

Ачасем пурте
Тулта, урамра,
Ĕçлеççĕ хĕрсе,
Лартаççĕ йăмра.

Йывăçсем çине
Маттур ачасем
Çакрĕç çуркунне
Шăнкăрч йăвисем.

*1962*

## ТЕТТЕ

Упа ўкрĕ урайне,
Хуçрĕ хăрах тяппине.
Хĕрхенетĕп эп ăна,
Хамăн хаклă теттене.

*1950*

## ЙЫВĂÇСЕМ ĔРЧЕТЕР

Эп ыйтатăп сиртен
Пĕтĕм чун-чĕререн:
Вăрмансен илемне,
Ешерен садсене
Упрама вĕренер, –
Йывăçсем ĕрчетер.

Эп ыйтатăп сиртен
Пĕтĕм чун-чĕререн:
Кайăксем вĕçнине,
Вĕсен шеп юррине
Хаклама вĕренер, –
Йăвасем хатĕрлер.

Эп ыйтатăп сиртен
Пĕтĕм чун-чĕререн:
Тăван ял ыр ятне,
Ун чысне, илемне
Кулленех ӳстерер, –
Кулленех çĕнетер.

Эп ыйтатăп сиртен
Пĕтĕм чун-чĕререн:
Лартар-ха йывăçсем,
Йăмрасем, çăкасем,
Ĕçпеле çитĕнер, –
Çĕршыва хисеплер.

*1965*

## КАЙӐК ХУРСЕМ

Тимуш, тусӑм, тухса кур:
Кикак-кикак кайӑк хур
Вӗҫсе килет кӑнтӑртан,
Ӑшӑ, шӑрӑх вырӑнтан.

Пирӗн кайӑк хурсене,
Хамӑр ҫывӑх туссене,
Савса кӗтсе илмелле,
Кайри – мала! темелле.

Хитре сасӑ – тӳпере,
Виҫӗункӑ пӗлӗтре.
Кикак-кикак кайӑк хур,
Тимуш, часрах тухса кур.

*1965*

## КАРАП

Ӗҫ вылять аллӑмра
Хам маттур пулнӑран.
Турӑм эпӗ карап
Ҫӑкапа юманран.

Ҫуркунне ҫырмара
Шыв юхать юрласа.
Ярӑнать ман карап
Ту-ту-ту! кӑшкӑртса.

*1950*

## ПИРЕ САЛАМЛАТЬ

Çӳлте, тӳпере
Сар хĕвел хĕртет.
Умра – çуркунне, –
Шур юр ирĕлет.

Мĕн чухлĕ ача
Тулта, урамра.
Ĕçлеççĕ хĕрсе,
Лартаççĕ йăмра.

Шăнкăрч савăнса
Юрă шăрататать,
Çунатне çапса
Пире саламлать.

*1936*

## ÇӲРЕН УТПА

Кĕвви *А. Тогаевăн*

Урам варринче
Çӳрен ут çинче
Ларать ман пичче,
Чĕлпĕр – аллинче.
Йăлтах тĕлĕнен
Маттур пиччерен:
Çунать чĕререн
Урхамах тесен.
Вăл хăй çулĕпе
Вунвиççе çитет,
Çӳрен учĕпе
Çил пек вĕçтерет.

*1936*

## ЫЛТĂН ХĔВЕЛ

Кĕвви *И. Степановăн*

Ылтăн хĕвел, сар хĕвел
Ирĕлтерет шур юра.
Çил чупса кĕрсе хĕве
Уçăлтарать кăкăра.

Петюк пĕр сăрт айккинче
Пĕчĕк пĕве пĕвелет,
Сарă хĕвел ăшшинче
Çĕнĕ юрă кĕвĕлет.

Шывĕ тулать пĕвене,
Петюк чунĕ савăнать.
Ярать пĕчĕк киммине, –
«Карап» çула ыткăнать.

Ылтăн хĕвел, сар хĕвел
Ирĕлтерет шур юра.
Петюк тунă çут пĕве
Кĕмĕл пекех йăлтăрать.

## КĂРАНТАШĂМ, КĂРАНТАШ

Кăранташăм, кăранташ,
Эсĕ манăн тус-юлташ.
Пуçра мĕн-мĕн пуррине
Йăлт çыратăн хут çине.

Лайăххине, ыррине,
Пире усă кӳнине
Парнелетĕн эс пире,
Хăваратăн ĕмĕре.

## ПИРĔН ХАКЛĂ ХĂНАСЕМ

Кĕвви *Т. Фандееван*

Инçе çĕртен, кăнтăртан,
Сар хĕвеллĕ вырăнтан
Вĕçсе килчĕç шăнкăрчсем,
Пирĕн хаклă хăнасем.

Пахчасенче, хирсенче,
Улăх-çаран варринче
Çунат çапса халь вĕсем
Шăратаççĕ юрăсем.

Эпир тунă шур пÿртсем,
Çĕнĕ, ăшă йăвасем, –
Пит тарават вĕсене,
Кайăк тусăмăрсене.

*1962*

## КĂСĂЯ

Читлĕхре чипер кăна
Пĕр кăсăя пурăнать.
Вăл тухасшăн хушăкран,
Анчах хăрать кушакран.

*1959*

## КРОЛИК

Туса панă пирĕн кролик
Çичĕ çăвăр – çич илем.
Пурăнмашкăн пултăр ирĕк,
Эпĕ вырăн хатĕрлем.

*1959*

## ЙЁКЕЛ

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Юманлăхра, вăрманта,
Мĕн чул йĕкел, тупата!
Ăçта унта ĕлкĕрен.
Ăçта хурса пĕтерен.
Ку вăл пирĕн мулăмăр,
Ăна эпир пухрăмăр.

Вăрман лартма тесенех
Эпир пурте эртельпех
Янкăр тăрă ирхине
Пăла шывĕ хĕррине
Пит васкаса кайрăмăр,
Пин-пин йĕкел лартрăмăр.

Халĕ Пăла хĕрринче.
Пăру ферми çумĕнче,
Шăтса тухнă юмансем -
Хамăр лартнă йĕкелсем.
Эпир вăрман турăмăр,
Ун уссине куртăмăр.

*1975*

## ХУРĂН ÇУЛÇИ

Татса илет Марине
Пĕчĕк хурăн çулçине.

Сисмест иккен Марине
Хурăн сассăр йĕнине.

Туймасть иккен Марине
Ăна анне лартнине.

– Ил аллуна, Марине,
Ан тив хурăн çулçине!

Аван мар-çке, Марине,
Çапла туртсан ху çÿçне!

Пуçне чикрĕ Марине,
Ним чĕнмерĕ аннене.

Тин ăнланчĕ Марине
Хăй айăпа кĕнине.

*1959*

## ЛАРТАР СИМĔС ЙЫВĂÇСЕМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Айтăр тухар, тантăшсем,
Пурте аслă урама.
Лартар халĕ йывăçсем:
Йăмра, хурăн, хурама.

Пирĕн ешĕл йывăçсем
Ÿсчĕр анлăн кашласа.
Вĕсем çинче кайăксем
Ларччăр юрă юрласа.

Пирĕн аслă урамсем
Илемленччĕр çулсерен.
Эпир уншăн, ачасем,
Тăрăшар-ха чĕререн.

Айтăр тухар, тантăшсем,
Пурте аслă урама.
Лартар симĕс йывăçсем:
Йăмра, хурăн, хурама.

*1955, 1966*

## ШĂНКĂРЧ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Хĕвел тухса сарăлать
Симĕс вăрман хыçĕнчен,
Шăнкăрч юрă шăрататать
Пирĕн йывăç пахчинче.

Ванюк пăхса савăнать
Çепĕç шăнкăрчă çине.
Мĕншĕн тесен тунă-çке
Вăл хăй унăн йăвине.

Хĕвел тухса сарăлать
Симĕс вăрман хыçĕнчен.
Шăнкăрч юрă шăрататать
Пирĕн йывăç пахчинче.

*1966*

## ПУЛĂШАТĂП АТТЕНЕ

Кĕвви *В. Ходяшевăн*

Ир-ирех эпĕ тăратăп,
Пулăшас теп аттене.
Тăхăнатăп сăран атă,
Илеп пĕчĕк витрене.

Вара эпĕ уттаратăп,
Тухап хамăр çурт çумне,
Шыв ăсатăп, шăваратăп
Улма йывăççисене.

*1962*

## ХУРĂН МĔНШĔН ТЕРТЛЕНЕТ

Такам хурăн вуллине
Каснă мар-и ирхине?
Шыв юхать халь, куççуль пек,
Çак вырăнтан кунĕпе.

Шурă хурăн тертленет,
Пуçне уснă çĕрелле.
– Пулăшăр-ха, килĕр! – тет.
Унта пирĕн çитмеллех.

Питлер чунсăр çынсене,
Тытса чарар иртĕхме.
Çĕр-аннемĕр илемне
Парас марччĕ пĕтерме!

*1961*

## УТАРТА

Сăр хĕрринчи вăрманта,
Чечек нумай вырăнта,
Пĕр пĕчĕк пÿрт курăнать,
Унта мучи пурăнать.
Вăл – ман мучи, çакăнта,
Çĕр вĕллеллĕ утарта,
Хĕрсе ĕçлет, хурт пăхать,
Çу çитсессĕн пыл пухать.
Сăр хĕрринчи вăрмана,
Чечек нумай вырăна,
Юри килтĕм хурт пăхма,
Хам мучие пулăшма.

*1960*

## ÇЫРМА ХĔРРИНЧЕ

Кĕвви *В. Ходяшевăн*

Çырма хĕрринче,
Йăмра айĕнче,
Сар хăмăш кашлать,
Çилпе хумханать.

Хăмăш хушшинче,
Пĕчĕк сак çинче,
Ларать Лариван
Иртенпех паян.

Пăхать вăлтине,
Юсать ăманне,
Савăнать чунтан
Пулли çаклансан.

*1960*

## ПОХОДРА

Кĕвви *В. Ходяшевăн*

Эпир юрататпăр
Тĕпчеме, пĕлме.
Похода тухатпăр
Ушкăнпа пĕрле.

Çул çинче наянлăх
Сухалать, пĕтет.
Пире тус-тăванлăх
Çĕнĕ вăй пиллет.

Тухать вăйлă тăвăл,
Аслати кĕрлет,
Çапах шухăш-кăмăл
Малаллах чĕнет.

Шанчăклăн уҫатпăр
Пурте отрядпа.
Киле таврăнатпăр
Тулли кăмăлпа.

*1962*

## СĂНАНĂ-И ИРХИНЕ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Сăнанă-и ирхине
Хĕвел хĕлхем сапнине,
Çӳрен лаша çилхине,
Çутă ылтăн тĕслине.

Сăнанă-и ирхине
Кĕмĕл сывлăм ӳкнине,
Ирхи хĕвел шевлине
Чĕкеç чĕппи ĕçнине.

Сăнанă-и ирхине
Хĕвел ташша янине,
Сарă тулă пуссине
Ыталаса илнине.

Сăнанă-и ирхине
Эпир çунат сарнине,
Çĕре, пĕтĕм тĕнчене
Хĕвел тытса тăнине.

*1971*

## ПУТЁР-ПУТЁР ПУТЕНЕ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Путĕр-путĕр путене
Туять хĕвел ăшшине.
Ирех парать сассине
Шăрантарать юррине.

Путĕр-путĕр путене
Савать ҫутă тĕнчене,
Кĕтет ĕҫчен ҫынсене
Ылтăн тулă пуссине.

Путĕр-путĕр путене!
Сасси каять инҫене,
Мухтать уй-хир ĕҫченне,
Мухтать Ҫĕршыв илемне!

*1988*

## АЧАНА

Ачам, ӳс эс, пысăк пул,
Сан умăнта – аслă ҫул.
Ҫут хĕвел пек сăнупа,
Кăмăлупа, чунупа
Пире ялан савăнтар,
Ĕмĕр кур эс пархатар!

Ачам, ӳс эс, пысăк пул,
Сан умăнта – аслă ҫул.
Чипер, ҫепĕҫ сассупа,
Илĕртӳллĕ юррупа
Илем кӳр эс ҫуртăма,
Ҫĕкле вăйăм-халăма!

*1970*

## АННЕ МАНА ҪУНАТ ПИЛЛЕТ

Анне мана ҫунат пиллет,
Ытарайми чӗкеҫӗм тет,
Чӗкеҫӗм тет ӑс вӗрентсе,
Ӑс вӗрентсе, хисеплесе.

Анне мана телей пиллет,
Ҫурхи чипер хӗвелӗм тет,
Хӗвелӗм тет юратнипе,
Юратнипе, савӑннипе.

Анне мана кун-ҫул пиллет,
Тӑван кил-ҫурт тӗрекӗ тет,
Тӗрекӗ тет куҫран пӑхса,
Куҫран пӑхса, чунтан шанса.

*1978*

## АННЕ ПАНӐ ПАРНИНЕ...

Анне панӑ парнине,
Симӗс пурҫӑн кӗпине,
Ҫав териех хитререн
Эп ямастӑп ҫийӗмрен.

Атте панӑ парнине,
Ҫӳл кӗлеллӗ аттине,
Ытла кӑмӑл килнӗрен
Тӑхӑнатӑп кунсерен.

Аппа панӑ парнине,
Шур ҫӳҫеллӗ тутрине,
Кӗр кунӗсем ҫитнӗрен
Эп ҫыхатӑп каҫсерен.

*1970*

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

*С. Никитина* кĕвĕленĕ

Асамат кĕперĕ
Çӳлте, тӳпере.
Ак хĕвел тĕрлерĕ:
Сурпан – çеçкере!

Асамат кĕперĕ
Ыталать çĕре.
Пуç тайса пиллерĕ
Тĕррине пире.

Асамат кĕперĕ
Сар хĕр пек хитре.
Юлчĕ ун илемĕ
Пирĕн сăн-питре!

*1988*

## САВĂНАТЬ САНЮК

Авăтать куккук,
Янăрать вăрман.
Ман йăмăк Санюк
Ыйтать куккукран:
– Тата миçе çул
Пурăнма сунан?..
– Ялан маттур пул,
Ĕçчен пул ялан,
Ун чух эс, Санюк,
Нумай пурăнан, –
Тет ăна куккук,
Савăнать Санюк.

*1990*

## НАРТ-НАРТ КĂВАКАЛ

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Нарт-нарт кăвакал
Кÿлĕ тавра çаврăнать,
Ик çунатне шарт çапать.

Нарт-нарт кăвакал
Кÿлле чăмать, çухалать,
Лăпкă шыва хумхатать.

Нарт-нарт кăвакал
Шывран тухать, савăнать,
Сар сăмсине вылятать.

Нарт-нарт кăвакал
Чĕпписене йыхăрать,
Киле ертсе таврăнать.

*1962*

## НАТАЛИ

Урай тулли пукане
Сарса хунă Натали.
Хăй пĕрмаях калаçать,
Çав териех савăнать.
– Акă курăр, тракторпа
Суха тăвать, – тет, – аппа.
Трактор хуллен, майĕпен
Шăвать урай варрипе.
Кунтах çĕнĕ грузовик
Сасă парать: пик! пик! пик!
– Ун шоферĕ Михали –
Ман пичче, – тет, – Натали.

*1950*

## ХӖЛЛЕ

Кӗвви *Н. Карлинӑн*

Лапка-лапка юр ҫӑвать,
Хура ҫӗре шуратать,
Хура ҫӗре шуратать,
Мамӑк сарнӑн туйӑнать.

Вӑштӑр-вӑштӑр ҫил вӗрет,
Пите сивӗ чӗпӗтет,
Пите сивӗ чӗпӗтет,
Хӗл ҫитнине пӗлтерет.

Ача-пӑча ярӑнать,
Тӑвайккине якатать,
Тӑвайккине якатать,
Хӗл кунӗпе савӑнать.

*1960*

## ШУРӐ ЮР

Ҫӗр хураччӗ...
Халь шап-шур,
Ҫӗрӗпеле ҫурӗ юр.
Ҫавра кӳлӗ варринче,
Мамӑк сарнӑ пӑр ҫинче,
Ача-пӑча ярӑнать,
Хӗл кунӗпе савӑнать.

*1960*

## КУЯН

*Кĕвви Ф. Лукинăн*

Сикрĕ тухрĕ вăрмантан
Пĕр куян.
Пăхкаларĕ унталла,
Кунталла.

Йăпшăнчĕ вăл майĕпен
Юр çумне,
Пытанасшăн çынсенчен
Кĕрт хыçне.

*1969*

## КАМ ШУРАТНĂ...

Пăхса çаврăн таврана –
Çĕр хураччĕ тин кăна,
Куратăн-и йăмрана,
Кам шуратнă халь ăна?
Тĕлĕнтерет вăл мана –
Кам шуратнă халь ăна?
Хĕл пуçланнă, мĕн калас.
Йĕлтĕр сырас, ярăнас!

*1960*

## УПА

Упа, упа, утаман,
Ăна тунă шур юртан.
Ăна тунă пит аван
Пĕчĕк ача сар Иван.

*1948*

## ЁЛКĂРА

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Ванюк, Ванюк, тух кунта,
Юрă юрла пирĕнпе.
Симĕс чăрăш, куратна,
Йăлтăртатать илемпе.

Ванюк, Ванюк, пирĕнпе
Хĕл Мучине алă пар,
Ăна Çĕн çул ячĕпе
Ырă кун-çул сунар-ха.

Ванюк, Ванюк, куратна? –
Мĕн чул илем таврара.
Пире хисеп, чыс, мухтав
Хамăр тăван çĕршывра.

Ванюк, Ванюк, пирĕнпе
Юрă юрла савăнса.
Аслă çĕршыв çиййĕпе
Юрă кайтăр янраса.

*1962*

## САР АВТАН

Пĕр ирхине автанран
Ыйтать пĕчĕк шăллăм ман:
– Кик-ки-ри-кук сар автан,
Мĕншĕн хытă авăтан?
– Çĕнĕ вите шур чултан
Туса пачĕç, – тет автан.

*1950*

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Кĕвви *И. Степановăн*

Симĕс чăрăш лартрăмăр
Сăрлă урайне.
Хĕрлĕ çăлтăр çакрăмăр
Ёлка тăррине.

*Хушса юрламалли:*

Çитрĕ Çĕнĕ çулăмăр –
Савнăç таврара.
Юх эс, пирĕн юррăмăр,
Уççăн янăра.

Хӳхĕм юрă хыврăмăр
Мĕнпур йышпала.
Ӳс эс, çĕрĕм-шывăмăр,
Ут эс улăпла.

*Хушса юрламалли:*

Ан сӳн, çирĕп паттăрлăх,
Ялкăш чĕрере.
Сывă пул эс, çамрăклăх,
Ырлăх кӳр пире.

*Хушса юрламалли.*

## ВАНЮК, МĔНШĔН ЭС НАЯН?

Кĕвви *И. Степановăн*

П ĕ ч ч е н :

Ванюк, мĕншĕн эс наян?

Çӳçӳ вăрăм – кастарман.

Х о р :

Ай, ай! Ванюк, аван мар,
Тураса та якатман.
Ай, ай! Ванюк, аван мар,
Наянланма кирлĕ мар.

П ĕ ч ч е н :

Ванюк, мĕншĕн эс наян?
Чĕрнӳ вăрăм – кастарман.

Х о р :

Ай, ай! Ванюк, аван мар,
Шăлу хура – тасатман.
Ай, ай! Ванюк, аван мар,
Наянланма кирлĕ мар.

П ĕ ч ч е н :

Ванюк, мĕншĕн эс наян?
Пурте тăнă – эс тăман.

Х о р :

Ай, ай! Ванюк, аван мар,
Пушмакна та тастман.
Ай, ай! Ванюк, аван мар,
Наянланма кирлĕ мар.

*1957*

## ЎССЕН ЭСӖ КАМ ПУЛАН?

Кӗвви *Ф. Лукинăн*

Эпӗ ыйтрăм Лёньăран:
«Ўссен эсӗ кам пулан?»

Лёня: «Лётчик пулап, – тет, –
Самолетпа вӗҫеп», – тет.

Эпӗ ыйтрăм Тольăран:
«Ўссен эсӗ кам пулан?»

Толя: «Тухтăр пулап, – тет, –
Ҫын чирлесен - чӗртеп», – тет.

Эпӗ ыйтрăм Кольăран:
«Ўссен эсӗ кам пулан?»

«Комбайнёр эп пулап, – тет,
Ылтăн тулă выраn», – тет.

*1977*

## ТРАКТОРПА

Эпӗ ўсӗп, пысăк пулăп,
Суха тăвăп тракторпа.
Ăнса пулӗ сарă тулă,
Ял-йыш пуйӗ тырпулпа.
–Тра-та-та! Тра-та-та!
Эпӗ пырăп тракторпа.

*1965*

## ТИЛӖ

Кӗвви *Ф. Лукинӑн*

– Тиллит-тиллит тилӗ тус,
Ӑҫта каян, тилӗ тус?
–Васкап эпӗ ялалла.
Манӑн чӗпсем тытмалла.

– Ах! Пӗлмен-ҫке халиччен
Эсӗ усал иккенне.
Эп систерӗп сан ҫинчен
Хамӑр касри вӗшлене.

*1960*

## КАЧАКА

Кача ури качака,
Икӗ вӑрӑм мӑйрака,
Кӗрсе кайнӑ чӑлана,
Тӑкса янӑ хӑймана.

Качӑр-качӑр качака,
Кукӑр-макӑр мӑйрака,
Кӗнӗ кайнӑ пахчана,
Ҫинӗ тутлӑ кӑшмана.

Мекек-мекек качака,
Картлӑ-картлӑ мӑйрака,
Картана хурам хупса –
Ан ҫӳре тек тустарса.

*1977*

## ПЁЧЁК САР ХЁР МАРИНЕ

*Кĕвви В. Ходяшевăн*

Пĕр хĕвеллĕ ирхине
Анчĕ  Кĕтне хĕррине
Пĕчĕк сар хĕр Марине.

Тăсать хуллен аллине,
Кĕрет хумсем хушшине
Пĕчĕк сар хĕр Марине.

Хĕвел  анать шыв çине,
Ытталать ун шевлине
Пĕчĕк сар хĕр Марине.

*1962*

## КЁРКУННЕ

Хĕвел пăхать майĕпен:
Çитрĕ ылтăн кĕркунне.
Сăр вăрманĕ пит хитрен.
Уртса ячĕ  сар тумне.

Çул тытаççĕ кайăксем
Инçе çĕре, кăнтăра.
Пухаç ĕçчен аппасем
Хирти йĕтĕн-кантăра.

Ял-йыш вĕçлет хир ĕçне,
Тырпул кĕрет пӳлмене.
Пуян, тулăх кĕркунне
Савăнтарать çынсене.

*1969*

## ÇУРХИ ТАШĂ

Кĕвви *Г. Жирбюн*

Ташă пуçлăр, ташă пуçлăр, тантăшсем,
Юрлăр савăк, юрлăр хӳхĕм юрăсем.
Мĕнле лайăх çуркунне,
Юхтăр юрă инçене.

Эпир çамрăк, эпир çамрăк ĕçченсем,
Çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ пурнăç калчисем.
Мĕнле лайăх çуркунне,
Юхтăр юрă инçене.

Çутă ĕмĕт, çутă ĕмĕт чĕрере,
Çиçтĕр ĕмĕр, çиçтĕр ĕмĕр-ĕмĕре,
Мĕнле лайăх çуркунне,
Юхтăр юрă инçене.

*1965*

## ШУРĂ ПĂРАХУТ

Шурă, шурă пăрахут
Сасă пачĕ виçĕ хут.
Сывпуллашрĕ пирĕнпе,
Шур Шупашкар хулипе.
Вăл çул тытрĕ çӳлелле,
Чулхуламăр еннелле.
Йĕри-тавра кайăксем –
Чарлансемпе чĕкеçем...
Шурă, шурă пăрахут,
Çăлтăр пекех хăй çап-çут,
Мана чĕнет, илĕртет:
– Ӳссен матрус пулăн, - тет.

*1970*

## КĔТЕРУК

Кĕвви *Ф. Лукинăн*

Чăн та чипер - чиперук,
Пирĕн пĕчĕк КĕтеРУК.
Каять ĕне фермине
Пулăшмашкăн аннене.

Ферма тулли пăрусем:
Хăмăррисем, улисем,
Чăлтăр хушка пуçлисем -
Кĕтерукăн тусĕсем.

Пирĕн йăмăк вĕсене
Сĕт ĕçтерет, ачашлать,
Кашни кунах ирхине
Уçăлтарма кăларать.

## ВĂРĂ КУШАК

Кушак пӳртре
Мăр-мăр мăрлать,
Сар чӳлмекрен
Хăйма вăрлать.

Тытрăм хăйма
Вăрлакана,
Ура тапса
Ятлап ăна.

Кун пек ялан
Эс хăтлансан
Шăши тытма
Йăлтах манан.

## ПЫЛ ХУРЧЁСЕН ХУЛИ

Ял çумĕнче Çăкасар.
Унта çуртсем тăп-тулли.
Вăл мĕскер-ши? Паллашар, -
Пыл хурчĕсен çĕн хули.
Аякранах илтĕнет
Ылтăн хуртсем сĕрлени.
Уçса ярать чĕрене
Вĕсем маттур, ĕçченни...
Мирун мучи çакăнта,
Хитре, сиплĕ вăрманта,
Çич çул ĕçлет, хурт пăхать,
Çулсеренех пыл пухать.
Эпир ăна пулăшма,
Хурт-хăмăра сыхлама
Çӳретпĕр ак ушкăнпа
Ыра шухăш-кăмăлпа.

## ПИРĔН ЕН ÇĂКАЛĂХ

Пирĕн ен çăкалăх –
Авалхи вăрман.
Çынсем ыр курмалăх
Пуян кăмпаран.

Кĕр енне кайсассăн
Кăрăç пуç йăтать,
Сассăр та мăнаçлăн
Çĕкленсе тухать.

Хыр кăмпи татмалăх
Картипе ларать.
Пирĕн ен çăкалăх
Ырлăхне парать.

## МИТРАХВАН

Кĕвви *И. Степановăн*

Митрахвана мĕн çитмест?
Каланине итлемест,
Ачасене вăрçтарать,
Кӳрентерет, макăртать.
Эх, Митрахван, Митрахван,
Сан пек ача эп курман.

Митрахвана мĕн çитмест?
Çынсен ĕçне хĕрхенмест,
Хуçать йывăç туратне,
Татать çĕмĕрт çеçкине.
Эх, Митрахван, Митрахван,
Сан пек ача эп курман.

Митрахвана мĕн çитмест?
Пĕр чĕптĕм те ĕçлемест,
Пĕлмест уй-хир ăçтине,
Çăкăр мĕнле пулнине.
Эх, Митрахван, Митрахван,
Сан пек ача эп курман.

Митрахвана мĕн çитмест?
Вăл тăрăшмасть, вĕренмест,
Çук ĕçĕпе мухтанать,
Куллен йытă хăвалать.
Эх, Митрахван, Митрахван,
Сан пек ача эп курман.

*1975*

15*

## СӐПКА ЮРРИ

Кӗвви *Г. Хирбюн*

Пепкеме,
Чӗппӗме –
Ыйхине
Тутлине.
Ҫӗнӗ уйӑх хӑпарать,
Йӑлтӑр-йӑлтӑр курӑнать.

Улмине,
Хӗрлине –
Ачине,
Санине,
Пӗр сас-чӳ ҫук таврара,
Ҫывӑр канлӗ сӑпкара.

Тӗлӗкре
Тӳпере
Эс вӗҫен,
Хӗпӗртен.
Сывлӑш уҫӑ, тап-таса,
Ярӑн хыттӑн ыткӑнса.

Юррине,
Хитрине –
Пепкеме,
Чӗппӗме.
Ҫывӑр, чунӑм, ҫут-ирччен,
Пӳрте шуҫӑм кӗриччен.

*1955*

## СĂПКА ЮРРИ

Тус-тăванăм, килсе кур, –
Пирĕн пĕчĕк Ульха пур.
Кăмăлĕпе, чунĕпе,
Сар хĕвел пек сăнĕпе
Савăнтарать аннене,
Савăнтарать аттене.
Тус-тăванăм, килсе кур, –
Пирĕн пĕчĕк Ульха пур.
Сиксе вылять сăпкара,
Йăл-йăл кулать алăра.
Пуплет пĕчĕкçĕ пепке
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхипе.
Тус-тăванăм, килсе кур, –
Пирĕн пĕчĕк Ульха пур.
Вăл туртăнать çўлелле,
Элкер çăлтăр еннелле.
Ачам, ялан маттур пул,
Пехиллетпĕр ырă çул.

*1962*

## АЧАМ, ЭСĔ СĂПКАРА

Ачам, выртсам сăпкана,
Сиктерем-ха эп сана.
Çывăр лăпкă, ан вăран,
Эсĕ паттăр ăруран.

Ачам, эсĕ сăпкара,
Аçу - çурхи акара,
Хире тухнă тракторпа,
Ĕçлет пĕрле ял-йышпа.

Ачам, эсĕ сăпкара,
Санюк аппу - фермăра.
Ĕне пăхать, сĕт сăвать,
Хăй ĕçĕпе савăнать.

Ачам, эсĕ сăпкара,
Пĕр сас-чӳ çук таврара.
Ыйху тутлă пултăрах,
Ӳссе çитĕн хăвăртрах!

*1981*

## АЧАМ, ЛĂПКĂН ÇЫВĂРСАМ

Хуллен-хуллен сик, сăпкам,
Ачам, лăпкăн çывăрсам.
Эп те пĕрле савăнам.
Сана чунтан юратам,
Пур кăмăлтан ыр сунам.

Хуллен-хуллен сик, сăпкам,
Ачам, лăпкăн çывăрсам,
Тутлă тĕлĕк эс курсам,
Эп те пăртак сĕнк! пулам,
Çан-çурăма кантарам...

Хуллен-хуллен сик, сăпкам,
Ачам, çитĕ – вăрансам,
Ӳс хăвăртрах, çын пулсам,
Эп те ĕçе тытăнам,
Çăла каям, шыв ăсам.

*1978*

# ШӲТЛĔ ЮРĂСЕМ, ТАКМАКСЕМ

## ĔÇКĔ МЫСКАРИ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Кăçал çапла Микула
Така пуснă ятпала
Чĕнсе килчĕ хăнана
Ватă услап Ваççана,
Вĕçкĕн мăран Мируна,
Анаткасри Антуна.

Эрех-сăра тăкăнать,
Урай кашти авăнать.
Чăн авалхи йĕркепе,
Ваçça ĕçет черккепе,
Мирун ярать куркапа,
Антун кӳпет алтăрпа.

Ĕçсен-ĕçсен, урмăшсан,
Ăса-пуçа çухатсан
Хайхи туссем, пĕлĕшсем,
Намăс-симĕс çук çынсем,
Сикрĕç тăчĕç çапăçма,
Пĕрне-пĕри çунтарма.

Хăйĕн ӳсĕр çиллипе
Ваçça çапать черккипе,
Мирун парать куркапа,
Антун ярать алтăрпа,
Ак тамаша япала,
Мĕскер кăна тумалла?

Мĕкĕреççĕ вăкăрла,
Çухăраççĕ сысналла.
Така ĕçки пит хакла
Ларчĕ тет халь Микула.

Ваçça хăлхи янăрать,
Мирун мăйĕ ыратать,
Антун аран уткалать,
Халь те укол тутарать.
Ирĕк парăр калама:
Вăхăт ĕнтĕ ăнланма -
Çитет ĕçсе ашкăнма,
Çын сăнарне çухатма!

*1965*

## МУХТАНЧĂК ХĂНКĂЛА

Кĕвви *Г. Максимовăн*

Тӳр урампа кăнтăрла
Утса пынă Хăнкăла,
Тяпписене суллană,
Каçса кайса мухтаннă:
–Кам калаçма манпала,
Эп çĕр патши – Хăнкăла!..
Ун сассине итлеççĕ,
Мухтаннине сисеççĕ
Ĕçчен чĕвĕл чĕкеçсем,
Саркайăксем, шăпчăксем...

Пĕр ват кайăк чăтаймасть,
Мухтаннине юратмасть,
Ик çунатне çат! çапать,
Каппайчăка кап! пусать.
Çапла пĕтет Хăнкăла
Пĕр кунхие, кăнтăрла.

*1965*

## ЭХ, ТИМĔРККЕ, ТИМĔРККЕ

Тимĕр-тимĕр Тимĕркке,
Юрататъ-çке ирĕке –
Пĕр авмасăр пилĕке
Çитрĕ вăтăр пиллĕке.

Ак тамаша, Тимĕркке
Тупнă янтă сĕреке,
Çӳрет халне пĕтерсе,
Сĕрекине сĕтĕрсе.

Хĕл çитсессĕн Тимĕркке
Уртса ярать кĕрĕке,
Тухса каять ирĕке,
Шырать тулли кĕреке.

Тимĕр-тимĕр Тимĕркке,
Тупсан хатĕр кĕреке
Ĕçет умран юлмиччен,
Анкă-минкĕ пуличчен.

Эх, Тимĕркке, Тимĕркке,
Ялан шыран кĕреке,
Çитрĕн вăтăр пиллĕке
Пĕр авмасăр пилĕке.

*1990*

## ТИП МУНЧА

Кĕвви *Г. Максимовăн*

Эрне иртрĕ пулмалла,
Çан-çурăма çумалла...
Илтĕм милĕк, мунчала,
Тухса утрăм мунчана.

Кам хăйтăр-ха ятлама,
Пăртак картне лартмалла:
Мунча хыççăн çула май
Пыр тĕпне те çумалла.

Ура утмасть... Кил – килех!
Унта çитсе ӳкмеллех!
Курать арăм, ак каллех
Мунча кĕртет типĕллех!

Тепĕр кунне эп - ĕçре,
Пуçра - сĕрĕм-тĕтĕре.
Мана мухмăр пĕтерет,
Бригадирĕ тĕтĕрет.

Халтан кайрăм шутласа:
Ăçта хурас намăса!..
Илтĕм милĕк, мунчала,
Каллех утрăм мунчана.

*1954*

## КУН ВЁÇЛЕНЧĔ ПУЛМАЛЛА

Кĕвви *А. Романовăн*

Ӳркенмест çав ман ура, –
Ирех çитрĕм кантура,
Пĕр пуçлăха кумалла,
Унпа пĕр ĕç тумалла.

Пуплет вахтер манпала:
– Кĕтме тивет пулмалла,
Тăванăм, – тет, – эс тăхта,
Пуçлăх тухнă халь таçта...

Хаклă вăхăт час иртет,
Кăнтăрла та ак çитет.
Утклатăп çурт тавра
Хуралланăн кантура.

Вахтер пуплет манпала,
Юри шӳтлет пулмалла:
– Аван-и, – тет, – вахтăра?
Пуçлăх халĕ апатра...

Йăпататăп эп хама,
Çитет вăй-хал тăхтама.
Мĕн калас тен, чăтмалла,
Ĕçе татса каймалла!

Ӑнчах вахтер систерет,
Ӳкуларахх нăн куç хĕсет:
– Паян кай, – тет – каялла,
Кун вĕçленчĕ пулмалла.

*1985*

## СУХАЛ

Кĕвви *Г. Максимовăн*

Вĕçкĕн каччă Митрахван
Шăп вунçиччĕ тултарсан,
Пит кулăшла япала,
Кăмăлларĕ сухала.
Ун сухалĕ начар мар:
Ӳсет çăра, пит патвар...
Ăна хăйне эс курсан
Ним калама аптăран,
Ик аллуна шарт! çапан.
Аслашшĕнчен Митрахван
Чылай ватă сăнĕпе,
Хăй ача çеç чунĕпе:
Каçăртатть те сухала
Вĕçтерет çеç кайăкла,
Пĕрле çамрăк йышпала,
Эх, çаптарать футболла...
Ун пит хăвăрт лармалла,
Автобуспа каймалла:
Сухал пуртан Митрахван
Кĕрет унта чи малтан.
Ун аллинче чемодан,
Савăт-сапа пур пулсан
Мучи тесе тусăма
Пурте хатĕр пулăшма...
Ларсан сĕтел хушшине
Чăр! пăхаççĕ ун çине:
Уçать, сирет сухалне –
Кĕмест кашăк çăварне.
Ăна вара ют çĕрте
Хисеплесе: "Асатте", –
Теççĕ пĕчĕк ачасем,

Хăйпе тантăш çамрăксем,
Эх, ачамçăм, Митрахван,
Сухалупа ан мухтан.
Çакна ан ман, картса хур:
Качакан та сухал пур!

*1972*

## ТĂРСА ЮЛНĂ ÇАП-ÇАРА...

Кĕвви *Г. Хирбюн*
*Ф. Лукин* та юрра хывнă

Пĕрре çапла, каçпала,
Ытларикун пулмалла,
Укçа илнĕ ятпала
Мирун, Микуç, Михала,
Сас памасăр, шăп кăна,
Кĕрсе кайрĕç лавккана.
Илчĕç чуна "уçмалли" -
Эрех, сăра... çыртмалли.
Унтан вĕсем юрласа,
Урăм-сурăм ташласа
Ĕçрĕç çур çĕр иртиччен,
Хăйсен ятне маниччен...
Килчĕ шуçăм шуралса,
Пăхса илчĕ хурланса:
Мирун, Микуç, Михала
Укçа илнĕ ятпала
Çĕр ирттернĕ çырмара –
Тăрса юлнă çап-çара!

*1962*

# ПИРĔН ТАКМАКСЕМ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Кĕр çитсессĕн тытăнать
Çăка çулçи çаралма.
Куçук Куçми пултарать
Пуш параппан çаптарма.

*Хушса юрламалли:*

Эй, тус-тантăш, мĕн калас.
Ун пек çын та пур пулас,
Ун пек çын та пур пулас,
Ун намăс та çук пулас.

Хура курак савăнать,
Ирех пуçлать кăшкăрма.
Санюк Саньки юрататъ
Элек сарса пурăнма.

Картишĕнче валашка,
Шыв çук кунта, курăнмасть,
Варук Вассби, ланчашка,
Пÿртне-çуртне тасатмасть.

Пÿртре кушак мăрлатать,
Сисет хăйма пуррине.
Кахал Ванюк çуланать
Чипер, ĕçчен Марьене.

Чăпар автан авăтать
Ир пуçласа сĕм касчен.
Вĕçкĕн Васса авланать
Çулталăкра виç хутчен.

Ўсĕрпеле Микихвер
Персе аннă пÿрт çумне.
Ула сысна, харсăрскер,
Çыртса татнă сăмсине.

## КАЛА, ТУСӐМ, ЧӐННИНЕ

Кӗвви *Г. Хирбюн*

— Ах, кала, тусӑм, чӑннине:
Ма килмерӗн каҫхине?
Эп сана кӳлӗ хӗрринче
Кӗтрӗм уйӑх тухиччен.

— Савнӑ ҫыннӑм, ан кӳрен:
Ман туйӑма эс сисмен.
Хӗрсен йӑли вӑл ҫапла —
Пӑртак йӑлӑнтармалла.
Хӗрсен йӑли вӑл ҫапла –
Пӑртак йӑлӑнтармалла.

— Ах, кала, тусӑм, чӑннине:
Ма тухмарӑн каҫхине?
Эп сана хурӑн айӗнче
Кӗтрӗм вӑйӑ пӗтиччен.

— Савнӑ ҫыннӑм, ан кӳрен:
Унта-кунта эс ҫӳрен,
Ют хӗрсене, тӗл килсен,
Ҫавӑрасшӑн куҫ хӗсен.
Ют хӗрсене, тӗл килсен,
Ҫавӑрасшӑн куҫ хӗсен.

*1960*

## ПĔТĔМ ЯЛА КУЛТАРАН

Кĕвви *А. Орлов-Шуçăмăн*

Тулли илем таврара,
Мĕнпур ял-йыш вырмара.
Мĕнех вара Макара, –
Хуп турттарать сулхăнра.
Эх, эс, Макар, мĕн тăван! -
Пĕтĕм яла култаран.

Макар пырать вĕçтерсе
Хитре Куçук кассипе.
Кайнă нар пек хĕрелсе
Ялан эрех ĕçнипе.
Эх, эс, Макар, мĕн тăван! –
Пĕтĕм яла култаран!

Тĕлĕнмелле Макартан:
Ярса тытнă юпаран,
Савни тесе ыталать,
Чунăм тесе чуптăвать.
Эх, эс, Макар, мĕн тăван!
Пĕтĕм яла култаран.

Çапла Макар ирттерет
Хăйĕн çамрăк ĕмĕрне,
Эрех тесен вăл кĕрет
Таçта, шуйттан шăтăкне.
Эх, эс, Макар, – мĕн тăван! –
Пĕтĕм яла култаран.

*1960*

## АРАПУÇ ТАКМАКĔСЕМ

* * *

Кала, тусăм, купăсна, –
Эпир ташша пит ăста.
Ташламасан, юрламасан
Пире халĕ намăс та.

* * *

Юрла пĕлмен хĕрсене
Хытах хĕртсе илмелле.
Ĕçрен хăран яшсене
Вĕри мунча кĕртмелле.

* * *

Балалайка аврине
Хурамаран тунă пуль.
Ташла пĕлмен каччине
Тункатаран тунă пуль.

* * *

Урайне те çумалла,
Çăлран шывне ăсмалла.
Савни çитнĕ пулмалла,
Ун патне те тухмалла.

* * *

Савни кĕрет васкаса
Çĕнĕ сăрлă алăкран.
Чуптăвăттăм юратса,
Вăтанатăп ял-йышран.

* * *

Хамăр çулнă уттине
Паккусĕнчен паллатпăр.
Чун туртакан ачине
Карттусĕнчен паллатпăр.

* * *

Эх, юрату, юрату,
Вăл вĕт йӳçĕ çырла мар.
Юратусăр çĕр çинче
Пурăнма та кирлĕ мар.

* * *

Симун лекци вуларĕ,
Ĕçекене тылларĕ.
Лекци пĕтрĕ, васкарĕ.
Хăй те черкке шаккарĕ.

* * *

Сарă пысăк кавăнсем –
Тулса çитнĕ уйăх пек.
Çак Арапуç хĕрĕсем –
Пиçсе çитнĕ улма пек.

*1970*

## МĔН ТĂВАС

Уйăх вăрттăн кулнă чух,
Эх, чух, кулнă чух
Эпĕ савнă тусăма
Тух-ха терĕм урама.
Каччă тухрĕ килĕнчен
Куçа хупса иличчен,
Манпа кÿлĕ хĕрринче
Тăчĕ çур çĕр иртиччен.

Хĕртсе хĕвел пăхнă чух,
Эх, чух, пăхнă чух
Эпĕ савнă тусăма
Тух-ха терĕм ут çулма,
Каччă печĕ чир-чĕре:
«Тытрĕ пуль, –тет, – чĕмере».
Хăй çаптарчĕ сулхăнра
Тутлă ыйхă çич çавра.

Каçпа сывлăм ÿкнĕ чух,
Эх, чух, ÿкнĕ чух
Эпĕ савнă тусăма
Тух-ха терĕм вылямá.
Каччă тухрĕ килĕнчен
Пĕрре тесе каличчен.
Манпа хурăн айĕнче
Ларчĕ шуçăм киличчен.

Кунсем лайăх тăнă чух,
Эх, чух, тăнă чух
Эпĕ савнă тусăма
Тух-ха терĕм хурт пăхма.
Каччă тупрĕ сăлтавне,

Кĕрсе ларчĕ пӳрт умне.
Вĕлле хурчĕ сăхасран
Пăхса выртрĕ хушăкран.

Кунсем ырă тăнă чух,
Эх, чух, тăнă чух
Мана каччă: «Урама
Тух-ха, – терĕ, – калаçма».
Калăр ĕнтĕ, мĕн тăвас,
Ăна мĕншĕн юратас?
Ун пек кахал каччăпа
Мĕнле утăн пĕр çулпа?

*1957*

## ÇУРМА ЧĂВАШ, ÇУРМА ВЫРĂС ПУШАРНИК СĂМАХĔ

Кĕвви *Г. Лебедевăн*

Всем понятно пулмалла,
Пушар страшнă япала.
Так что пирĕн малалла
Çакна помнить тумалла:
Пушар тухнă-тухманах
Очень срочно, çавăнтах
Высше сообщить тумалла,
Помощь яма ыйтмалла.
Справнăй пулччăр нассуссем,
Есть ли ведро-пакурсем -
Все зависит вĕсенчен,
Подумайте кун çинчен.
Эпир дружно пулнинчен,
Ĕçшĕн болеть тунинчен
Килеç большой успехсем,
Вот и все ман, юлташсем!

## ЙЁПЛЁ ТАКМАКСЕМ

Халăх Сахрун Сахарне
Шанчĕ пуçлăх вырăнне.
Вăл час мĕнпур тăванне
Лартса тухрĕ хăй çумне.

Ăсне ĕçсе пĕтерсен
Калля кĕнĕ картана,
Савни тесе мăйĕнчен
Ярса тытнă такана.

Ванюк Васси пултарать,
Ял халăхне култарать:
Эпир сисмен хушăра
Çитрĕ çичĕ мăшăра.

Çĕн столовăй пуçлăхне
Лартрĕç Кукша Павăлне.
Ун йытти те халь унта
Çиет хаклă апата.

Кайри Касри Йăкăнат
Калама çук бюрократ:
Ирпе панă сăмахне
Манса каять каçхине.

Ырлăх çитнĕ Шурăна –
Бюллетеньпе пурăнать.
Вăрттăнлăхĕ ун ăçта! –
Аслă пиччĕш тухтăрта.

Аван та мар асăнма:
Антун пĕлмест калаçма, –
Манса кайнă чăвашла,
Вĕренеймен вырăсла.

Магазинти леш Мавра
Çапла сутать тавара:
Кирли, йӳнни – тăвана,
Пит кайманни – ют сынна.

Пирĕн пуçлăх Йăкăнат
Питĕ лăпкă пурăнать,
Сăмах çапма юратать,
Пулман ĕçе – пур тăвать.

Çап, милĕкĕм, çăтти-çат!
Ӳт-тирĕме йăлт тасат.
Тапса тăтăр вăй-хăват,
Сынна пулам тарават.

Çеркей çĕтрĕ аттине
Çӳре-çӳре хĕр патне.
Хĕрĕ утрĕ пĕр ирпе
Çырăнмашкăн Петĕрпе.

Ан тух, Палюк, пахчана
Хĕвел ансан, каç пулсан.
Ан кĕт текех эс мана –
Савни килет салтакран.

Сантăр, мĕншĕн хăратан:
Кулянмастăп пăрахсан.
Çунать маншăн чун-вартан
Каншел каччи Сариван.

Анултала эс мана –
Пуç таймастăп эп сана,
Маттур каччă тупăнсан
Уйрăлассăм çук унтан.

Пуçра сывлăх пур çинче
Ан тух, тусăм, кахала,

Ытла ĕçсĕр лариччен
Кĕрĕк арки йăвала.

Çитет пулĕ çакăнпа.
Пирĕн йĕплĕ сăмахпа
Мĕнпур усал-тĕселе
Хытах хĕртсе илмелле.

*1970*

## КАХАЛ ИВАН

Кĕвви *А. Токаревăн*

Пирĕн Иван мухтанать,
Пуш параппан çаптарать.
Тĕрĕссипе, хăй ĕçре
Пырать кайра, хӳрере.

Тантăшĕсем акара:
Вăл пур – выртать сулхăнра.
Каç пулсан çеç чун кĕрет,
Хĕрсем патне вĕçтерет.

Чипер хĕрсем умĕнче
Вĕçме хатĕр пĕлĕте.
Çунат çукки çумĕнче
Кансĕрлет-çке йĕкĕте.

Эй ятларăм Ивана,
Ан каçăрттăр сăмсана.
Сăмахпа мар, ĕçпеле
Çунат тупма пĕлмеле.

*1962*

## КОСМОС ТАКМАКĔСЕМ

Космонавтсен ячĕпе,
Чун-чĕремĕр хушнипе
Пуҫлар-халĕ, тантăшсем,
Ҫĕнĕ, хÿхĕм такмаксем.

Космонавтсем, сирĕнпе,
Паттăр-улăп ҫынсемпе
Тăван ҫĕршыв савăнать,
Ҫут тĕнчемĕр мухтанать.

Гагаринпа Титовран
Кам тĕлĕнмест халь паян?!
Вĕсем хыҫҫăн Шуршăлтан
Вĕҫрĕ пирĕн Андриян.

Поповича саламлар,
Пуҫа таяр, ыр сунар, –
Андриянпа космосра
Вăл та тухрĕ паттăра!

Шурă лантăш ҫеҫкине
Ăҫтан тупса татар-ши?
Хамăр Шуршăл каччине
Мĕн каласа юрлар-ши?..

Чуна ҫулăм-вут хыпсан,
Санран ҫыру ҫук пулсан
Пирĕн кăмăл хуҫăлать,
Кĕтнĕ шанчăк ҫухалать.

Ентешĕмĕр, Андриян,
Ҫаплах мĕншĕн ҫунтаран?
Юратăва упрар-и,
Килсе кайсах тăрар-и?

Космонавтсен ячĕпе
Пур яш-кĕрĕм эртельпе
Каларăмăр такмаксем,
Шăратрăмăр юрăсем.

Тŷпе янкăр, тап-таса –
Çулсем хывар космоса.
Çŷлтен çŷле вĕçер-и,
Çитес çĕре çитер-и?!

*1962-1988*

## ГЕОРГИ ЮРРИ

### *«Шуршăл тăхлачи» музыкăлла комедирен*

Кĕвви *А. Асламасăн*

Ай ман чунăм ыратать,
Чĕрем çулăмпа çунать.
Кĕтнĕ ĕмĕт путланчĕ,
Савнă хĕрĕм çухалчĕ.

Юри килтĕм эп кунта,
Савнă тусăм, эс ăçта?
Куçăм умне тухсамччĕ,
Ху сассуна парсамччĕ.

Çук, тусăмçăм сас памасть,
Пăхса ăшшăн йăпатмасть.
Ах, сунать-çке чĕремçĕм,
Ах, çуках пуль телейçĕм.

*1987*

## ЩЕТКИН ЮРРИ

### *«Шуршăл тăхлачи» музыкăлла комедирен*

Тупа-тупа тупата,
Килĕр халĕ ман пата.
Пушмаксене тасатăр,
Куçкĕски пек çутатăр.
Эпир паян уявра,
Атă-пушмак урара.
Тирпей кирлĕ, тусăмсем,
Çăмăл утчăр урасем.
Сире тата мĕн калас:
Эсир килсен пит хавас.
Тупа-тупа тупата,
Килĕр халĕ ман пата, –
Пурте таçта васкатăр,
Умран иртсе каятăр,
Мана темшĕн курмастăр,
Çаврăнса та пăхмастăр.
Тупа-тупа тупата,
Килĕр халĕ ман пата.
Ытарайми тусăмсем,
Каччăсемпе пикесем,
Пăхса илĕр урăра,
Пăхса илĕр хăвăра.
Пушмаксене тасатма,
Куçкĕски пек çутатма
Эсир манса кайман-и,
Эп кунтине курман-и?
Ун пек пулсан пит начар,
Çынсенчен те аван мар.
Тупа-тупа тупата,
Килĕр халĕ ман пата. Эй!

## ТУЯ ТУЙ ПЕК ТĂВАР-И

*Ю. Кудаков çырнă юрăпа ташă сюитинчен*

### Пĕрремĕш юрă

Мĕнле хитре тăван патне çитни
Туя килме хыпар илсессĕн.
Пурнăçланать йăлтах чунтан кĕтни
Хăта-тăхлач килне кĕрсессĕн.

Туя туй пек тăвар, ай савăнар,
Килĕштерсе пĕрле юрлар-и?
Ĕмĕр çапла чипер ай пурăнар.
Çĕн мăшăра телей сунар-и?

Сăрлă урай кашти ай авăнать
Эпирех те ташша тăрсассăн.
Мĕнпур пĕлĕш-тăван ай савăнать
Туя туй пек хитре тусассăн.

### Иккĕмĕш юрă

Тăвансемпе пĕрле чух,
Туй кĕреки тулли чух
Ай юрлар-и, ташлар-и,
Килĕштерсе пурнар-и?

Пирĕн чипер аппа пур,
Маттур кăна йысна пур –
Икĕ сарă кайăк пек,
Икĕ чĕкеç чĕппи пек.

Ытарайми аппана,
Ытарайми йыснана
Ырлăх-сывлăх сунар-и,
Туя туй пек тăвар-и?

### Виççĕмĕш юрă

Ирхи шуçăм çутипе
Ял-ял витĕр килтĕмĕр,
Сиртен хыпар илнипе
Шăп вăхăтра çитрĕмĕр.

Эпир начар çынсем мар! –
Хĕвел сăнлă кинĕмĕр!
Хисеплесен алă пар –
Сана илме килтĕмĕр.

Эх, каччи те япăх мар –
Маттур çынсем тупăнтăр.
Тата сире мĕн калар:
Ĕмĕр лайăх пурăнăр!

### Çамрăк кин юрри

Пăла шывĕ хĕрринче,
Атте-анне килĕнче
Эпĕ ÿсрĕм халиччен,
Мăшăр çунат хушиччен.

Тупрăм чунăм савнине,
Кÿршĕ ялăн каччине.
Эп телейлĕ вăл пуртан.
Маншăн хакли çук унтан!

Чун савниçĕм, пĕр-пĕрне
Манас марччĕ ĕмĕрне.
Кунтан ытла сăмах çук,
Сантан хаклă çыннăм çук.

## Туй такмакĕсем

Вăййăç, ан лар пуç усса,
Тăсса яр эс купăсна.
Шăппăн-шăппăн ай ларма
Эпир чĕкеç чĕппи мар.

Тусăм, тăр-ха ман çума.
Пуçлас мар-и ташлама?
Санпа кăмăл çĕкленет,
Чун-чĕреçĕм хĕпĕртет.

Ытарайми тантăшсем,
Каччăсемпе пикесем,
Ĕмĕр пĕрле пурнар-и,
Туя туй пек тăвар-и?

## Хĕр çуммисен юрри

Пĕрчĕк-пĕрчĕк пĕрлĕхен
Çу ăшшинче хĕрелет.
Шур пĕркенчĕк айĕнчен
Аппа сасси илтĕнет.

Пĕрле ӳснĕ аппаран
Уйрăласси хĕн иккен.
Юратнăран чун-вартан
Куç илместпĕр ун çинчен.

Йысна хисеп тумасан
Уçмастпăрах хапхана,
Хĕрçум укçи хумасан
Памастпăрах аппана.

### Каччăсемпе хĕрсен такмакĕсем

Каччăсемпе хĕрсем:

Хĕвел тухса сарăлсан
Пĕтĕм çĕре ăшăтать.
Эпир ташша тытăнсан
Урай кашти авăнать.

Каччăсем:

Унталла та кунталла
Çумăр çапса çумалла.
Çак ял хĕрне, кахала,
Шăпăрпала шăлмалла.

Хĕрсем:

Сирĕн ялăн каччисем
Çӳреç ӳсĕр кĕрлесе.
Ахаль мар пуль сăмсисем
Йăлтах кайнă хĕрелсе.

Каччăсем:

Çакă ялăн хĕрĕсем
Каймаç тĕкĕр умĕнчен.
Сăрланаççĕ ав вĕсем
Ир пуçласа сĕм касчен.

Хĕрсем:

Пире ҫапла каличчен
Хăвăр ҫине пăхмалла,
Хĕрсем патне киличчен
Питĕрсене ҫумалла.

Каччăсем:

Хĕрсем, сире мĕн калар, –
Вăтанмастăр халăхран,
Пире валли шăлавар
Лавккасенче хăварман.

Хĕрсем:

Апла-капла тавлашса,
Пĕрне-пĕри хурласа
Эпир вĕҫне тухас ҫук,
Туя илем кӳрес ҫук.

Каччăсемпе хĕрсем:

Татах пĕрле юрлар-и,
Акăшсем пек ташлар-и,
Ҫĕн мăшăра мухтар-и,
Туя туй пек тăвар-и?

Ваттисен пилĕ:

Пире итлĕр, ачамсем,
Пĕр йăвари кайăксем,
Эпир пуҫа таятпăр, –
Сире телей сунатпăр.

Чипер тытăр хăвăра,
Выльăр-кулăр уявра.

Ан тăрăшăр мухтанма.
Ята-чыса варлама.

Сирĕн кил-çурт тытмалла,
Пĕрле пурнăç тумалла,
Пĕрне-пĕри шанмалла,
Ĕмĕр пĕрле утмалла.

Ан шухăшлăр вăрлама,
Çын шучĕпе пурăнма.
Ан ашкăнăр ĕçкĕпе,
Çын илемлĕ ĕçĕпе.

Ача-пăча пур пулсан
Савăнатăн чун-вартан,
Ăнланатăр пуль пире,
Сывлăх сунатпăр сире!

Юлашки юрă:

Хўхĕм юрă-ташăпа
Мĕн чул савнăç куртăмăр.
Ыран ирхи çутăпах
Хире, ĕçе утăпăр.

Çĕн мăшăра кăмăлтан
Ырă пурнăç сунтăмăр.
Ваттисем пек каласан
Туя туй пек турăмăр.

*1963-1988*

# ПОЭТ ÇЫРСА ИЛНĔ, ЙĔРКЕЛЕНĔ ХАЛĂХ ЮРРИСЕМ

## ТĂВАН, ЛАРСАМ МАН ÇУМА

*Халăх юрри майлă*

Тăван манмасть тăвана –
Юри килтĕм хăнана.
Ай-я-я-я-я-я,
Юри килтĕм хăнана.

Кĕтсех тăнă эс мана –
Тавах çăкăр-тăварна.
Ай-я-я-я-я-я,
Тавах çăкăр-тăварна.

Ăçтан пĕлнĕ эс пулма –
Тăван, ларсам ман çума.
Ай-я-я-я-я-я,
Тăван, ларсам ман çума.

Юри килтĕм калаçма,
Юри килтĕм савăнма.
Ай-я-я-я-я-я,
Юри килтĕм савăнма.

*1977*

## ÇЫРЛА ПИÇЕТ ХĔВЕЛ ĂШШИНЧЕ

*Халăх юрри майлă*

Шăнкăрах та шăнкăр ай шыв юхать,
Чăтаймарăм выртса ай ĕçмесĕр.
Хура вăрман варринче,
Аслă ĕшне хĕрринче
Çырла пиçет хĕвел ăшшинче.

Тăванах та пире кĕтсех тăрать,
Тӳсеймерĕм кунта ай килмесĕр.
Хура вăрман варринче,
Аслă ĕшне хĕрринче
Çырла пиçет хĕвел ăшшинче.

Тăвайккийĕ ешĕл ай курăнать,
Пăхса тăтăм куçа ай илмесĕр.
Хура вăрман варринче,
Аслă ĕшне хĕрринче
Çырла пиçет хĕвел ăшшинче.

Тăвайккийĕ ешĕл ай курăнать,
Пăхса тăтăм куçа ай илмесĕр.
Хура вăрман варринче,
Аслă ĕшне хĕрринче
Çырла пиçет хĕвел ăшшинче.

Çамрăках та ĕмĕр иртсех пырать,
Сисет мар-и çавна ай чĕремĕр.
Хура вăрман варринче,
Аслă ĕшне хĕрринче
Çырла пиçет хĕвел ăшшинче.

*1977*

## КАЯР,
## ЮЛТАШ, МУНЧАНА...

Каяр, юлташ, мунчана,
Кĕрер пĕрле пĕр кана:
Чун каниччен çăвăнар,
Пур кирĕкрен тасалар!

Тавах сиплĕ мунчана, –
Аллăмра ак – мунчала,
Çан-çурăма кантарать,
Çан-çурăма хал парать.

Кам юратмĕ мунчана,
Пăртак ăшши пар кăна –
Пуçлать милĕк ташлама,
Пуçлать такмак калама:

«Çап-çап, милĕк, çăтти-çат!
Пире пилле вăй-хăват!
Чир-чĕр тухтăр тулалла –
Çын сывлăхлă пулмалла!»

Туян пулĕ, тус-тăван,
Мунча кĕни пит аван:
Унтан çап-çут эс тухан,
Çĕн уйăх пек курăнан.

*1984-1989*

## МАНАС МАРЧЧӖ ТӐВАНСЕНЕ

*Халӑх юрри майлӑ*

Пире чунтан кӗтсе тӑракана
Парнелесчӗ чӗрем ай ӑшшине.
Тӑван патне килнӗ чух
Савӑнар-ха.

Пире ҫӑкӑр-тӑвар паракана
Лартаясчӗ атте кӗрекине.
Тӑван патне килнӗ чух
Савӑнар-ха.

Ан силлентер улма йывӑҫҫине,
Тӑкас марччӗ шап-шур ай ҫеҫкине.
Тӑван патне килнӗ чух
Савӑнар-ха.

Манас марччӗ хамӑр тӑвансене,
Ыр тӑваясчӗ ӗмӗр ай вӗсене.
Тӑван патне килнӗ чух
Савӑнар-ха.

*1977*

## ҪЫР ХӖРРИПЕ АН ҪӐРӖР*

*Халӑх юрри*

Ҫыр хӗррипе ан ҫӳрӗр теп те,
Ҫӑпата кӗлли чалӑшать теп те.
Ман арӑмпа ан сӑмахлӑр теп те,
Янах шӑмми чалӑшать теп те.

---

* Чӑваш халӑх писателӗнчен Николай Ильбекрен 1977 ҫулта Ваҫлей Анатри ҫырса илнӗ.

## МАТТУР ПУЛНИ КИЛĔШЕТ

*Халăх юрри майлă*

Çӳл тӳпере хĕвел ай çиçет-çке,
Пахчи-пахчи хăмла ешерет-çке,
А-я-я-я,
Ешерет-çке.

Унта тăван ял-йыш ай тухать-çке,
Ĕçре ыр ят, телей ай, тупать-çке,
А-а-а-а-я,
Ай тупать-çке.

Çамрăк ĕмĕр пĕрре ай килет-çке,
Пире маттур пулни килĕшет-çке,
А-я-я-я-я,
Килĕшет-çке.

*1977*

## ШУХĂШЛАМАН ЧУХНЕ ШУХĂШĂМ ÇУК*

*Халăх юрри*

Шухăшламан чухне те шухăшăм çук.
Пĕрте-пĕр шухăшла ай пуçласан
Ура çине тăма та ай вăйăм çук.
Çунаçăм сулăнчĕ ай сулăнка,
Хам çеç тăрса юлтăм ай сылтăма.
Атте-анне çуратрĕ ай ырлăха,
Хам çеç тăрса юлтăм ай хурлăха.

* Чăвах халăх писателĕнчен Лаврентий Таллеровран 1977 çулта Ваçлей Анатри çырса илнĕ.

## ЁМĔР ПĔРЛЕ ПУРĂНАС

*Халăх юрри майлă*

Тăван, мĕн калаçас, мĕн сăмахлас –
Ёмĕр çапла пĕрле пурăнас.
Авăтать куккук,
Авăтать куккук –
Янăрать вăрман.

Хамăр тăван çырлан ай туйăнать,
Курмассерен чунăм savăнать.
Авăтать куккук,
Авăтать куккук —
Янăрать вăрман.

Çур çитсенех уй-хир ай ешерет –
Унта тăван сасси илтĕнет.
Авăтать куккук,
Авăтать куккук –
Янăрать вăрман.

*1977*

## МĔСКЕР ЮЛАТЬ...

Шутларăм эпĕ пĕр-пĕччен:
Мĕскер юлать эпир вилсен.
Юлаççĕ пирĕн сăвăсем,
Савса юрланă юрăсем,
Çĕршыв-аннешĕн çырнисем,
Чунра çунат çуратнисем.

*1965*

## ХУРА ВĂРМАН ВАРРИНЧЕ

*«Чемен» поэмăран*

Хура вăрман варринче те
Питĕ тарăн шывсем пур.
Ах, тăвансем, тăвансем те,
Тата темĕн курас пур.

Çыр хĕрринче йăмра пур та,
Турачĕсем шыв çинче.
Эпир хурлăх курасси те
Пирĕн куçсем умĕнче.

Улма чăпар лашине те
Ăçта кайма кўлнĕ-ши?
Эпир телей курасси те
Ăçта ўксе юлнă-ши?

Килтĕм тăтăм çăл патне те
Куртăм тăр шыв юхнине.
Пăхрăм эпĕ ун çине те
Куртăм ĕмĕр иртнине.

*1943*

*Халăх юрри майлă*

Ĕнтĕ мĕн калаçар, мĕн сăмахлар,
Ай-я-я, мĕн сăмахлар –
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле ай пурăнар,
Ай-я-я, ай пурăнар.

Ĕнтĕ чунăм туять, чунăм туять,
Ай-я-я, чунăм туять –
Асаттемĕр пире ырлăх сунать,
Ай-я-я, ырлăх сунать.

Ĕнтĕ тăван килет, тăван килет,
Ай-я-я, тăван килет,
Атте-анне килне илем кӳрет,
Ай-я-я, илем кӳрет.

Ĕнтĕ ĕмĕр иртет, ĕмĕр иртет,
Ай-я-я, ĕмĕр иртет,
Пĕрле пурăннине ай мĕн çитет...
Ай-я-я, ай мĕн çитет...

*1992*

## АЙ-ХАЙ, УТ ЮРТАЙМАСТЬ*

*Халăх юрри тăрăх йĕркеленĕ*

Ай-хай ут юртаймасть, ут юртаймасть,
Йĕс таканĕ хăпнă, ай пусаймасть.
Ах-тур, çын кураймасть,
çын кураймасть,
Тур ямасан тăшман ним тăваймасть.

Эп пĕлместĕп нимĕн те ай калаçма,
Шав шухăшлап пĕрле те ай пурăнма.
Уттарас та ярас ай утăма,
Юрласа йăпатас ай чунăма.

Çавăрма çук сылтăм ай хулсене,
Ытарма çук хамăр ай тăванне.
Мĕнле ытарса тухса ай каям-ши,
Хăçан тепре пĕрле ай пулар-ши?

Вĕçрĕç кайрĕç вĕçен те ай кайăксем,
Тăрса юлчĕç çавра та ай йăвисем.
Иртсе кайрĕç çамрăк та ай ĕмĕрсем,
Тăрса юлчĕç ырă та ай курнисем.

Шурта шуркут йăви те ай пит нумай,
Чĕкеç йăвисене те ай çитес çук.
Çак таврара ыр çын та ай пит нумай,
Пирĕн тăвансене те ай çитес çук.

* Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Пашьел çыннинчен Марина Ваньковăран 1995 çулта Васлей Анатри çырса илнĕ.

## ПЎРТЕ КĔРСЕН КУРТĂМ...*

Пӳрте кĕрсен куртăм тумла юхнине,
Тула тухсан куртăм çумăр çунине.

Сад пахчине лартнă улма йывăççи —
Ма тарăнрах чавса лартаймарăм-ши?

Çамрăк чух вăхăта — кĕске ĕмĕре
Ма лайăх савăнса ирттермерĕм-ши?

Эп васкаса кайрăм хура вăрмана
Лантăш чечек çеçке çурнă пуль тесе.

Эп васкаса килтĕм тăвансем патне
Хамăр тăван савса чĕннĕ пуль тесе.

Çурхи шывпа çусан тутăр шуралать,
Тăван патне килсен чунăм савăнать.

* Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç сынни Рая Шаржанова юрласа панă. 1978 çулта Васлей Давыдов-Анатри çырса илнĕ.

## ЙĂРАНĔ-ЙĂРАНĔ ШУР КУПĂСТА*

Йăранĕ-йăранĕ шур купăста,
Çулçине хуçмасан ай пуç пулмĕ.
Хамăр тăван патне ай килсессĕн
Юрласа памасан ай чыс пулмĕ.
Турилкки-турилкки шур çăмарта,
Чут-чут шуратмасăр çиеттĕм.
Кукка-инке патне килсессĕн
Чут-чут юрламасăр ай каяттăм.
Кайса курăр вăрман ай хĕррине.
Ним пулмин те сарă ай майăр пур.
Пырса курăр, тăвансем, пирĕн пата,
Ним пулмин те çăкăрпа ай тăвар пур.
Пĕр улмине иккĕн ай çиер-и,
Мĕн виличчен пĕрле ай пурнар-и?

---

* Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкассинче пурăнакан Фекла Кольцовăран Ваçлей Давыдов-Анатри 1980 çулта çырса илнĕ.

## ÇАМРĂК ЧУНĂМ ПУШШЕХ ХУРЛАНАТЬ*

*Ĕлĕкхи салтак юрри*

Анне, ларт пăттуна сĕтел çине,
Çи-çи, ачам, тесе ан кала.
Çи-çи, ачам, тесе каласассăн
Çамрăк чунăм пушшех хурланать.

Атте, ларт пурттуна каска çине,
Кас-кас, пурттăм, тесе ан кала.
Кас-кас, пурттăм, тесе каласассăн
Çамрăк чунăм пушшех хурланать.

Пичче, çак карттусна пăта çине,
Ан кай, шăллăм, тесе ан кала.
Ан кай, шăллăм, тесе каласассăн
Çамрăк чунăм пушшех хурланать.

Аппа, хур аттуна кĕлет умне,
Ан кай, шăллăм, тесе ан кала,
Ан кай, шăллăм, тесе каласассăн
Çамрăк чунăм пушшех хурланать.

*1975*

* Ку юррăн икĕ çаврăмĕ «Эх, юррăм, янăра» кĕнекере 1975 çулта кун курнă.

## ВĔÇТЕРСЕ ЯР ШУРĂ ТУТĂРНА*

*Халăх юрри*

Вĕçтерсе яр шурă ай тутăрна,
Юрласа яр чуна ай йăпатса.
Шурта шуркут йăви ай пит нумай,
Чĕкеç йăвисене ай çитес çук.
Çакă ялта ыр çын ай пит нумай,
Хамăр тăвансене ай çитес çук.
Тăван, эп те касак, эс те касак —
Сиртен уйрăласси ай пит асап.

## ИРЕХ ТĂР ТА ШЫВ ĂСМА ТУХ**

Ирех тăр та шыв ăсма тух,
Кайран шывĕ пăтранать.
Тăвансем сăра тусан ай чĕнмесен,
Эп мар, кайăк хурланать.
Сăр вăрманне хĕвел ӳкмест,
Унта хурлăхан пиçмест.
Хурлăхан сутса укçа туса
Телей илме — телей садра çитĕнмест.
Пур-ши, çук-ши сар чечекĕ
Симĕс курăк хушшинче?
Пур-ши, çук-ши пирĕн телей
Малашнехи кунсенче?

* Комсомольски районĕнчи Тукай çынни Нина Печникова-Никитина юрласа панине 1978 çулта Васлей Давыдов-Анатри çырса илнĕ.

** Шупашкарта пурăнакан Галинăпа Гриша Никитинсенчен 1980 çулта çырса илсе йĕркеленĕ.

## ТУÇА ЕНЧИ ТУЙ ЮРРИ*

Туя кайрăм туясăр,
Туяллинчен ирттертĕм.
Туя кайрăм мăшăрсăр,
Мăшăрлинчен ирттертĕм.
Ай туй, туй иккен,
Туй мыскари çак иккен,
Пĕрле ӳснĕ аппана
Уйрасси хĕн иккен.

## ХĔР ЙĔРРИ*

Укăлча умĕнчи шурă хурăн
Кăçал касман пулсассăн
Ĕмĕр касмăп терĕр-им?
Ах, аттеçĕм, аннеçĕм,
Кăçал паман пулсассăн
Ĕмĕр каймĕ терĕр-им?

## ÇĔНĔ ХĂТА ЮРРИ*

Çавăра-çавăра утă çулма
Çава аври кирлĕ ай вĕрене.

Çавăра-çавăра ай юрлама
Чĕкеç чĕлхи кирлĕ ай пире.

Авăтать-ши куккук, авăтмасть-ши
Туратран турата ай куçнă чух?

* Çак юрăсенеУльяна Ялавина юрласа панă. Васлей Анатри çырса илнĕ.

Асилет-ши тăван, асилмест-ши
Пĕр-пĕччен çеç çÿренĕ вăхăтра?

Улăхăн та хушши ултă çухрăм,
Мĕн чулах та илем таврара.

*1980*

## ЭП ХИТРЕ МАР*

Эп хитре мар, хитре мар,
Хитре маршăн кулянмасп —
Çырла шывпе пите çусан
Хитре çынтан кая мар.
Эп çÿллĕ мар, çÿллĕ мар,
Çÿллĕ маршăн кулянмасп —
Пукан çине хăпарса тăрсан
Çÿллĕ çынтан кая мар.
Эп пуян мар, пуян мар,
Пуян маршăн кулянмасп —
Кайра-малта ача утсан
Пуян çынтан кая мар.

* Шупашкарта пурăнакан Галинăпа Гриша Никитинсенчен 1980 çулта Васлей Давыдов-Анатри çырса илнĕ.

## ЭП ХИТРЕ МАР...

*Халăх юрри майлă*

Ѐп хитре мар мухтанма,
Кирлех те мар хурланма:
Пите çусан çăл шывпе –
Сăнăм сутă хĕвел пек.

Эп çӳллĕ мар мухтанма,
Кирлех те мар кулянма:
Çӳл ту çине хăпарсан
Çӳллĕ çын та çук манран.

Эп пуян мар мухтанма,
Кирлех те мар хурланма:
Нихçан пулман çын кулли –
Ача-пăчам пӳрт тулли.

Эп пĕлместĕп мухтанма,
Кирлех те мар кулянма:
Хĕрӳ ĕçе тытăнсан
Кая юлман ял-йышран!

*1985*

## СТАРИК КАЙРЁ ПАСАРА*

*Халăх юрринчен*

Старик кайрĕ ай пасара
Çăпатапа ай сут тума.
Эп те кайрăм ай пасара
Çăмартапа ай сут тума.
Çăпата укçи те ай çитес çук,
Çăмарта укçи те ай çитес çук.
Старик ĕçме пăрахмасан
Хĕн-хур та пиртен ай тарас çук.

## ÇЎЛЕЛЛЕ ТЕ ПĂХРĂМ**

*Халăх юрринчен*

Çӳлелле те пăхрăм эп — тĕлĕнтĕм
Кайăк хурсем мĕнле ай кайнинчен.
Пĕчченех те лартăм, шухăшларăм
Çамрăк ĕмĕр мĕнле иртнинчен.

Сирĕн кăмакăрсем сакăр кĕтес,
Сăрласа хăварас та кăмăлăм пур.
Хамăр тăван патне те ай килсессĕн
Юрласа хăварас та ай кăмăлăм пур.

Ай-хай мĕн калаçас та мĕн сăмахлас?
Йӳçĕ ĕçсе те тутлă ай калаçас.

---

* Комсомольски районĕнчи Тимĕрчкасси çынни Фекла Кольцова юрласа панине 1984 çулта Васлей Анатри çырса илнĕ.

** Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç çынни Вера Федорова юрласа панине 1981 çулта Васлей Анатри çырса илнĕ.

## ЁЛЁКХИ САЛТАК ЮРРИСЕМ

### *«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

1

Кăвик-кăвик кăвакарчăн
Кашта тăрăх чупкалать.
Кашта вĕçне çитсессĕн
Чĕппĕм çуках теет пуль.
Эх, аннеçĕм, аннеçĕм
Ик пĕççине шарт! çапать,
Пĕтĕм чунтан хурланса
Ывăл çуках теет пуль.
Виç тенкĕлĕх хут купăс —
Мĕнле туртса калам-ши?
Атте-анне килĕнчен
Мĕнле тухса каям-ши?
Çӳл ту çинче çавраçил
Кунĕн-çĕрĕн çаврăнать,
Мĕнпур ӳсентăрана
Айăн-çийĕн тустарать.
Пирĕн салтак ачисен
Кунĕн-çĕрĕн ăш вăркать.
Ентĕ çамрăк чĕреçĕм
Хуйхă-çулăм пек çунать.

*1936*

2

Вăрман витĕр тухнă чух
Ура пусма вырăн çук.
Пирĕн ĕнтĕ малашне
Макăрман кун пулас çук.

Атте ҫӳрен лашине
Кӳлсе янӑ шур кӳме,
Мана анне ҫуратнӑ
Тӗнче тӑрӑх ҫӳреме.
Атте-анне килӗнче
Ҫитӗнтертӗм хам пӗве —
Атте телей кӗтрӗ пуль,
Анне ырлӑх кӗтрӗ пуль.
Ҫинҫе ҫырма урлӑшне
Сиксе каҫса пулмарӗ.
Мана пӑхса ӳстерсе
Атте телей курмарӗ.
Ёнтӗ, анне, сывӑ пул,
Тӑван атте, чипер юл.
Ывӑлӑра ан манӑр,
Юлашки хут ал парӑр.

*1939*

3

Тата темӗн курас пур,
Хаяр вӑрҫӑ, тантӑшсем,
Хыпса илчӗ тӗнчене.
Тата темӗн курас пур,
Тем ӳкес пур пуҫ ҫине.
Кайӑк хурсем вӗҫеҫҫӗ
Инҫе ҫӗре, ӑшшалла.
Вӗсем каллех килеҫҫӗ —
Эп килес ҫук каялла.
Шурӑ тутӑр вӗҫтертӗм
Ҫилсӗр вӗҫет пуль тесе,
Ҫамрӑк пӗве ӳстертӗм
Ырӑ пурнӑҫ кӗтейсе.
Анчах телей тупмарӑм
Атте-анне килӗнче.

Тен, пуҫăма ҫухатăп
Мул хуҫисен вăрҫинче.
Вăрман урлă каҫнă чух
Хура ҫĕлен шăхăрчĕ,
Мул хуҫисен инкекĕ
Пирĕн ҫине йăтăнчĕ.
Сисмеҫҫĕ-ши кайăксем
Ҫăхан сиен кӳнине?
Чухлатăр-ши, тантăшсем,
Мул хуҫисем кулнине?

*1937*

## ЧЕМЕН ЮРРИ

### *«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Эп вилсессĕн ӳтĕме
Пытарсамăр çул хĕрне,
Ан мантăрччĕ тăван ял
Мана — хăйĕн ывăлне.
Çамрăк ешĕл хурăнсем
Лартсамăрччĕ пуç вĕçне.
Тăччăр вĕсем кăтартса
Эпир хурлăх тӳснине.
Турачĕсем хушшине
Ларччăр çепĕç шăпчăксем,
Илсе килччĕр кунсерен
Вĕсем çĕнĕ хыпарсем.
Ытла хытă ан таптăр
Манăн йывăр тăпрана:
Хура мăшăр куçăмсем
Пăхчăр, курччăр таврана.
Ун чух пĕтĕм таврара
Пин-пин чечек çуралтăр.
Ĕмĕр-ĕмĕр ырлăхра
Чăваш сынни пурăнтăр.
Мана витнĕ тăпрана
Сарă хĕвел çутаттăр.
Çĕршыв тăтăр савăнса,
Куççуль йăлтах çухалтăр.
Çын ĕнентĕр чĕререн
Туслăх, пĕрлĕх хаклине.
Çиçтĕр сывлăм ирсерен
Çут куççулĕ вырăнне.
Çитĕ вăхăт, ун чухне
Пурнăçланĕç кĕтнисем.

*1939*

## ЧЕМЕН ЮРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Вĕç, вĕç, çăрхан, вĕç, çăрхан,
Сăр вăрманĕн йĕрĕпе,
Пит васкавлăн вут тăкса
Пыр пăрачакваррипе.
Тыт, тыт, аллăм, çирĕп тыт,
Чĕн йĕвенĕн чĕлпĕрне.
Çил çунатăм, çил çунат,
Ан çухатсам çул-йĕрне.

*1936*

## ÇĂКА ÇУЛÇИ ВĔÇЕТ-ÇКЕ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Çăка çулçи вĕçет-çке
Ӳпне-питне çаврăнса,
Пирĕн ĕмĕр иртет-çке
Хурлăх, йывăр кун курса.
Тинĕс варри пит тискер
Тĕпĕ ытла тарăнран,
Пирĕн пурнăç пурнăç мар
Саманисем йывăртан.
Хăва çулçи хуралать
Кĕрхи çилĕ вĕрнипе,
Хĕрлĕ сăнăм хуралать
Хуйхă-суйхă тӳснипе.

*1936*

## ХĔР ЙĔРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Шурăмпуçĕ тухнă чух
Туйрăм ыйăх çуккине,
Ирĕксĕр-çке каятăп
Çичĕ ютăн ачине.
Тимĕр сăнчăр пуличчен
Сăрлă юпа пулас-мĕн;
Савман çынна кайиччен
Кĕл пек вĕçсе каяс-мĕн.

*1937*

## ХĔР ЙĔРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Акă эпĕ тертленеп,
Сывлăш çитмест, мĕн тăвас?
Шур пĕркенчĕк айĕнчен
Епле тухса ман тарас?
Ирхи кўлĕм иртет-мĕн,
Касхи кўлĕм килет-мĕн,
Çамрăк ĕмĕр иртет-мĕн,
Ват ĕмĕре кĕрет-мĕн.
Килтĕм тăтăм пўрт умне
Савнă каччăм пуль тесе,
Анчах савни пулмарĕ,
Юратман çын пулайрĕ.
Çерем тулли çĕр çырли,
Пиçсе çитни пĕртте çук,
Эх, савниçĕм, чун савни,
Мĕншĕн эсĕ кунта çук?

*1967*

## ТУЙ ЮРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Улма чăпар утсемпе
Хăта патне килтĕмĕр.
Хамăр пĕлĕш-тантăшсем
Çĕр çĕмĕрсе çитрĕмĕр.
Хăта ырă кăмăллă:
Хапăл туса йышăнчĕ,
Çĕн хапхаран кĕрсенех
Сăра курки тыттарчĕ.
Кунтан ытла сăмах çук,
Пирĕн савнă хăтамăр,
Сиртен лайăх çын та çук,
Ытлашшине – касарăр.
Йĕри-тавра йăмрасем –
Ял илемне çав кӳрет.
Выльăр-кулăр, тăвансем,
Туй илемне çав кӳрет.

*1937*

## ТУЙ ЮРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Чăт, чăт, кĕпер, чăт, кĕпер,
Пар ут касса кайиччен.
Чăт, чăт, хăта, чăт, хăта,
Эпир тухса кайиччен.
Ларнă çеçпĕл чечеке
Çурхи хĕвел ăшшипе,
Пирĕн Мерчен – сарпике –
Савăнтарать сăнĕпе.

*1937*

## ХЁРСЕН ЮРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Уйăх пĕччен тееççĕ –
Пĕччен мар-çке, çăлтăр пур,
Пире пĕччен тееççĕ –
Пĕччен мар-çке, савни пур.
Янкăр кăвак пĕлĕтре
Чĕкеç пулса вĕçесчĕ,
Çак самантра, сехетре
Савни патне çитесчĕ.
Йĕкĕр варти путене
Савать хăйĕн чĕппине;
Икĕ савни тĕл пулсан
Çăмăл теççĕ чĕрене.

*1938*

## ЧУПРĂМ АНТĂМ ÇЫРМАНА

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Чупрăм антăм çырмана
Кĕмĕл укçа пуçтарма.
Кĕмĕл укçа пичетсĕр,
Пирĕн ĕмĕр телейсĕр.
Атте пахчи умĕнче
Çĕр йăтайми чул выртать,
Çĕр чăтайми чул мар вăл,
Эпир чăтас хуйхă вăл.

*1939*

## МЕРЧЕН ЮРРИ

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Чупрăм кĕтĕм вăрмана,
Çăка йывăç çаралнă.
Мана телей пĕтнĕ чух
Атте-анне çуратнă.
Хир варринчи хурама
Лăстăр-лăстăр силленет,
Ах, пуçăмçăм, çамрăк пуç
Телей çуккине сисет.

*1938*

## ЮРИ КИЛТĔМ ЮРЛАМА*

*Халăх юрри*

Юри килтĕм юрлама,
Ӳлĕм килĕп каласма.
Анне мана çуратрĕ,
Çуратрĕ те юратрĕ.
Ыр ут юртать, çул юлать,
Эпир те вилсен мĕн юлать?
Мĕн калани çав юлать,
Асăнмалăх çав пулать.

* Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ҫынни Надежда Федорова юрласа панине 1974 çулта Васлей Анатри çырса илнĕ.

## ÇАВРĂМ CĂВĂ КАЛАР-И

*«Чеменпе Мерчен» поэмăран*

Атьăр вăйă пуçлар-и,
Çаврăм căвă калар-и?
Çимĕк иртсе кайиччен
Савăнайса юлар-и?
Ватă хурăн авăнать,
Кукри маях хуçăлать.
Çамрăк чунăм хурланать,
Ăшăм çунать, çаврăнать.
Шĕшкĕ вутти шĕл кăвар,
Çути ўкрĕ çул хĕрне.
Савни çинчи шур кĕпен
Тĕсĕ ўкрĕ ман çине.
Чăпар куккук авăтать,
Йĕлме йывăç авăнать.
Куштан каччă мухтанать,
Сарă хĕре ăмсанать.

*1936*

## ВӐШТӐР ТА ВӐШТӐР ÇИЛ ВĔРЕТ

*Чӑваш халӑх юрри*

Сӑввине *Ваçлей Давыдов-Анатри* йĕркеленĕ

Вӑштӑр та вӑштӑр çил вĕрет, *2 хут*
Хӑмла пахчи курӑнать, *2 хут*
Унта ял-йыш вӑй хурать.
Çав пахчара пулмасӑр,
Çав хӑмлана пухмасӑр
Эпир киле каймастпӑр.
Эпир те киле каяс çук,
Эсир те пире ярас çук.

Вӑштӑр та вӑштӑр та çил вĕрет, *2 хут*
Нӳхреп алӑк уçӑлать, *2 хут*
Сӑра пички курӑнать.
Çав пичкене пуçласа,
Çав сӑрана ĕçмесĕр
Эпир киле каймастпӑр.
Эпир те киле каяс çук,
Эсир те пире ярас çук.

Вӑштӑр та вӑштӑр çил вĕрет, *2 хут*
Чӑлан алӑк уçӑлать, *2 хут*
Унта шӑрттан курӑнать.
Çав шӑрттана пуçласа,
Çав шӑрттана çимесĕр
Эпир киле каймастпӑр.
Эпир те киле каяс çук,
Эсир те пире ярас çук.

Вӑштӑр та вӑштӑр çил вĕрет, *2 хут*
Кӑмака питлĕх уçӑлать, *2 хут*

Пуҫламан хуплу курӑнать.
Ҫав хуплӑва пуҫласа,
Ҫав хуплӑва ҫимесӗр
Эпир киле каймастпӑр.
Эпир те киле каяс ҫук,
Эсир те пире ярас ҫук.

Вӑштӑр та вӑштӑр ҫил вӗрет, *2 хут*
Вырӑсла хапха уҫӑлать, *2 хут*
Манми тӑван курӑнать.
Тӑвансем пӗрле пулмасӑр,
Сире телей сунмасӑр
Эпир киле каймастпӑр.
Эпир те киле каяс ҫук,
Эсир те пире ярас ҫук.

*1996-1997*

ТУПМАЛЛИ

Чун-чĕре парни. *Ю.Сементер* 3

Тăван çĕршывăмăр çинчен çырнă юрăсем 5

Тăнăç пурнăç, тăван тавралăх, ĕç паттăрĕсем çинчен хывнă юрăсем 29

Атте-аннемĕрсене халалланă юрăсем 75

Тус-тăванлăх юррисем 85

Тăван хуламăр Шупашкар çинчен кĕвĕленĕ юрăсем 123

Юрату юррисем 133

Ача-пăча юррисем 193

Шӳтлĕ юрăсем, такмаксем 231

Поэт çырса илнĕ, йĕркеленĕ халăх юррисем 257

**Василий Иванович Давыдов-Анатри**

**ПЕСНИ МОИ — КРЫЛЬЯ МОИ**

**ЮРРĂМСЕМ-ÇУНАТĂМСЕМ**

На чувашском языке

Редактор *П. Е. Димитриев*
Художник *З. И. Чернова*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *Л. К. Егорова*
Корректоры *З. И. Гаврилова,*
*Н. П. Печникова*

ИБ 3004

ОКДП 2211201

Сдано в набор 17.07.97. Подписано к печати 04.12.97.
Формат 70х100$^{1}/_{32}$. Бумага книжно-журнальная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 11,61.
Усл. кр.-отт. 12,25. Учетно-изд. л. 9,92.Тираж 1500 экз.
Заказ № К-1127. Изд. № 51.
Цена «С» 45.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография издательства «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр.Ивана Яковлева, 13.

**Давыдов-Анатри В.И.**
Д13 Юррӑмсем — ҫунатӑмсем: Юрӑсем. Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1997. — 286 с.

Ҫур ӗмӗр янӑраҫҫӗ ӗнтӗ чӑваш халӑх поэчӗ Ваҫлей Давыдов-Анатри юррисем. Вӗсенчен чылайӑшӗ халӑх юррисем пулса тӑнӑ. Кӗнекене сакӑрвуннӑри поэт-юрӑ-ҫӑмӑрӑн халӑхра анлӑ саралнӑ юррисене кӗртнӗ.

**ББК 84 Чув 7-5**

**Д $\frac{4702710202-45}{М136/03/-97}$ 51 — 97**

**ISBN 5-7670-0979-1**

9.000 =



Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Атте -анне килне манмарăм,
Тăван чĕлхе чысне упрарăм,
Чăваш çĕрне ялан мухтарăм.